Т 19
Ч-43942

…ентина Тарават



# Кĕтмен венчет

Национальная библиотека ЧР
4-043942

К84,09(Чув)
Т 19

Валентина Тарават

# КĔТМЕН ВЕНЧЕТ

Калавсемпе повесть



Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
2010

К84.09(Чув)6-44

УДК 821.512.111
ББК 84 (2Рос=Чув) 6-444-445я444.3
Т 19

**Тарават В.Н.**
Т 19 Кĕтмен венчет: калавсемпе повесть / В.Н. Тарават. — Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2010. — 159 с.
ISBN 978-5-7670-1793-5

Хăйĕн хайлавĕсенче В.Н. Тарават тĕрлĕ тема хускатать: çамрăксен таса юратăвĕ, ултав, çемье ăшши, пĕр-пĕрне хисеплени, ырă кăмăллăха сума суни...

Сăмахран, «Элек» калавра каччă хăйĕн тусĕ пирки ялта сăмах сарать: вăл пĕринпе туслă, тепринпе пурăнать имĕш. Çак элеке пула икĕ юратакан чĕре пĕр-пĕринчен уйрăлать.

**УДК 821.512.111**
**ББК 84 (2Рос=Чув)6-4**

Проверено 3 СЕН 2017
И-43942

**ISBN 978-5-7670-1793-5**

© Тарават В.Н., 2010
© Чăваш кĕнеке издательстви, 2010

## Калавсем

### ЭЛЕК

Каçĕ ырă та лăпкă. Кун пек ăшă, тӳлек, чуна тата ӳт-пĕве ачашшăн лăпкакан çуллахи каçсем юлашки çулсенче сайра пулаççĕ. Çанталăкĕ те саманине кура улшăнса пырать пулас. Хĕвел пăхнă чухнех, ахăр самана пуçланнă пек, таçтан хура пĕлĕтсем капланса килеççĕ. Çил çĕкленет, куç курми çавăрттарма пуçлать.

Нинăн чун-чĕринче те паян канлĕ мар. Утать вăл урам тăрăх пуçне усса. Нимĕн те савăнтармасть ăна халĕ. Мĕншĕн кайрĕ-ши вăл клуба пĕрех хут? Питех каяс та килместчĕ çав. Ун пуçĕ çине те хура пĕлĕтсем сасартăках йăтăнса анчĕç ав халĕ.

Калăн, çанталăк ун шухăшне вăрттăн итлесе тăнă тесе. Кĕмсĕр-кĕмсĕр, шатăр-шатăр турĕ те — тӳперен витререн тăкнă пек лӳшкеме пуçларĕ. Пӳрте тарса кĕнĕ çĕре хĕр çиййĕнче пĕр йĕпенмен вырăн та юлмарĕ.

Васканипе Нина алăксене шаплаттара-шаплаттара хупрĕ пулас, сас-чĕве çивĕч. туякан амăшĕ ялтах сиксе тăчĕ вырăнĕ çинчен.

— Темех пулман пулĕ те? Мĕн эс алăксене сан умăнта айăпа кĕнĕн хĕнетĕн?

— Ой, анне, каҫар, — пырса ыталарӗ хӗрӗ амӑшне. — Ҫумӑр лӳшкет тулта. Витӗрех йӗпентӗм.

— Ну, юрӗ-ҫке. Тумна хӑвӑртрах улӑштар, атту шӑнса пӑсӑлатӑн. Пылпа чей ӗҫме ан ман.

— Юрӗ, юрӗ, анне. Ҫумӑрӗ сивех мар-ҫке. Эпӗ вӑл алхасса кайиччен киле ҫитнӗччӗ ӗнтӗ. Ҫанталӑкӗ те каварлӑ вара. Наян ҫине виҫ кун малтан тумлам ӳкет теҫҫӗ те, ман ҫине пӗр тумлам та ӳкменччӗ-ҫке. Эпӗ вара юлашки кунсенче кахаллансах кайнӑччӗ, — ахӑлтатсах кулса ячӗ Нина.

Марье аппа ку сӑмахсене илтмӗш пулчӗ-ши е чӑнахах та илтмерӗ-ши, хирӗҫ чӗнмерӗ. Пӗлинччӗ амӑшӗ савнӑ хӗрӗн чунӗ мӗнле ӗсӗклленине. Кӑшкӑрса йӗрес вырӑнне ахӑлтатса кулчӗ-ҫке вӑл халь.

...Клубра, уяв каҫӗнче, Нина ӑна ташша чӗнчӗ. Ҫак сап-сарӑ ҫӳҫлӗ, кӑн-кӑвак чакӑр куҫлӑ, салтак тумне те улӑштарман каччӑ Нинӑн ӗмӗтри принцӗччӗ. Ачаранах саватчӗ вӑл ӑна. Кӑмӑллана-ши Юра хӗре? Калама йывӑр. Нумаях тӗл пулман вӗсем.

Ҫав шурӑ ташӑ хыҫҫӑн каччӑ хӗртен пӗр утӑм та уйрӑлмарӗ тесен те йӑнӑш пулмӗ. Чӗлхи-ҫӑварӗ япшар. Ҫамрӑклах ялтан тухса кайса хулара вӗреннӗ, ӗҫленӗ каччӑ хӑйне тыткаланипе те, тумланнипе те ытти ял ҫамрӑкӗсенчен сисӗнмеллех уйрӑлса тӑрать. Куштан мар Юра, анчах та хӑйне хӑй хисеплени, юратни куҫ кӗретех.

Нина та, хулара вӗреннӗскер, студентсем хушшинче тӑватӑ ҫул пурӑннӑскер, ял хӗр ачисенчен уйрӑларах тӑрать: ӑс-тӑн енчен те, тумтир тӗлӗшӗнчен те. Интереслӗччӗ икӗ ҫамрӑ-

ка пĕр-пĕринпе. Мĕн çинчен кăна калаçмастчĕç-ши вĕсем тĕл пулнă вăхăтсенче. Юра институтна вĕренме кĕме ĕмĕтленетчĕ.

— Атте чĕрĕ пулнă пулсан эпĕ те куçăмлă майпах аслă пĕлӳ илнĕ пулăттăм та, — хурланарах каларĕ вăл пĕррехинче.

Нина аслă пĕлӳ илменччĕ-ха. Вăл педагогика училищине пĕтернĕччĕ, анчах та пединститута куçăмсăр майпа вĕренме кĕнĕччĕ ĕнтĕ.

Пĕр каçхине вăл клубра Юрăна курмарĕ. Чĕри теме сиснĕн çуйхашрĕ. Хĕрĕн куççулĕ тухрĕ. Ыйтуллăн пăхрĕ вăл савнă тусĕн юлташĕ çине. Коля çакна сисрĕ пулас, самантрах хĕр çумне çитсе тăчĕ. Куçĕсем темле чеен пăхаççĕ.

— Нина, мĕн эс куçна алăк çинчен илместĕн? Çук сан савни паян клубра. Çук. Ялта та çук. Хăнара вăл паян. Кӳршĕ ялта. Пĕрпĕр чипер пикене килне ăсатать пуль, — те шӳтлесе, те савăнса елпĕрчĕ каччă. Тен, савăнать те-и. Пĕр-икĕ çул каялла Коля Нина хыççăн çӳретчĕ, анчах та хĕр унăн юратăвне йышăнмарĕ.

— Мана та чĕнчĕ Юра хăйпе пĕрле — эпĕ килĕшмерĕм, — пырса тытрĕ Нинăна аларан каччă. — Мĕнле чăтас-ха манăн сана курмасăр? Сан сăну яланах ман куç умĕнче.

— Коля, мĕнле намăс мар сана?! Эсĕ Юрăн юлташĕ-çке! — карт туртса илчĕ хĕр аллине.

— Намăс мар тетĕн-и? Эх, калăттăмччĕ те сана, — алне сулса пăрăнса утрĕ каччă.

«Мĕн каласшăн-ши Коля?» — мĕлтлетсе илчĕ шухăш.

Лешĕ тем аса илнĕн кăштах чарăнса тăчĕ те каялла çаврăнса Нина патне пычĕ.

— Атя пĕрер çаврăм вальс çаврăнса илер. Сан пек илемлĕ, çаврăнăçуллă ташлакана тĕл пулман эпĕ.

— Каçар, ташлас килмест манăн паян.

Коля та салтакран таврăннă кăçал. Вĕсем Юрăпа шкулта та, техникумра та пĕрлех вĕреннĕ, çар çыннисен ретне тăриччен пĕр хулара пĕрлех ĕçленĕ.

Çамрăксем ташă çеммипе çаврăннă хушăра хĕр клубран тухса шăвăнчĕ.

Утать Нина кĕрхи сивĕ çанталăкпа çапăçса. Сивĕ çил шалтан шала кĕресшĕн хыпалать. Тӳпе йĕпе юра шеллемесĕр тăкать. Утмалăх пур. Пылчăкĕ те тăрăшсах атă çумне сыпăçать. Калăн, урисем çине кире пуканĕсем çакса янă тесе. Йывăрлансах çитрĕç.

«Эх, ял пурнăçĕ. Атте-аннесем ĕмĕр тăршшĕпех çапла нушаланса пурăнаççĕ вĕт», — шутласа илчĕ хĕр.

Тĕрĕс те. Çирĕм пĕрмĕш ĕмĕре кĕтĕмĕр. Ялсенче пурпĕрех пĕç таранах пылчăк çăрăлать. Кăкăр çапсах мухтанатпăр та, пурнăç шайĕ ытти çĕршывсемпе танлаштарсан хыçалтан тăваттăмĕш-пиллĕкмĕш вырăнта сĕтĕрĕнсе пырать.

Килĕ патне çывхарса пыратчĕ ĕнтĕ хĕр.

— Нина, чарăнсамччĕ, тархасшăн. Ытла хăвăрт утатăн-çке, аран-аран хуса çитрĕм, — пырса тăчĕ ун умне Юра.

Хĕр чĕнмест. Чĕри кăкăртан сиксе тухас пек тапăртатать.

— Мĕнпе айăпа кĕтĕм-ши эпĕ çак чипер пирĕшти умĕнче? Айăпа кĕнĕ пулсан чĕркуçленсе каçару ыйтатăп, — лап ларчĕ каччă пылчăк çине чĕркуçленсе.

Нина Юрăран эрех шăрши кĕнине туйса илчĕ. Вăл, хăй пурнăçĕнче пĕр тумлам эрех те ĕçсе курманскер, ĕçнĕ çынна тӳсме пултараймасть.

— Тăр, ан упăтелен. Шăлаварна мĕн турăн? Хăв çумастăн вĕт. Аннӳн асапланма тивет.

— О-о-ошибаешся! — тăсарах евитлерĕ каччă. — Эпĕ салтака кайиччен икĕ çул çурă студент пурнăçĕпе пурăннă, ĕçленĕ. Кам çуса панă тет мана? Виçĕ çул салтак пăттипе чыхăннă, — çĕклерĕ вăл сылтăм аллине.

— Маттур! — йĕкĕлтерех хуравларĕ хĕр. — Сан пек пысăк «подвиг» тăвакан сайра пирĕн таврара.

— Эс куна ăнланмастăн. Эпĕ ӳснĕ вăхăтра эсĕ пешком под стол ходила, — вырăсла-чăвашла перкелешрĕ Юра. Тăватă çул аслăраххçке вăл Нинăран.

Пăрахса кĕресшĕн хĕр киле — каччă вĕçертмест.

— Эсĕ кĕрсен эпĕ сирĕн пӳртĕр умне выртатăп та шăнса вилетĕп. Юрататăп эпĕ сана, Нина. Юра-а-ататăп. Çара кайиччен эпĕ сана асăрхаман паллах, аслăраххисем çине пăхнă. Салтакран таврăнсан сана пĕрремĕш хут клубра курсан куç хуралса килчĕ. Чăваш хĕрĕсем хушшинче эпĕ сан пеккине курман. Илемлĕ çех мар, сăпайлă та. Кун пекки вара сайра пулать. Хĕр пуçне пĕксе итлет.

Каччă малалла калаçрĕ:

— Ялти çамрăксенчен ыйткаласа пĕлтĕм те, эсĕ никампа та тĕл пулманнине каларĕç. Тиркет вăл пурне те терĕç. Тен, эсĕ мана ташша чĕнмен пулсан эпĕ сан патна пыма та хăйман пулăттăм. Илемлĕ, сĕтеклĕ чечек çумне вĕлле

хурчёсем те, сăпсасем те ушкăнёпех сырăнаççĕ. Сан çумна питех сырăнаймăн. Ав мĕнле чăркăшса пăхатăн эсĕ. Коля ăсаткаланине каларĕç-ха. Хăйĕнчен илтмен. — Çапла каларĕ те каччă Нинăна ыталаса илсе чуптурĕ.

Çат! Шăплăха çурса янăраса кайрĕ Юрăна парнеленĕ çупкă сасси. Хĕр туртăнчĕ те вĕçерĕнсе картишне чупса кĕчĕ.

— Юрататăп сана! Юрататăп! — илтĕнчĕ хыçалта.

Юрлать, савăнать хĕр чĕри. Юрăна çилленни те, иккĕленӳ те таçта кайса кĕчĕç. Савать, юратать ăна çак каччă.

Тепĕр ирхине Нина икĕ витрепе шыв çĕклемелли кĕвенте йăтса калиткене уçрĕ. Урата урлă ярса пуснăччĕ кăна — çулне Юра пӳлсе хучĕ.

— Эсĕ ăçта кĕретĕн? Кам чĕннĕ сана кунта?! — кăшкăрнă пекех каларĕ хĕр каччăна кĕвентепе кăкăрĕнчен тĕртсе.

— Элле сирĕн пата çыннăн килме те юрамасть-и?

— Юрать. Анчах санăн — çук.

— Эпĕ мĕнпе çынлăхран тухрăм-ши? — салхуллăн пăхрĕ Юра хĕре куçран. — Ăнлан: ман санпа калаçмалли пур. Халех. Атя çăл патне пĕрле утар, çула май калаçăпăр.

Шыв патне утмалăх пур.

— Нина, — лăпкăн пуçларĕ каччă, — манăн паян кăнтăр хыççăн Çтерлĕне тухса каймалла. Кольăпа пĕрле каятпăр. Телеграмма илтĕмĕр — çак кунсенче ĕçе тухмасан пирĕн ĕç вырăнĕсем çухалаççĕ. Салтакран таврăнсан канма виçĕ уйăх анчах параççĕ.

— Кунтарах юлма çук-им вара санăн?

— Ун пирки анне те пĕрмай сăмах пуçарать. Култăм-ха ĕнер: «Анне, кам вырăнне лартасшăн-ха мана? Караç Алюшĕ вырăнне конюха-и? Е Микуль Петĕрĕ вырăнне ферма выльăхĕсене апат турттарма-и? Ун чухне вĕсем ĕçсĕр юлаççĕ-çке», — терĕм. «Ара, çав», — тет. Технолога вĕреннĕ-çке эпĕ. Ман валли ялта ĕç çук. Сан валли вара хулара ĕç туллиех. Шкулĕсем те, ачисем те çителĕклех.

Нина чĕри çуйханса илчĕ: «Мĕн çинчен каласшăн-ха каччă?»

Чĕнмест хĕр. Ĕнтĕ вĕсем халь çăл патнелле те утмаççĕ, чарăннă та калаçса тăраççĕ. Пурне те пĕлме, курма юратакан ял карчăкĕсем кашни чӳречеренех тинкереççĕ пуль.

— Мана сансăр пуçне ялта пĕр хĕр те килĕшмест. Санпа пĕрлешмесен эпĕ урăх ял хĕрне качча илес çук. Анне те ялан сан пирки ырăпа калаçать. Кӳршĕ Марье аппа та. Пурте сана мухтаççĕ. Паян тата хреснанне çав юррах юрлать. Ма чĕнместĕн, Нина?

— Мĕн калас-ха ман? Итлетĕп эпĕ. Эсĕ вара мĕн каларăн вĕсене?

— Шӳтлесе ирттертĕм: «Ытла мухтавлă пулсан ма хăвăрăн ывăлăрсене илсе памастăр?» — терĕм. «Вăл пирĕн пеккисем çине пăхмасть», — хуравларĕç ассăн сывласа. Тен, эсĕ ман пеккисене те пăхмастăн? — Юра пăлханса кĕсйинчен пирус пачки туртса кăларчĕ. Пĕр пирусне тивертрĕ те çийĕнчех сӳнтерчĕ. — Эпĕ вĕт чаплă йăхран-çемьерен мар, аттесĕр ӳснĕ. Пирĕн кил-çурт та кермен пеккисен шутĕнче мар. — Çапла каларĕ те каччă пуçне усрĕ.

Сăмах пине çитрĕ тейĕн. Шăп.

— Ара, эпир çăл патне шыв илме каяссине мансах кайрăмăр пулас. Асаннерен лекет-çке мана. Вăл пирĕн урăх шывран вĕретнĕ чее ĕçмест.

— Уттарар эппин. Эпĕ çулла таврăнатăп. Эсĕ мана кĕтсе пурăнасса кăштах шанатăп.

— Пурнăç кăтартĕ-ха унта. Эх, кур-ха, хура кушак çул урлă чупса каçрĕ.

Çав вăхăтра вĕсене хирĕç килекен чараксăр чĕлхеллĕ Маюк аппа курчĕ. Çăлран шыв çĕклесе килекен хĕрарăм витрисене çĕр çине лартрĕ те тутăрне сирсе хăлхисене «авăрларĕ». Хăлхи мăкарах ун. Мĕн калаçнине илтмесĕр юлсан кĕçĕр çывăраймасть-çке.

— Атя утар хăвăртрах. Маюк аппа валли калаçмалăх пулчĕ ĕнтĕ. Кирлĕ-кирлĕ мара веçех хушса пăтратĕ.

Çамрăксем çăл патнелле утрĕç.

— Тьфу! — лачлаттарса сурчĕ ялти йĕвенсĕр хĕрарăм. — Намăс-симĕсĕ те çук! Кăнтăр варринчех пĕтĕм ял умĕнче ыталашса çӳреççĕ! — янрашрĕ вăл. — Мĕн тупнă-ши çак хĕр çумĕнче? Çип-çинçе! Шуранка! Ялта парка, пичĕсенчен юн пĕрĕхекен хĕрсем мĕн чухлĕ! Эп хам тата мĕнлескер пулнă! Эпĕ-и?! Эпĕ-и?! Эпĕ ялта чи сапăр, чи чаплă хĕр пулнă! Мана-и?! Мана-и?! Мана таврари ялсем мухтанă!

«Мĕн мухтамалли. Качча каймасăр икĕ арçынтан икĕ ача çуратрăн-çке», — шутларĕ Нина ăшĕнче пăлханса.

— Ман умрах икĕ хут чуптурĕç вĕт! — илтĕнчĕ хыçрах.

— Пурăнма ырă ят хăвармасть ку, — пуçне пĕкрĕ Нина. — Эсĕ те пулин мĕн чăрмантарса çӳретĕн-ши кăнтăр кунĕнче.

— Маюк аппа тесе урама тухма хăрамалла-и вара манăн? Ун çаварĕ хапхаран та хапха. Хапхана çăрапа питĕрме пулать. Маюк çăварне — çук. Ан пăшăрхан, ăслă çынсем итлес çук вăл сÿпĕлтетнине.

* * *

Малтанласа çырусем тăтăшах килетчĕç. Туйăмĕсем çинчен çине-çинех пĕлтеретчĕ каччă. Çĕнĕ çул уявĕ ячĕпе те, Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен уявĕнче те парнесем килчĕç Нина валли. Францире хатĕрленĕ духие хĕр хăй ĕмĕрĕнче пĕрре те курманччĕ. Питĕ сайра пулакан хаклă япала-çке вăл. Мăя çакмалли колье мĕне тăрать тата. Чăнласах юратать пулас Юра хĕре.

— Нина, калама аван мар-ха та, Коля калама хушманччĕ те-ха, — чĕтрекен сассипе пуçларĕ пĕррехинче хĕр тантăшĕ Марина. Юлашки вăхăтра вĕсем Кольăпа тĕл пулкалатчĕç. Халĕ çыру çÿретеççĕ пулас.

— Хушман пулсан ан кала.

— Те каласан аван, те каламасан. Юрлаççĕ вĕт-ха пĕр юрăра: «Енчен манăн чĕре лăплансассăн çывăх тантăш чĕри ĕсĕклет», — тесе.

— Хăвăн ирĕкÿ ĕнтĕ.

— Каласах пуль. Атту тек чĕре ыратса çÿрет.

— Ан асаплантар чĕрÿне. Кала атя.

Каласа пачĕ Марина. Юрăн Çтерлĕ хулинче савнийĕ пур иккен. Салтака кайиччENех çÿренĕскер. Вырăс хĕрĕ тет. Çыхăнăвĕсем те вĕсен арлă-арăмлă пекех пулнă иккен. «Вĕçерĕнеймест пуль унран Юра», — тет-мĕн Коля.

— Ĕнтĕ пулин, пултăрах, — кулам пекки турĕ Нина. — Ман упăшка мар-ха вăл. Тĕнче хĕсĕр мар. Пирĕн валли те хĕвел пăхĕ.

— Вăт маттур. Коля пĕлсен ятлать ĕнтĕ мана. Вăл калама хушманччĕ.

— Коля пĕлмест. Пĕлес те çук, — ыталарĕ Нина тантăшне.

«Тен, кĕвĕçнипе çех персе янă ку сăмаха. Пур каччă та каçармасть хăйне тĕртсе янине. Коля та хăйпе çӳременшĕн мана тав тăвас çук», — лăплантарасшăн пулчĕ хĕр хăйне.

* * *

Çулла çитрĕ. Çырусем, сайрарах пулин те, килсех тăчĕç. «Кĕт, август уйăхĕнче таврăнатăп, питĕ тунсăхлатăп», — тесе çырать каччă. Марина мĕн пĕлтернине Нина Юрăна пĕр сăмахпа та асăнмарĕ. Чăтăмлăхĕ ун икĕ çын валли те çитет. «Пурнăç кăтартĕ-ха», — шутларĕ хĕр. Урăх каччăсене те çывăха ямарĕ.

Пĕр ирхине вăл лавккана пырса кĕчĕ.

— Ара, Нина ним пĕлмесĕр кĕтсе пурăнать вĕт ăна, — пырса кĕчĕ хăлхана Марина амăшĕн сасси.

— Хуп çăварна, — кăлт тĕкрĕ ăна тепĕр хĕрарăм аяк пĕрчинчен хĕр упраç еннелле пуçĕпе сĕлтсе.

Шăпăрт пулчĕç пурте.

— А-а-а! Нина иккен, — елпĕрсе кулчĕ Юрăсен кӳрши. — Пирĕн кин пуласси.

— Туман тихан пилĕкне ан авăр-ха, инкесем, — евĕккĕн тавăрчĕ хĕр. — Сирĕн кин пулассисем пайтах пуль тĕнчере. Çăкăр кирлĕччĕ мана, — терĕ унтан васкаса. Çăкăра илчĕ те тапса сикрĕ лавккаран.

«Эх, анрашка! Анне ĕнер кăна пĕр кăмака çăкăр пĕçерсе кăларчĕ-çке!» — ятларĕ вăл хăйне. «Амăшне те пĕлтернĕ иккен Марина, —

тĕлĕнчĕ Нина. — Тепĕр тесен — пĕлччĕр пурте. Çынран аван мар, паллах. Каччă пăрахнă хĕр пултăм иккен».

Чунĕ ĕсĕклет хĕрĕн: ĕмĕтленнĕ ĕмĕчĕ ырă тĕлĕк пек кăна пулчĕ-ши вара? Юрăпа Нинăн юратăвĕ ултав çăмхи анчах пулса тăчĕ-ши?

Каçхине вăл клуба кайрĕ. Килте хуйхăрса ларнипе мĕнех тăвайăн.

— Нина, Нина, нарисована картина, — илтĕнчĕ хыçра паллană сасă.

— Коля? Эсех-и вара ку? — тĕлĕнсе пăхрĕ хĕр. — Хăçан таврăннă эсĕ?

— Ĕнер, хаклă çыннăм, ĕнер.

— Хăçантанпа хаклă çын пултăм-ха саншăн? — калаçăва шӳте çавăрчĕ Нина.

— Пулнă. Есть. Пулатăн. Ма Юра пирки нимĕн те ыйтмастăн тата? Салам сана унран. Чăматана кĕреймерĕ те саламĕ, çавăнпа пуйăс хыççăн чупать. Çурри манра, çурри — çул çинче.

— Тавах. Мана мĕн илсе килни те çитет, — пăрăнса утасшăнччĕ хĕр.

— Килет вăл. Килет. Ĕçре тытса чарчĕç ăна.

Сисет Нина: темĕн пытарать Коля. Куçне тартать. Вĕсен çумне Марина пырса тăчĕ.

— Салам, юлташăм. Юлашки вăхăтра сана курма та çук. Пусма ларакан чăх пекех, ăшă йăвунтан тухмастăн пулас.

— Сессирен анчах таврăнтăм. Экзаменсем хыççăн пуç сĕрĕм тивнĕ пекех кашлать.

Коля туртма тухрĕ пулас. Иккĕшĕ юлсан Марина Нинăна хулĕнчен тытрĕ те айккинелле пăрчĕ.

— Асту, ан ӳк, — асăрхаттарчĕ вăл шăппăн. — Мĕнле йывăр пулсан та тĕрĕссине пĕлмеллех. Уйрăлайман Юра леш вырăс хĕрĕнчен.

Халĕ майрипе пĕрле яла таврăннă. Пĕрлешме пĕрлешмен вĕсем. «Эп ăна качча илместĕп, Нинăна çех юрататăп», — тесе калать тет Юра. Хăй çапах унран пăрăнаймасть тет, лешĕ пĕрмай йĕрлет тет ăна.

— Куçа уçнăшăн тавах, — терĕ те Нина кăшкăрса йĕрсе ярасран хăраса клубран тухса чупрĕ...

Ĕсĕклет хĕр. Унпа пĕрле унăн çутă ĕмĕчĕ ĕсĕклет...

* * *

Клуба çӳреме пăрахрĕ Нина. Чĕмсĕрленчĕ. Пуçĕпех ĕçе путрĕ.

— Хĕрĕм, кĕçех отпуск вăхăчĕ те иртсе каять. Ниçта тухмасăр пурăнатăн. Павари măн акку патне кайса килмесне пĕрех хут. Пĕрер эрне пурăн унта. Сергей Хусантан отпуска килнĕ терĕ măн акку. Пĕрле Пăва тăрăх çӳрĕр. Кинона, ташă каçне кайма пулать.

— Кайсан та юрать пуль. Сергее тахçантанпах курман. Пăва та улшăнса, илемленсе кайнă теççĕ. Курса килес.

Пĕр эрне пурăнчĕ Нина тăванĕсем патĕнче. Çак вăхăтра унăн тунсăхĕ те сĕвĕрĕлчĕ пек. Сергейăн тус-юлташ нумай. Хĕрсем те, каччăсем те пур вĕсем хушшинче. Уйрăм пӳртре пурăнаççĕ măн аккăшĕсем. Кӳршĕрех тепĕр чăваш çемйи тĕпленнĕ. Тĕлĕнмелле, икĕ çемьере те шăкăлтатса чăвашла калаçаççĕ. Пĕрпĕриншĕн алăкĕсем яланах уçă. Пĕр çемье тейĕн çав.

Хусанта Сергейпа пĕр заводра ĕçлекен Андрей та отпускра иккен. Авиаци институтне пĕтернĕ вĕсем. Инженерсем.

Тĕлĕнмелле сăпай, теветкел çак каччă. Йăмăкĕ вара пачах урăхла. Хушса анчах тăрать: «Андрей, илсе кил», «Андрей, кайса хур».

— Нина, эсĕ Андрее килĕшрĕн пулас. Пит нумай вăхăт ирттерекен пулчĕ вăл пирĕн патăмăрта. Амăшĕ те кăмăлланă сана. «Ял хĕрне илсе парасчĕ ывăлăма», — текелет.

— Ун валли хула хĕрĕсем те çителĕклех пуль-ха, — куларах тавăрчĕ хĕр.

Сассинче савăнăç илтĕнчĕ. Нинăна та Андрей килĕшет. Каччă алăк уçса кĕмессерен хĕр умне Юра сăнарĕ тухса тăрать. Иккĕн тан утаççĕ вĕсем ун патнелле. Иккĕшĕ те çывăх пек...

Пурăна киле Юра сăнарĕ таçта тĕтрелĕхре çухалчĕ. Майĕпен-майĕпен ирĕлсе пычĕ те пăч çĕтрĕ.

Нинăна килне ăсатма Сергейпа пĕрле Андрей та пычĕ. Автобус тапранса кайиччен вăхăт пур-ха.

— Киосксене тĕрĕслесе тухам-ха. Хаçат-журнал пăхкалам, — пăрăнса утрĕ Сергей.

Иккĕшĕ çеç юлсан çамрăксем пĕр вăхăт шăп тăчĕç. Чĕлхисене çăтса ячĕç тейĕн. Сăмаха Андрей пуçларĕ.

— Нина, хирĕç пулмăн-ши çак паллашăва малалла тăсма? — тĕмсĕлсе пăхрĕ каччă хĕре куçран.

«Эй турăçăм, мĕнле лăпкă, çутă кӳлĕ пек таса та тарăн Андрей куçĕсем. Çак таса кӳлĕре çăтмах вырнаçнă пуль», — шутласа илчĕ хĕр. Унтан именерех хушса хучĕ:

— Пĕр-пĕрне курсан пăрăнса иртмĕпĕр ĕнтĕ. Мăн акка мĕнле пурăннине те пĕлес килет ман, Сергей çинчен те пĕлме хавас.

— Апла кăна-и?

Акă автобус та çитсе чарăнчĕ.

— Тепре куриччен, Андрей. Чипер юл, Сергей тăванăм. Туйна чĕнме ан ман, — питĕнчен чăпăрт чуптуса илчĕ хĕр иккĕмĕш сыпăкри пиччĕшне.

Андрей хăй сисмесĕрех хĕре ачашшăн çупăрларĕ: «Мана пулинччĕ çак пике».

Андрей Хусантан çырусем çырма пуçларĕ, çине-çине шăнкăравларĕ. Туйăмĕсем çинчен пĕр сăмах та каламасть, анчах мĕн чул çепĕçлĕх ун сассинче.

— Юра таврăннă яла, — алăка уçсанах кăшкăрнă пек пĕлтерчĕ хĕр тусĕ Марина. — Эсĕ клуба тухманнине пĕлсен мана ирĕксĕрлесе тенĕ пекех сирĕн пата ячĕ. Пӳрт умĕнче тăрать вăл. Хăй питĕ салху.

— Майрипех таврăннă-и? Тен, ман пата та майрипех килчĕ пуль. Тухса паллашмалла марши? — Унтан кăштах пуçне пĕксе тăчĕ те сассине хăпартсах каларĕ: — Çулĕ такăр пултăр. Ман куç тĕлне урăх ан пултăр.

* * *

Вăхăт шăвать. Унтанпа пилĕк çул иртсе кайрĕ. Нина Андрее качча тухрĕ. Ывăл ача ӳсет вĕсен. Йăнăшмарĕ хĕр çак каччăпа мăшăрланса. Туслăх, килĕшӳ, ăнлану хуçаланать вĕсен çемйинче.

Нинăн хĕр тусĕ Марина Кольăпа пĕрлешрĕ. Вĕсем Çтерлĕ хулинче тĕпленчĕç. Юра та Çтерлĕрех пурăнать, анчах та Нина ун çинчен нимех те пĕлмест. Маринăпа çыру çӳретмест вăл. Пĕрре каланăччĕ амăшĕ Юра майра хĕрĕпе пĕрлешнине. Ачи çук тет вĕсен.

Амăшĕ чирлесе ӳкнине пĕлтерчĕç те, Нина Хусантан яла кайма пуçтарăнчĕ. Пăрантăк станцине пуйăс çĕрле çитрĕ, çутăличчен вокзалта ларма тиврĕ.

Кунта тирпейсĕр, сивĕ. Стена çинчи штукатурка катăла-катăла ӳкнĕ. Кĕтессем ăшă çитейменнипе хуралнă. Йĕри-тавра эрешмен карти. Мĕнех тăвайăн, чăтмалла. Урăх ниçта та каяймăн çĕр хута.

Нина сумкинчен «Тăван Атăл» журнал кăларчĕ те вулама пикенчĕ. Кăмăллать вăл çак журнала. Унсăр пуçне Хусанта тухса тăракан «Сувар» тата Шупашкарта пичетленекен «Чăваш хĕрарăмĕ» хаçатсене çырăнса илет.

Вокзалта Нинăпа пĕр ватă хĕрарăмсăр пуçне урăх никам та çук.

Акă алăк хытă шаплатса хупăнчĕ те, Нина шартах сиксе пуçне çĕклерĕ. Вокзала пĕр патвар арçын кĕрсе тăчĕ. Çурăм хыçне кутамкка çакнă. Хăй вăрăм хура сухаллă, пичĕ-куçĕ кӳпшек. Тумтирĕ шутсăр чаплă мар. Арçын сывлăх сунчĕ те Нина ларакан сак çине пырса вырнаçрĕ. Çак çын хĕрарăма нумай вăхăт хушши усă курнă хыççăн кирлĕ мартан кăларса ывăтнă япалана аса илтерчĕ. Вăл ăшĕнче кулса илчĕ.

— Чăвашла вулама юрататăн-и, Нина! — сăмах хушрĕ арçын. — Нина, Нина, нарисована картина.

— Коля, эсех-и ку? Ăçтан йăтăнса антăн эсĕ ман телее? Атту кунта темле, чуна çӳçентерет. Яла та пĕрле кайма майлăрах. Ак анне чирленĕ те, йыхрав ячĕç.

— Да-а-а. Ватăлса пыраççĕ аннесем. Эпĕ те яла таврăнатăп. Тен, яланлăхах та.

Ч-43942
...ональная библиотека
Чувашской
Республики

— Мĕнле яланлăхах? Марина вара? Ачусем?

— Уйрăлнă эпир Маринăпа. Чĕмпĕре куçса килсен нумай ачашламарĕ вăл мана. Хам айăплă: çемьерен ытла черккене юратрăм пулас.

— Питĕ шел.

— Ан шелле эсĕ мана, Нина. Эпĕ пурин умĕнче те айăплă. Марина умĕнче те, сан умăнта та, Юра умĕнче те, ял-йыш умĕнче те. Элекçĕ эпĕ, Нина. Элекçĕ. Юра пирки элек сараканни эпĕ пултăм. Нимĕнле майра та пулман унăн. Сана юратнипе пулса тухрĕ ку. Эпĕ сана Юрăран маларах асăрханă, юратнă. Юрататăп та. Анчах та эсĕ ман юлташа суйласа илтĕн. Тавăрас шухăш çуралчĕ, ăмсану, кӳлешӳ ăстăна, куçа хупласа хучĕç. Ухмахах тухса кайрăм. Юра вăхăтра таврăнманни вăл института вĕренме кĕнипе çыхăннăччĕ. Сан валли кĕтмен парне тăвасшăнччĕ вăл.

Пĕр чĕнми итлет Нина.

— Ма шăпăрт ларатăн? Кăшкăр, вăрç мана, çупса яр. Эпĕ санран веçех тӳсме хатĕр.

— Халь тин нимех те тăваяс çук. Шăпа çапла пулчĕ пуль. Турă çапла çырнă пуль.

Çапла каларĕ те хĕрарăм пысăк сумкине çĕклесе алăк патнелле утрĕ. Çаврăнса пăхмарĕ вăл. Пăхнă пулсан çак патвар арçын куççульпех макăрнине курнă пулĕччĕ.

## ЫРĂ ЯТА ВАРАЛАЙМĂН

Паян темшĕн Клара Ивановна чĕри лăпкă мар. Вăл, упăшкипе хĕрне вăрăм çула ăсатнăскер, алăкăн-тĕпелĕн уткалать. Алли пĕр ĕç патне те пымасть. Хĕрарăм пĕрре чӳрече патне пырса вăраххăн тинкерет, тепре алăк

çумне тăрса итлет. Нихăçан та кун пек пулакан марччĕ-çке. Паян кăна ăсатман-çке вăл çула упăшкипе хĕрне. Мăшăрĕ йĕркеллĕскер унăн. Хĕрĕ те пĕчĕк мар текех. Аслă шкул пĕтерчĕ кăçал.

Аптăранă енне «Канаш» хаçат илчĕ те диван çине вырнаçса ларчĕ. Питĕ вулама юратать Клара Ивановна, анчах паян хаçат та интереслентермест ăна.

Тăнлавĕ хĕссе ыратма пуçларĕ хĕрарăмăн. Юн пусăмĕ ӳссе кайрĕ пулас. Тĕрĕслес тесе çĕкленчĕ — юн пусăмне тĕрĕслемелли аппарат таçта кайса кĕнĕ, калăн, упăшкипе хĕрĕ хыççăн тухса чупнă. Пур туртмана та уçса тĕрĕслерĕ — усси пулмарĕ.

Лăпланас тесе эмелсем ĕçрĕ те кĕпе-йĕм çума пикенчĕ. «Бош» текен япала çумалли машина çине йĕрĕннĕ пек пăхса илчĕ. Юратмасть Клара Ивановна çак ют çĕршыв техникине. Ара, икĕ пысăках мар таза вырнаçакан шывра тулли машинăри япалана çуса, чӳхесе тасатма пулать-и? Вун пилĕк литр шыв та расхутламасть вăл кĕпе-йĕме çуса пĕтериччен. «Чĕмпĕр» текен машинăна шыв тултарнăччĕ кăна, телефон сас пачĕ.

— Яковлевсен хваттерĕ-и ку? — ыйтрĕ мăнаçлă хулăн саслă арçын.

— Тĕрĕсех, Яковлевсен хваттерĕ, — шăппăналарĕ хĕрарăм темскер ырă мара сиссе.

— Каçарăр та, сире милици уйрăмĕнчен чăрмантараççĕ.

— Мĕн уйрăмĕнчен? Мĕншĕн? — аран тухрĕ сас. Клара Ивановна аллинчи телефон кĕпçи тухса ӳкрĕ. Хĕрарăм сулăнса кайрĕ те урайне тĕшĕрĕлсе анчĕ.

Тем чухлĕ вăхăт выртнă вăл çапла. Хваттер алăкне такам хытă шакканипе тăна кĕчĕ хĕрарăм. Вăл аран-аран çумри пуканран тытса çĕкленчĕ. Ӳкнĕ чухне тумбочка кĕтессине çапăннă пулас. Çамки çинче — мăйăртан пысăкрах мăкăль. Клара Ивановна куçĕ умне хăрушăран та хăрушăрах ӳкерчĕксем тухса тăчĕç: çул çинче пысăк инкек сиксе тухнă пек; аварие çакланнă пек çывăхран та çывăх çынсем. «Ахальтен милицирен шăнкăравламан пулĕччĕç. Чĕрĕ юлнă пулсан тем пекехчĕ», — ĕсĕклерĕ хĕрарăм сасăпах.

Вăл алăк патне сĕнкĕлтетрĕ. Ăна сăнчăртан вĕçертмесĕр уçрĕ те патвар кĕлеткеллĕ милици ĕçченне курчĕ. Сăнчăра вĕçертме васкамарĕ-ха. Тур сыхлатăрах. Халь такам пулса алăк шаккакан та пур.

— Эсир çак хĕр ачана паллатăр-и? — кĕсье телефонĕ тăсса пачĕ арçын. Экран çинче — палланă хĕр сăн ӳкерчĕкĕ.

— Таçта курнă пек. Мĕн пирки ыйтатăр капла? Мĕн пулнă ман хĕрпе упăшкана? Аварие лекнĕ-и? Чĕрĕ-и, вилĕ-и вĕсем? — аран-аран пăшăлтатрĕ хĕрарăмăн вĕри сывлăш сапакан куштăрканă тути.

— Ку сăн ӳкерчĕкри хĕр сирĕн мар апла?

— Çук. Ку хĕр ачана таçта курнă пек туйăнать, анчах кам иккенне тавçăрса илейместĕп, — кăштах лăпланнă пек пулчĕ хĕрарăм. — Эппин, эсир ман хĕрпе упăшка пирки килмен кунта?

— Çук, паллах. Эпĕ вĕсене палламастăп та. Вĕсем çинчен нимĕн те пĕлместĕп.

Çакна илтсен Клара Ивановна кăшкăрса йĕрсе ячĕ те сивĕ тытнă пек чĕтреме пуçларĕ.

— Тав Турра! Мухтав Турра! — пăшăлтатрĕ тути.

— Эпĕ кунта машинăпах килтĕм. Сире милици уйрăмне илсе каясшăн. Çак хĕрпе куçа-куçăн тĕл пултарасшăн. Вăл сирĕн адресăра каларĕ. Яковлева Светлана тесе пĕлтерчĕ хăй пирки.

— Эсир утăр. Эпĕ халех тумланса тухатăп, — тинех лăпланса çитрĕ хĕрарăм. — Сăн ӳкерчĕкне тепре сăнарах пăхам-ха. Тен, палласа та илĕп. — Тинкерсе пăхрĕ Клара Ивановна ӳкерчĕке. — Ара, ку пирĕн Светланăпа пĕр класра вĕреннĕ Александрова Кристина-çке. Питĕ туслăччĕ вăл ман хĕрпе. Пирĕн патăмăртан тухма та пĕлместчĕ. Пĕрле кружоксене çӳретчĕç. Кахалрахчĕ çав хĕр пĕрчи. Шкулта япăх вĕренетчĕ. Пуçланă ĕçе вĕçне çитерме юратмасчĕ. Алли те кукăртарахчĕ пулас.

Клара Ивановна пĕр пулăма аса илчĕ.

Вуннăмĕш класра вĕренекен Светлана пĕррехинче шкулта иртекен дискотекăна пуçтарăнчĕ.

— Анне, эсĕ манăн кольене курман-и? Таçта кайса кĕнĕ. Ниепле те тупаймастăп.

— Эпĕ, хĕрĕм, сан япалусене тĕкĕнместĕп. Асту, çухалса ан кайтăр. Чăн-чăн хаклă чултан-çке. Тата аслаçу парни.

— Тупăнать пуль-ха.

Светлана, амăшĕ пекех тĕплĕскер, хальхинче хăй хунă япала вырăнĕнче пулманнинчен тĕлĕнчĕ паллах.

Вăл дискотекăна кăштах каярах юлса çитрĕ. Хăй вара Кристинăна пуçĕ ыратнипе паян уява пырайманни çинчен пĕлтернĕччĕ. Ыратни иртсе кайсан тухса вĕçтерчĕ хĕр пĕрчи. Çамрăк-

лăх мар-и. Светланăна курсан Кристина шурса кайрĕ, икĕ аллине хĕреслесе кăкăрне хупларĕ. Унтан айккинелле тапса сикрĕ те хаклă кольене мăйĕнчен вăшт кăна татса хывса илчĕ. Кăшт вăхăт иртсен тантăшĕсем çумне тăрса ташша ячĕ.

— Ара, сан мăю çинчи чаплă колье ăçта тата? Ма хыврăн çак эс ăна? — тĕлĕнсе пăхрĕ Аня.

— А-а! Тем кансĕрлет пек. Кун пек ташлама та лайăхрах.

Светлана чĕри теме сиснĕн канăçсăррăн çуйханса илчĕ.

— Мĕнле колье? Ара, сан колье нихăçан та пулман-çке, — кăсăкланчĕ Светлана.

— Эпĕ ăна сирĕн подъездри лифтра тупнăччĕ, — пулчĕ хурав.

— Апла иккен! — терĕ Светлана икĕ чăмăрне пилĕкĕ çине хурса. Çак самантра вăл хăйне пысăк кĕрешĕве хатĕрленнĕ пекех туйрĕ. — Кăтарт-ха мана çав кольене. Атту манăн асатте парнеленĕ хаклă парне «ураланнă». Хăй тĕллĕнех шкатулкăран тухса алăка уçса лифтпа ярăнма шутланă. Вăт чарусăрскер. Çупкă памалла ăна.

Кристина тек шарламарĕ, пĕр сăмахсăрах пĕчĕк сумкинчен Светланăн колйине кăларса пачĕ. Хăй пуçне усса алăк патнелле уттарчĕ. Çавăнтан вара Светлана унпа юлташланма пăрахрĕ.

...Машинăра милици ĕçченĕ Кристина вĕсен уйрăмне мĕнле лекнине пĕлтерчĕ. Ĕç-пуç çапла пулса тухнă иккен...

— Чарăнăр-ха, чарăнăр! Курткăра йўле ярăрха. Йывăр çын пек туйăнмастăр, анчах та ку-

парчăрсем, хырăмăр пÿске пекех тулса тăраççĕ, — тытса чарчĕ лавккара сутуçă пĕр çамрăк хĕрарăма. Лешĕ туртăнса вĕçерĕнчĕ те тухса кайма тăчĕ. Çав вăхăтра тепĕр сутуçă ăна çаннинчен çатăрласа тытрĕ. Курткине йÿле ячĕç те кофта ăшне тултарнă виçĕ банка пулă консерви кăларса илчĕç. Кунтах çатăрка хутлă шоколадлă канфет тата икĕ банка çăратнă пылак сĕт тупрĕç. Çийĕнчех милицие евитлерĕç.

— Манăн виçĕ ача! — кăшкăрса ÿлеме пуçларĕ хĕрарăм. — Упăшка çук. Эпир çемйипех выçă.

Милици килсе çитрĕ. Протокол çырма пуçларĕç.

Яковлева Светлана, Мир урамĕнчи пиллĕкмĕш çуртра, хĕрĕх тăваттăмĕш хваттерте пурăнатăп тесе пĕлтерчĕ вăл хăй пирки.

— Ярăр мана, тархасшăн, киле! Ачасем хăйсем çех! Тем курасси пур! Пушар тăвĕç тата. Кайран хамах пыратăп милицие! — çуйхашрĕ çамрăк вăрă.

— Ку — Яковлева Светлана мар. Эпĕ вăл хĕре те, унăн ашшĕ-амăшне те пĕлетĕп. Пирĕнпе кÿршĕллĕ çуртра çак адреспа пурăнаççĕ вĕсем. Ах, путсĕрскер! Çыннăн ырă ятне варласшăн-и эс?! — лачлаттарса сурчĕ çулланнă сутуçă. — Эпĕ сана та паллатăп. Мĕн калатьши тесе пăхса тăтăм. Санăн пĕр ача çеç. Выçă та лармастăр эсир. Упăшку тухăçлă ĕçре ĕçлет. Аçу-аннÿ те çук çынсем мар.

— Милици уйрăмне пырас пулать сирĕн, — хулĕнчен ярса тытрĕ хĕрарăма милици ĕçченĕ. — Яковлевсемпе куçа-куçăн тĕл пултарас пулать сире...

Алăка уçсанах Клара Ивановна макăрнипе хĕрелсе шыçăнса кайнă пит-куçлă хĕрарăма курчĕ.

— Эх, Кристина. Пирĕн ырă ята варалаймăн эсĕ. Хăвăн пурнăçна пĕтеретĕн-çке, хĕрĕм. Çăкăра хирĕç чулпа петĕн апла, — терĕ.

## АХĂР САМАНА

Марье кăçалхи хĕлле миçемĕш хут ĕнтĕ пăлтăр алăкне аран-аран уçса пĕр чарăнми çăвакан юр ăшне чăмать. Юрать-ха кĕреçине пăлтăрĕнчех усрать вăл. Сарай таврашне хурас пулсан ун патне ашса çитеес те çук. Капла та пăлтăр алăкне кĕреçе пулăшнипе çех уçкалать. Уçать те, тем пысăкăш ĕç тунă пек, тарăннăн, ассăн сывласа ярать. Вара чунне лăплантарса пӳрте кĕрсе чей вĕретме лартать, çĕр улми шуратса шӳрпе хатĕрлет. Хăш чухне чей ĕçнипех çырлахать. Пĕччен çыннăн апачĕ те ăнсах каймасть. Паян ак шывĕ те витре тĕпĕнче анчах юлчĕ. Чей валли те çур чейник çеç пулчĕ. Яшка пĕçерес тесен кӳршĕсен пуссине çитсе килмелле. Унта çитме кунĕпех çул хывмалла.

Марье чей вĕретрĕ те ирхи апата ларчĕ. Сĕтел çине мĕн пуррине кăларса хучĕ. Капла апат енчен ăна пит чухăн тесе каламалла мар. Мухтав Турра, ывăлĕ Гриша амăшне пăрахмасть. Укçа-тенкĕпе те пулăшать. Инçетри Çурçĕртен ĕçлесе таврăннă чухне уйăхсерен икĕ пысăк сумкăпа тем тĕрлĕ апат-çимĕç илсе килет.

Хытса кайнă çăкăра алла илчĕ те темле хаклă япалана тытнă пек çавăра-çавăра пăхрĕ хĕра-

рăм. Тĕрĕс те, Марьешĕн вăл паянхи кун нихçанхинчен те хаклăрах. Пĕр эрне чарăнми тăкать те çанталăк юрне, лавккана çитсе килме те чĕр тамăк.

Хĕрарăм апатланчĕ те пăлтăр алăкне хиркелесе уçса урама тухрĕ. Юрать-ха кĕве çинипе юрăхсăра тухнă çирĕм çулхи çăм аттине кăларса ывăтмарĕ çуркунне. Ак хăçан кирлĕ пулчĕ вăл. Качакин часах păранламалла. Эрне витерен кăларманскер апат ыйтать. Ăна та çитермелле. Чăххисем те хăйсем çинчен мантармаççĕ. Автанĕ ав кăвак çутă киличченех таврана янратать.

Марье кĕреçе илчĕ те витесем патнелле çул хывма пуçларĕ. Унтан качакине апат пачĕ, чăххисене тулăпа хăналарĕ.

Ку ĕçсене пурнăçланă хыççăн калитке патнелле çул уçма пикенчĕ. Веçех тара ӳкрĕ ĕнтĕ, çапах ĕçлемелле. Ав кӳршĕри Анна кинемие тимуровецсем пулăшаççĕ. Ун патне килекен çук çав. Вăл пенси çулне те çитмен-ха. Эх, çакăнта Гриша ывăлĕ пулсан-и? Вăл амăшне юр тасатма мар, пусă патне шыв çĕклеме те яман пулĕччĕ.

Марье кĕреçи çине таянчĕ те аслă çул çине тинкерчĕ. Аякран юр тасатакан трактор кĕрлеттерсе килет. Ун хыççăнах пысăк чаплă машина пырать. Кун пеккине хĕрарăм хулара кăна курнă. Пĕр-пĕр начальник пуль ĕнтĕ. Мĕн ĕçлесе çӳремелле ун кунта? Тăван-пĕтенĕ патневаскать-ши? Камăн çавăн пекех «чăнкă» тăванĕ пур-ши хĕрĕх-алă килĕрен тăракан пĕчĕк ялта? «Крутой» теççĕ ун пеккисене телевизорпа. «Крутойсем» пур пуль-ха вĕсем. Кунта ав халăх ĕççĕр нушаланать. Колхоз фер-

минче сысна пăхнă Марье те пилĕк çул каяллах ĕçсĕр юлчĕ.

Акă чаплă машина вĕсен пӳрчĕ умĕнче чарăнчĕ. Машинăран элес-мелес чаплă тумланнă пысăках мар пӳ-силлĕ, кĕрнеклĕ арçын тухрĕ. Тепĕр алăкран Марье ывăлĕ Гриша пысăк сумкăпа курăнчĕ. Палламан арçын трактор хуçипе тем калаçрĕ те кĕсйинчен укçа кăларса пачĕ.

— Анне, аннеçĕм, — пырса ыталарĕ ывăлĕ амăшне. — Сана пулăшакан та çук.

— Ывăлăм, эсех-и вара ку? Санăн тата икĕ уйăхран çех таврăнмаллаччĕ-çке.

— Халь калаçар мар ун пирки, — хуллен сăмах хушрĕ ывăлĕ. Куçĕсем те питĕ салху Гришăн. Çӳллĕ, кĕрнеклĕ пĕвĕ те пĕкĕрĕлнĕ пек. Чиксе ыратса кайрĕ амăшĕн чĕри. Тем ырă мара сисет вăл.

— Атя паллаштар аннӳне пулас арăмупа. Мĕн ятлă-ха вăл? — мăн кăмăллăн ыйтрĕ арçын.

— Марье аппа темелле мана, — аран-аран илтмелле пăшăлтатрĕ хĕрарăм. — Мĕнле арăм? Ывăлăм, авланма шухăшланă-и эсĕ? Паянччен ним те шарламанччĕ-çке. Эпĕ санăн савнă хĕр пуррине те пĕлмен.

— Кайран, кайран, анне...

— Мана Лев Николаевич теççĕ.

Çапла каларĕ те арçын машина алăкне уçса пĕр çамрăк хĕрарăма кăларчĕ. Марье тĕсерех пăхрĕ те кӳршĕ ялти пĕлĕшĕсен хĕрне Литюка палласа илчĕ. Илтнĕччĕ-ха вăл хĕр çинчен. Илтнĕччĕ...

Çăмăл пурнăçпа пурăнать, пысăк укçана юрататать тени те хăлхана кĕнĕччĕ. Хулара пĕр

пуян кантурĕнче ĕçлет тенине те пĕлнĕччĕ. Вĕсене илтнĕччĕ-ха, анчах та ун ывăлĕпе Гришăпа савниллĕ тени нихăçан та хăлхана пырса кĕмен.

Марье тайăла-тайăла кайрĕ. Ӳкесрен ăна ывăлĕ ярса тытрĕ.

— Атьăр апла. Пӳрте кĕрер.

— Кĕрсе тăма вăхăт çук, — йĕрĕнерех пăхса илчĕ арçын Марьепе унăн тайăла пуçланă пĕчĕк пӳрчĕ çине. — Лида, юлас тесен эсĕ юлма пултаратăн. Ну, юрĕ, Григорий. Ыттине эпир санпа веçех калаçса татăлнă, — шаплаттарса çапрĕ вăл Гришăна хулпуççинчен.

— Эпĕ кунта юлмастăп, — касса татрĕ Литюк. — Туйччен атте-анне килĕнче пурăнатăп. Çак кунсенче килĕшме пырасса шанатăп.

«Апайтурух, — ĕсĕклет Марье чунĕ. — Кусем хуçаланаççĕ-çке пĕтĕмпех пирĕн пурнăçпа». Вăл пуçне пĕксе тăракан ывăлĕ çине пăхрĕ. Леш чĕлхине çăтса янă тейĕн.

Арçынпа Литюк «чăнкă» машинăна кĕрсе ларчĕç те аслă çулпа каялла вĕçтерчĕç.

— Анне, аннеçĕм, — тепĕр хут пырса ыталарĕ амăшне ывăлĕ. — Мĕнле саманара пурăнатпăр эпир? — шăлчĕ вăл хăйĕн куççульне амăшĕ курасран пăрăнса. Амăшĕ веçех туятьçке: йывăр ывăлне...

* * *

Хăй пурнăçĕнче çакăн пек инкек сиксе тухасса Гриша тĕлĕкре те тĕлленмен. Тĕлленменим вара? Каччă икĕ уйăх каялла курнă тĕлĕке аса илчĕ. Хăй пурнăçĕнче пĕрре те ыталаса, чуптуса курман Литюк Гришăна пĕтĕм халăх умĕнче ыталаса илсе чуптурĕ те икĕ аллипе

пăвма пуçларĕ. Патвар кĕлеткеллĕ, вăйлă каччă ниепле те хăтăлаймасть хĕр аллинчен. Çапла вăранса кайрĕ вăл. Хăй йĕп-йĕпе тара ӳкнĕ. Акă мĕне килчĕ иккен тĕлĕк.

Литюка лайăх паллать-ха. Кӳршĕ ял хĕрĕ унран виçĕ çул кĕçĕнрех. Шкулта вĕреннĕ чухне Гриша пек чухăн çын ачисенчен йĕкĕлтесе кулмасăр иртсе кайман. Шкул хыççăн темле курс пĕтернĕскер хулари пĕр фирмăра ĕçлет тенине илтнĕччĕ.

Салтакран таврăнсан Гриша ялта нумай пурăнмарĕ. Вахта мелĕпе Çурçĕре ĕçлеме çӳрерĕ. Лайăх тумланчĕ. Амăшне те самаях пулăшма пуçларĕ. Ашшĕ ывăлĕпе мăшăрне ачи пилĕк çулта чухнех пăрахнă: кӳршĕре пурăнакан пĕччен хĕрарăмпа çыхланса ялтан тухса кайнă. Унтанпа ашшĕне курман вăл. Пĕр пулăшу та кĕтсе илеймен унран çемье. Марье пĕтĕм чун хавалне парса тăрăшатчĕ ывăлĕ хăйне çынран катăк ан туйтăр тесе. Гриша йĕркеллĕ ывăл пулса ӳсрĕ. Пируспа, эрехпе туслашмарĕ. Пĕчĕкренех амăшне пур ĕçре те пулăшма тăрăшрĕ.

— Ашшĕне пăхса ывăлне кай тенĕ те, Петĕр пек тилхепесĕр ӳсмерĕ Гриша, — мухтатчĕ ăна кӳршĕри Анна кинеми. — Эх, çав Петĕре, ывăлне пĕрре те килсе курмарĕ-çке.

Ак авлантараççĕ халь ăна. Литюк тесен — вăл Гриша кăмăлне нихăçан та кайман. Ун пек йĕвенсĕр хĕрсене килĕштермест каччă. Анчах та шăпа çак тăрпалтайпа çыхăнтарасшăн ăна. Мĕн-ма кайрĕ-ха вăл ун чухне кӳршĕ ял клубне?

Чунĕ лăпкă марччĕ каччăн çав кас. Пĕр уйăх каялла пулчĕ ку. Ăна Литюксен ялĕнче пурă-

накан юлташӗ хӑйӗн ҫуралнӑ кунне чӗннӗччӗ. Малтан клуба ташӑ каҫне кайрӗҫ. Гришӑсен пӗчӗк ялӗнче Культура ҫурчӗ ҫук та, ялти ҫамрӑксем яланах унта ҫӳреҫҫӗ. Инҫе мар, ҫырма урлӑ анчах каҫмалла.

Литюк та пур кӗҫӗр клубра. Акӑ вӑл Гришӑна ташша чӗнчӗ. Тӗртсе яраймастӑн вӗт. Килӗшмеллех. Эх пӑркаланчӗ вара Литюк, эх хирkеленчӗ. Куҫне-пуҫне вылятать, пӗтӗм ӳт-пӗвӗпе каччӑ ҫумне ҫыпӑҫать.

— Пӗрмай тӗлӗкре куратӑп. Пӗртте асӑмран тухмастӑн. Ачаранах савнӑ эп сана, — сирпӗтет вӗри сывлӑшне хӗр. — Аван мана санӑн ытамунта.

Хӑйӗнчен самаях эрех шӑрши ҫапать.

— Темле ҫав. Эсӗ пирӗн пеккисенчен ытларах йӗкӗлтесе кулаттӑн пулас.

— Юратнипе вӑл, Гриша, юратнипе, — хытӑран та хытӑ ҫыпӑҫать хӗр пӗтӗм кӗлеткипе.

«Эй турӑ! Намӑс-симӗсе те пӗлмест иккен ку», — тӗлӗнет каччӑ. Клубран вӗсемпе пӗрле Валерийӗн ҫуралнӑ кунне уявлама та пычӗ.

— Эсӗ ку йӗмпӗлтие хӑвах чӗннӗ-и уява? — кӑсӑкланчӗ Гриша.

— Мӗн чӗнни ӗнтӗ, — пулчӗ хурав, — каялла ҫавӑрса яраймастӑн вӗт.

Валерисен килӗ-ҫурчӗ хӑтлӑ. Хулари пекех, темиҫе пысӑк пӳлӗм, уйрӑм кухня-столовӑй. Ара, ашшӗ яланах ятлӑ-сумлӑ ӗҫсенче тӑрӑшнӑ та. Амӑшӗ шкулта вӗрентекен пулса ӗҫлет. Ачисене те пысӑк пӗлӳ пама тӑрӑшрӗҫ. Валери кӑҫал ял хуҫалӑх институтне пӗтерчӗ. Район центрӗнче инженер-механик пулса тӑрӑшать вӑл. Йӑмӑкӗ Лариса techинститутра вӗренет.

Гриша та шкулта питĕ лайăх вĕренетчĕ. Анчах та пĕлĕвне малалла ÿстереймерĕ. Темех мар-ха, кая юлман. Ак Çурçĕрте ĕçлесе укçа пуçтарĕ те куçăмсăр майпа вĕренме кĕрĕ. Ун шухăшне Литюк татрĕ.

— Эс, чун савниййĕм, ма ман çумран пăрăнса кайрăн? Мана кичем кун пек, — пырса ыталарĕ вăл.

Валери те, унăн йăмăкĕ Лариса та сивĕ куçпа пăхаççĕ кĕтмен хăна çине. Гришăна Валери йăмăкĕ Лариса кăмăла каять. Çак сапăр, илемлĕ хĕр ун куçĕ умĕнче ÿссе çитĕнчĕ. «Эпĕ санăн та йăмăку пуйатăп», — тетчĕ пĕчĕк чухне йăл кулса.

— Ну, йăмăкăм, мĕнле пурăнатăн? — пырса çупăрларĕ Ларисăна кÿршĕ ял каччи.

— Чиперех. Хăв мĕнле? — йăл кулчĕ пике ун çине асамлăх сапса, хай Литюк çине чалăшшăн пăхса илчĕ.

— Чип-чиперех. Ура тупанĕсем кĕçĕтетчĕçха. Паян санпа ташласса пуль. Эс хирĕç мар пулсан паллах.

— Хирĕç мар, хирĕç мар. Йăмăку-çке, — вăтанарах кулса илчĕ Лариса. — Эп йăмăку та, анчах та кунта сан савни пур пулас. Ав мĕнле тулхăрса пăхать ман çине.

— Çын ан култăр. Шухăшра та пулман вăл.

Шавларĕç, кĕрлерĕç çамрăксем. Литюк Гришăран хăпма пĕлмерĕ çав каç.

Каччă эрехпе вылякан мар, анчах та пĕрик черкке çуттине пушатрĕ çав. Пушатрĕ. Ун черккине Литюк çывăрттаракан эмел пăрахнине курман-çке. Каччă ташă вăхăтĕнчех тайăлма пуçларĕ.

— Сана япăх-им? Эх, каччă тет тата хăйне.

Ĕçмесĕрех ӳсĕрĕлет иккен ку, — чĕвĕлтетрĕ Литюк.

Вăл Гришăна сĕтĕрнĕ пекех çывăрмалли пӳлĕме илсе кĕчĕ те кравать çине хучĕ. Хăй ним пулман пекех хăнасем патне таврăнчĕ. Тепĕртакран Литюк та каччă патне тĕнкĕлтетрĕ...

Вăранса кайсан Гриша хăй шăлаварсăр вырт-нине курчĕ. Ун çумĕнче куçне тутăрпа шăлкаласа Литюк ларать.

— Пулчĕ! Пулчĕ! Мĕн пулмалли пĕтĕмпех пулчĕ. Намăс кăтартрăн эсĕ мана, — нĕшĕклерĕ хĕр.

— Мĕн сӳпĕлтететĕн эсĕ?! Эпĕ сана пӳрнепе те тĕкĕнмен!

— Тĕкĕнмен тетĕн-и?! Ав мĕн чухлĕ свидетель! — янрашрĕ Литюк.

— Эх, пĕтертĕн эсĕ ман пурнăçа! — икĕ аллипе хăйĕн çӳçне лăскарĕ каччă. Хăйĕнне мар, Литюк çӳçне лăскамалла та, тĕрмене кайса ларас килмест-çке.

Çывăрмалли пӳлĕм алăкĕ умне Валерисен çемйи кĕпĕрленнĕ. Хăнисем саланса пĕтнĕ ĕнтĕ.

— Тухса кай кунтан! — Валери Литюка хулĕнчен тытса алăк патне сĕтĕрме пуçларĕ. — Никам чĕнмен çĕре килсе мăшкăл кăтартрăн!

— Суда паратăп! Лартатăп! Çемйипех свидетель пулса пыратăр! — çухăрашрĕ лешĕ.

— Пирĕн хушăра нимĕн те пулман. Тархаслатăп, ĕненĕр мана, — йăлăнса пăхрĕ каччă тăван пек çывăх çынсене. Куçĕсем Ларисăпа тĕл пулчĕç. Хĕрĕн куçĕсем куççульпе тулнă.

— Ĕненетпĕр, ачам, ĕненетпĕр. Ку ăçтиçук такама та мăшкăлтăк шывĕ ăшне путарĕ, —

лăплантарма пăхрĕ Валери амăшĕ Нина Николаевна.

Гриша тепĕр кунне ирех ялтан тухса кайрĕ.

— Ачам, пĕр уйăх килте пулатăп терĕн-çке. Лупас юпине майласшăнччĕ.

— Каймалла ман, анне. Кĕтеççĕ мана, — салхуллăн пĕлтерчĕ ывăлĕ...

...Пĕр кунхине ăна кантура пуçлăх пӳлĕмне чĕнтерчĕç.

— Иртĕр, иртĕр, Николаев. Ав кунта сирĕн пата хăна килнĕ, — аллине тăсса кăтартрĕ вăл чаплă кресло çинче саркаланса ларакан пĕр вăтăр пилĕкри çын çине. Лешĕ лутраскер пулас, креслăра питех курăнмасть те. Хăй Гриша çине курайманлăхпа пăхать. Калăн, каччă ун пĕвне вăрланă.

— Мĕнле хăна? Эпĕ никама та кĕтместĕп, — тĕлĕнчĕ Гриша.

— Эпĕ — кĕтмен хăна, но не хуже татарина, — лăх-лăх! кулса ячĕ арçын. Унтан ура çине тăчĕ те ăна алă тăсса пачĕ. — Мана Лев Николаевич теççĕ. Эпĕ Лидăн тăванĕ пулатăп. Апла пулсан санăн та тăван. Пиччӳ, вопшем, — ахăлтатрĕ хайхискер.

Урисем лĕнчĕр кайрĕç каччăн. Вăл стена çумне таянчĕ.

— Мĕскер, тухсах калаçатпăр-и? Е пуçлăху умĕнче те юрать? Пĕлтĕр унăн подчиненнăйĕсем таса хĕрсен ятне мĕнле çĕртнине, — чăвашла калаçма пуçларĕ вăл.

— Тухса калаçăпăр.

Палларĕ арçынна Гриша. Нимĕнле Литюк тăванĕ те мар вăл — хĕре темиçе хут та хуларан яла леçсе хăварнă. Валери сăмахĕсем тăрăх,

вăл Литюк ĕçлекен фирма хуçи. Урăхла каласан — унăн еркĕнĕ.

— Пуçтар сумкуна! Яла таврăнатăн. Авланас пулать сан, çамрăк соблазнитель. Билетсем хатĕр. Самолет каçхинеултă сехетре.

Арçын кантур çумĕнче тăракан шакла пуçлă икĕ амбал енне пуçĕпе сĕлтрĕ.

— Ан турткалан пурăнассу килсен. Ак ман сумкăра сана тĕрмене лартмалăх материал та пур. Врачран илнĕ справка...

* * *

Икĕ çул ытла фирма пуçлăхĕпе иртĕхсе пурăннă Литюк çие юлнине пĕлсен ун кабинетне çавра çил пек вирхĕнсе кĕчĕ.

— Так! — терĕ вăл икĕ чăмăрне пилĕкĕ çине хурса. — Ача пулать. Мĕн тумалла тет халь манăн?! Эпир санпа пĕрле пулнине пĕтĕм фирма пĕлет. Пуринчен ытла — ак çак диван, — урипе пырса тапрĕ вăл дивана.

— Эс, шăркалчă, мĕн дивансене урупа хĕнетĕн?! Халиччен мĕн тунă, халĕ те çавнах тăватăн!

— Эпĕ урăх аборта каймастăп! Мана иртнинче асăрхаттарчĕç: тата аборт тусан — ача урăх пулмасть ман.

— Так. Ача ашшĕсĕр çуралмасть. Çавăнпа та часрах унăн «ашшĕне» шыраса тупмалла.

— Мĕнле ашшĕне?! Ашшĕ ман умра! Ниçта та пăрăнаймастăн! Паянах арăму патне çитетĕп! Уйрăл унран! Мана качча ил! Фирма хуçин арăмĕ эпĕ!

— Мĕн?! Мĕн сӳпĕлтететĕн, тĕнче йытти?! — ялт сиксе тăчĕ пуçлăх пукан çинчен. — Парап эп сана фирма хуçи арăмĕ! Ăçтиçук! Сан пек

каяшсем ман арăмăн касса пăрахнă чĕрнине те тăмаççĕ.

Литюк каялла-каялла чакрĕ те алăкран коридора тухса лаплатса ӳкрĕ.

Тепĕр кунне ăна Лев Николаевич пӳлĕмне чĕнтерчĕ.

— Арăм хăлхине кĕрсен хăв та, хырăмри ачу та çук пулатăр. Шутла аванрах. Мĕнле тухма пулать ку йывăрлăхран?..

...Валерин çуралнă кунĕнче тухрĕ те Литюк çав капкăнран.

Ним пытармасăр, пĕтĕмпех, каласа пачĕ амăшне Гриша...

— Анне, пирĕн санпа хĕр килĕшме каймалла пулать. Эпĕ, паллах, унпа ĕмĕр ĕмĕрлес çук. Анчах та мана халĕ вĕсем йĕркеллĕ пурăнма памаççĕ. Вĕлерессипе хăратать леш арçынĕ. Бандит теççĕ ăна. Авлан, пӳрт лартса паратăп тет. Эпĕ хамăн «йăмăкшăн» укçа-тенкĕ шеллес çук тет.

— Ахăр самана çитрĕ иккен! — ӳлесе макăрса ячĕ те Марье урайне йăванса кайрĕ. Çавăнтах тапма чарăнчĕ çак мăшкăла тӳсеймен хĕрарăм чĕри.

## СЫВ ПУЛ, ЮРАТĂВĂМ

Лариса подъезд алăкне хытă шаплаттарса хупнипе вахтăра ларакан вырăс хĕрарăмĕ шартах сикрĕ.

— Мĕн, тĕнче пĕтмест пулĕ те? — йĕкĕлтерех ыйтрĕ вăл вырăнĕнчен çĕкленсе. — Пуринчен кая юлса килетĕн тата алăка та йĕркеллĕ уçса хупма тăрăшмастăн.

Пичĕ тăрăх вĕри куççуль юхакан хĕр нимĕн те чĕнмерĕ, иккĕмĕш хута чупса хăпарчĕ.

— Э-хе-хе! Вун икĕ сехет вахтăра ларнă вăхăтра мĕн кăна курмастăн, мĕн кăна илтместĕн-ши çак хĕр упраç пурăнакан общежитире, — мăкăртатрĕ çулланнă вахтер кĕмĕлленнĕ çӳç пайăркине пурçăн тутăрĕ айне майласа чикнĕ май. Хăй теме аса илсе йăл-йăл кулса илчĕ. Çулĕсене пăхмасăр илĕртӳлĕхне çухатман хĕрарăм пысăк кăвак куçне мăч-мăч тутарса кофтипе юбкине майларĕ. Унтан тĕкĕр умне пырса вăр-вар çаврăнкаласа илчĕ.

— Эх, çамрăклăх! Пĕрре кăна сана каялла çавăрса килесчĕ. А-а-а, тепĕр тесен япăхах иртмен-ха вăл манăн. Мĕн чуль каччă ăшне вут хыптарман-ши эпĕ, — сасăпах савăнчĕ майра.

Лариса хăй пурăнакан вун виççĕмĕш номерлĕ пӳлĕм алăкне шаплаттарса хупрĕ. Пĕр пăта çинче кăна тытăнса тăракан аялти тăпса тухса ӳкрĕ те, алăк пĕтĕм иккĕмĕш хута кисретсе урайне ӳкрĕ. Хĕр салтăнмасăрах кравать çине тӳнчĕ. Пӳлĕмре вăл ӳлесе макăрни илтĕнчĕ.

Пĕрле пурăнакан икĕ тантăшĕ, тутлă ыйха путнăскерсем, хăраса вăранса кайрĕç те ним ăнланмасăр унталла-кунталла пăхкаларĕç.

— Пĕтрĕ! Пĕтрĕ! Пуçĕпех пĕтрĕ! — кăшкăрса макăрчĕ вырăс хĕрĕ икĕ кăпăшка аллипе тин кăна сăрланă вутăн-хĕмĕн курăнакан çӳçне лăскаса.

Акă кӳршĕ пӳлĕмре пурăнакан хĕрсем кĕпĕрленсе килчĕç. Ытти пӳлĕмсен алăкĕсем яриех уçăлчĕç.

— Мĕн пулнă?! Тата мĕн пулнă?! — илтĕнет пур çĕрте те.

Аялти хутран вахтер килсе ҫитрĕ.

— Ҫак пӳлĕм вун виҫҫĕмĕш номерлĕ пулнине курах тарăхтарать-ши? Элле кунта канăҫлă ҫынсене purăнма ҫырман-ши? — тарăхса калаҫрĕ вăл. — Ҫирĕм ҫул хушши ҫак ӳкерчĕксем куҫ умĕнче: кам-тăр йĕрет, кам-тăр ҫапăҫать...

— Эх, хĕрсем! Маншăн ҫут тĕнче тĕксĕмленчĕ. Мĕнле йывăрлăхпа ҫĕнсе илнĕ юрату паян пĕр самантрах арканчĕ.

* * *

Лариса, культурăпа ҫут ĕҫ училищине пĕтернĕскер, иккĕмĕш ҫул автозаводăн культура керменĕнче тăрăшать. Ун профессийĕ — культорганизатор.

Паян культура керменĕнче ҫамрăксен каҫĕ. Тĕлĕнмелле илемлĕ, капăр тумланнă хĕрĕн чунĕ ҫак уява кĕтсе хавассăн юрлать. Ҫут ҫанталăк та ҫывхарса килекен ҫуркуннене туйса хăйĕн чĕлхипе пуплешет. Ларисăн ҫăмăл, акăш евĕр ярăнакан утти паян тата та илемлĕрех. Вĕҫнĕ пекех туять вăл хăйне.Васкать хĕр. Ăна ҫамрăксен каҫĕ темле асамлă вăйпа йыхăрать.

Акă ҫамрăксем ушкăн-ушкăнпа пуҫтарăнма пуҫларĕҫ. Хĕр тантăшĕпе калаҫса тăракан Лариса шарт сиксе илчĕ те гардероб патнелле ыткăнчĕ. Хăй унталла мĕншĕн утнине те ăнланаймарĕ вăл.

— Лариса, мĕн пулчĕ тата?! Мĕншĕн пăраххса кайрăн мана?! — илтĕнчĕ хыҫра хĕр тусĕн сасси.

Ним те чĕнмерĕ Лариса. Ун куҫĕ пĕр ҫамрăк лейтенанта пăраларĕ. Эй турăҫăм! Пулаҫҫĕ иккен пурнăҫра ҫавăн пек илĕртӳллĕ, асамлăх са-

пакан пит-куçлă, тĕлĕнмелле йăрăс кĕлеткеллĕ каччӑсем.

«Каччах пулĕ ĕнтĕ, венчет çĕрри çук-çке», — мĕлтлетсе илчĕ канăçсăр шухăш. Акă хĕр куçĕ юмахри евĕр сăн-сăпатлă лейтенант куçĕпе тĕл пулчĕ. Сикет, тăпăртатать Лариса чĕри. Май пулсан кăкăртан сиксе тухса çав чипер каччăн алли çине пырса ларĕччĕ. Йăл-л кулчĕ лейтенант шап-шурă шăлĕсене кăтартса. Вăл колонна çумне тайăннă чипер пике еннелле утрĕ, ăна ачашшăн хулĕнчен тытрĕ те ташă залне васкарĕ.

Лариса ура вăйĕ пĕтсе килнине туйрĕ. Йăванса каяс мар тесе юнашар колонна çумне таянчĕ. Унтан сывлăш çавăрса илчĕ те майĕпен ĕç пӳлĕмне утрĕ.

«Мĕн-ма яланах çапла пулса тухать-ха? Мĕнпур лайăх каччăсем урăх пикесене çакланаççĕ?» — ĕсĕклерĕ хĕр чĕри. Лариса мĕнпе кая вĕсенчен? Пĕвĕ яштака, йăрăс хурăн пек. Пилĕкĕ пĕр ывăçа вырнаçать пуль. Селĕм тăхăнса çӳрет. Куçĕ хĕм сапать. Тен, культура ĕçченĕ пулни чăрмав кӳрет?

«Эпĕ культура ĕçченĕ пулса ĕçлекен хĕре качча илес çук. Вĕсенчен лайăх арăм пулмасть», — лаплаттарса хунăччĕ пĕрре палланӑ яш. Хăй кама кирлĕ-ши питех? Ун пек «така» кам кăмăлне тивĕçтерĕ-ши?

Лариса сĕтел сунтăхне уçрĕ. Мĕншĕн уçнине те ăнланмарĕ-ха вăл. Акă куçĕ тĕлне пуçланă хĕрлĕ эрех кĕленчи çакланчĕ. Хĕрарăмсен уявĕнченех юлнăскер вăл. Ним шутласа тăмасăр çав эрехе пĕр стакан тултарчĕ те сывламасăр ĕçсе ячĕ. Ниçта та пырса перĕнмерĕ тейĕн эрех хăвачĕ. Шалта, чун-чĕрере, кăна

темле вăй-хăват çĕкленчĕ. Унта çутă шанăç та мăн кăмăллăх пур. «Лариса, малалла ăнтăл!» — тет çав хăват.

Хĕр тĕкĕр умне пырса тăчĕ. Ун çине кăн-кăвак пысăк куçлă тĕлĕнмелле илĕртӳллĕ пике пăхать. Лариса хăйне хăй чĕлхе кăтартса вит-лерĕ те вăр-вар çаврăнса илчĕ.

— Ку каччăшăн кĕрешĕве кĕрсен те çылăх пулмасть, — сасăпах каласрĕ вăл. — Леш пике те принцессах мар. Пире те начар чустаран унаман.

Хĕр ташă залне вĕçнĕ пек васкарĕ.

«Епле пулсан та эпĕ çав лейтенанта шурă ташша чĕнетĕпех, — тĕв турĕ вăл. — Ара, хам ĕç çинчен манса каймарăм-и эпĕ паян?! Манăн тĕрлĕ вăйăсем йĕркелемелле-çке», — çавăнтах аса илчĕ пике.

Шавларĕç, кĕрлерĕç çамрăксем. Тĕрлĕ вă-йăсем йĕркеленĕ май тимлĕхне хавшатрĕ пу-лас Лариса.

— Хĕрсем каччăсене ташша чĕнеççĕ! — илтĕнчĕ ташă каçне ертсе пыраканăн сасси.

Культорганизатор йĕри-тавра пăхкаларĕ, ан-чах лейтенант курăнмарĕ. Унпа пĕрле килнĕ хĕр те çук. Лариса гардероб патне ыткăнчĕ. Унта та пулмарĕ мăшăр. Хĕр туалет енне вас-карĕ. Тен, çавăнта кайнă вĕсем?

«Тĕлĕк анчах пулчĕ пуль маншăн ку тĕлпу-лу», — ассăн сывларĕ культорганизатор.

Эрне хушши пĕрре те асран тухмарĕ çав лей-тенант. «Ăçтан вăл? Ăçта ĕçлет? Тен, урăх ху-ларан килнĕскер пуль».

— Чĕрӳне ан çунтар-ха, тархасшăн, — шел-лесе каларĕ пĕрле пурăнакан Аня. — Лейте-нант пулсан ăçта ĕçлеме пултарать вăл? Е çар

комиссариатĕнче, е çар ĕçченĕсем хатĕрлекен училищĕре. Тĕрĕс-и?

— Тĕрĕс, — ним ăнланмасăр пăхрĕ ун çине Лариса.

— Мĕн ăсран тайăлнă пек тĕлсĕр-мĕнсĕр пăхатăн ман çине?

— Ăнланмарăм эп сана.

— Халех ăнлантаратăп. Миçене ĕçе пыма пултарать вăл? Саккăра. Сакăр сехетчен санăн çар училищи вырнаçнă урама сакăр хут унта-кунта хутлас пулать.

— Ара, хулара икĕ çар училищи-çке. Çар комиссариачĕ те хулан кашни районĕнчех.

— Пĕр кун пĕрин патĕнче. Тепĕр кун — теприн патĕнче.

— Ну ăслă та эс, Аня! — чупса пырса ыталарĕ тантăшне Лариса. — Канашсен çурчĕ вырнаçнă сан пуçунта.

— Ан сӳпĕлтет.

Çапла тума шутларĕ те хĕр.

* * *

Каçхине ĕçленĕ май Лариса киле вунă-вун пĕр сехетре çеç таврăнать. Ирхине ниçта та васкамалла мар. Хĕрсем ĕçе тухса каяççĕ. Аня завод поликлиникине васкать. Вăл унта участок фельдшерĕ пулса тăрăшать. Галя пĕр цехра бухгалтер ĕçне пурнăçлать. Хĕрсем тухса кайсан çывăр та çывăр пӳлĕмри шăплăхпа киленсе.

— Эх, тăрас килмест-çке ăшă вырăн çинчен, — пĕр енчен тепĕр енне çаврăнса выртрĕ Лариса тумбочка çинчи сехет çине пăхмасăр.

— Тăрас килмест тет-ха вăл, — утияла сирсе ывăтрĕ Аня. — Юрату çинчен манса та

кайрӑн-и? Ан ман. Сан паян танк училищи патӗнче хуралта пулмалла. Унта вӗҫсе ҫитме ҫук. Тӑр атя, тумлан. Ҫичӗ сехет ҫитет вӗт.

— Тӑтӑм, чупатӑп ӗнтӗ, — пырса ыталарӗ тантӑшне Лариса. — Аня, эпӗ санӑн лутра кӗлеллӗ аттуна тӑхӑнам-ха. Нумай утмалла пулӗ те, ҫӳллӗ кӗлеллипе урасӑр та юлма пулать.

— Юратушӑн ним те шел мар, — кулкаларӗ тантӑшӗ. — Мӗн кирлӗ — веҫех ил.

Выҫ варлах тухса чупрӗ Лариса. Трамвайӗсем те питӗ сайра ҫӳреҫҫӗ тата. Пурте тулли. Чарӑнмасӑрах иртсе каяканни те пур.

Ҫук, ӗлкӗреймерӗ хӗр саккӑрччен. Тепӗр кунне ирхине ултӑ сехетрех тухса вӗҫрӗ. Саккӑр ҫитиччен училище вырнаҫнӑ урампа уткалама пуҫларӗ. Урамӑн икӗ енӗпе те ҫар тумне тӑхӑннӑ арҫынсем пыраҫҫӗ. Чылай ҫулланнисем те, вӑтам ҫулхисем те, леш лейтенант пек ҫамрӑккисем те пур.

Пӗрремӗш кун хураллани усӑсӑр пулчӗ. Иккӗмӗш кунне Лариса пыракан енӗпе мар, тепӗр енче палланӑ сӑн-сӑпатлӑ лейтенант утнине асӑрхарӗ хӗр. Малалла чупса кайрӗ те ҫул урлӑ каҫса ӑна хирӗҫ утрӗ.

Хирӗҫ пуласси нумай та юлманччӗ — лейтенант васкаса тепӗр енне каҫса кайрӗ. Вӑл уттине хӑвӑртлатрӗ те КПП пӳлӗмӗнче ҫухалчӗ. Хӗрӗн халиччен вӗҫме хатӗр ҫуначӗсем лӑштӑрах усӑнчӗҫ.

«Ара, мӗн кулянатӑп-ха эп? Вӑл ӑҫта ӗҫленине пӗлетӗп. Текех ытти училищӗсемпе ҫар комиссариачӗсене шырамалла мар. Пӗр училищӗне хураллама чӑтӑм ҫитеретӗпех», — лӑплантарчӗ пике хӑйне.

Виççĕмĕш кунне Лариса каллех «хурала» васкарĕ. Паян вăл çӳллĕ кĕлеллĕ вăрăм илемлĕ атăпа. Питĕ килĕшет ку пушмак хĕре. Кунчисем тăпăлкка урисене çат тытаççĕ. Кĕске хура юбка тата илемлĕрех кăтартать урине.

Хăй савакан лейтенант КПП патĕнче тăнине курчĕ Лариса. Чупса пырса сывлăх сунаймастăн вĕт, ăна йĕрлесе çӳрени çинчен пĕлтерейместĕн. Вырăнтан та хускалмарĕ, ун куçĕ тĕлне пуласран пăрăнса тăчĕ.

Акă шурă «Волга» çитсе чарăнчĕ те, лейтенант машинăна кĕрсе ларчĕ. Машина вăрт çаврăнса хула урамĕпе васкарĕ.

Тепĕр кунне хĕр КППран инçех мар вырнаçса лейтенант хăш çулпа килнине сăнама пуçларĕ. Акă паллана çын урамăн тепĕр енĕпе училище патнелле утать. Лариса çул урлă чупса каçрĕ те савнă йĕкĕте хирĕç васкамасăр утрĕ. Çитме ик-виç утăм юлсан такăннă пек турĕ, хыттăн ахлатса илчĕ те сылтăм чĕркуççийĕ çине ларчĕ. Çав вăхăтра темĕн шатлатни илтĕнчĕ. Çĕкленеймест хĕр, вак чул çине тăрăннă. Ӳкнĕ пек анчах кăтартасшăн пулчĕ-çке. Чăнласах та питĕ хытă ыраттарнă иккен чĕркуççине.

Лейтенант васкаса чупса пычĕ те хĕре çĕклесе тăратрĕ.

— Эй, тем курас пур, — пăшăрханса калаçрĕ качча. — Хытах ыраттартăр пулас, — шеллесе пăхрĕ вăл чиперккене куçран. Хăй çаванттах ăшĕнче: «Ку куççен тĕпсĕр аварне лекме ансат», — тесе шутларĕ.

— Тем, ыраттартăм пулас, — йăл кулчĕ пике шăпăр-шăпăр юхакан куççульне ал тупанĕпе шăлса.

Пĕлинччĕ качча хĕрĕн мĕнле куççуль юх-

нине. Савăнăç куççулĕ юхать-çке тӳпе пек янкăр таса куçран.

— Утма пултаратăр-и? — пăшăрханчĕ каччă.

— Тăрăшса пăхăп. Ай! Пусаймастăп сылтăм ура çине.

Лейтенант Ларисăна çĕклерĕ те КПП еннелле васкарĕ.

— Эсир кунта ларăр-ха. Эпĕ халех «васкавлă пулăшу» чĕнетĕп.

— Нимле пулăшу та кирлĕ мар. Ыратни майĕпен иртсе пырать. Халĕ киле епле çитесси çинчен шухăшламалла.

— Хăш районта, хăш урамра пурăнатăр эсир?

— Сĕве леш енче. Автозавод общежитийĕнче пурăнатăп.

— Халех машина пирки калаçатăп, та сире леçсе ярĕç.

Вăл пĕр пилĕк минутран шурă «Волгăпа» килсе çитрĕ.

— Эпĕ сире леççсех хăвαратăп, — ăшшăн кулкаларĕ лейтенант шап-шурă тикĕс шăлĕсене кăтартса, хĕре йăтса илчĕ те машинăна лартрĕ. Хăй юнашар вырнаçрĕ.

Машина чупнă май шăкăл-шăкăл калаçса пычĕç çамрăксем. Ятне, ăçта ĕçленине, телефон номерне ыйтса пĕлчĕ каччă.

— Мана Андрей тесе чĕнеççĕ. «Служу Советскому Союзу», — аллине пуçĕ патне тытрĕ вăл.

— Халь Совет Союзĕ çук ĕнтĕ. Служу России темелле пуль, — именчĕклĕн кулчĕ хĕр.

— Эпĕ Совет Союзĕ арканиччен вĕренсе тухнă. Ăна пурнăçран кăларса пăрахма çăмăлах мар, — ассăн сывласа илчĕ Андрей. — Телефон номерне çухатас марччĕ.

— Мана шăнкăравланăшăн леш хĕр тусăр кўренмĕ-и?

— Мĕнле хĕр тус? — тĕлĕнсе куçне чарчĕ каччă. — Çук-ха вăл ман. Эсир мана паллатăр-и?

Лариса ăна çамрăксен каçĕнче курнине каласа пачĕ, хăй ăнран кайса юратса пăрахни çинчен çеç шарламарĕ.

— Çамрăк пике-и? Ман йăмăк вăл, Марина. Çав уява мана ирĕксĕрлесе ташă каçне илсе пычĕ. Хамăн пырас кăмăл та питех çукчĕ. Эпĕ те Сĕве леш енче пурăнатăп. Полбин ячĕллĕ урамра.

Çав каçах шăнкăравларĕ Андрей, Лариса сывлăхĕ çинчен ыйтса пĕлчĕ, çитес вăхăтрах тĕл пулма ыйтрĕ.

Кашни каçах тĕл пулчĕç вĕсем. Каччă та хĕре кăмăлларĕ пулас. Йăмăкĕпе те паллаштарчĕ...

Шăпа тени веçех хăйне майлă çаврăнса хурать мар-и.

Пĕр каç вĕсем Культура керменĕнчен тухрĕç те ун çумĕнчи паркра уçăлса çўрерĕç. Пĕрремĕш хут чуптурĕ каччă çав каç Ларисăна, хĕре савни çинчен пĕлтерчĕ. Общежити умне çитсен Андрей ăна йăтса илчĕ те хăй çумне хыттăн чăмăртарĕ. Çав вăхăтра Ларисăн ăш-чикĕ пăлханса килчĕ те — пă-ă-ă-йт! тухса кайрĕ таса мар сывлăш.

— Ах! — терĕ пике пĕтĕм чун ыратăвĕпе намăсланса. Вăл хыттăн туртăнчĕ те каччă ытамĕнчен вĕçерĕнсе общежитие чупса кĕрсе кайрĕ.

— Лариса! Лариса! — илтĕнчĕ хыçра.

Çав каçран вара хĕр каччăпа урăх тĕл пул-

масса тӗв турӗ. Телефон патне те пымарӗ. Тӗл пулма та килӗшмерӗ.

«Сыв пул, юратӑвӑм. Пӗрле пулма пире Турӑ пӳрмен», — пӑшӑлтатрӗ вӑл куççуль витӗр.

## ТУЙ МЫСКАРИ

Хулари чи пысӑк, чи чаплӑ ресторанта паян туй халӑхӗ пуçтарӑннӑ. Кӗркунне енне сулӑннӑ пулин те, çанталӑк сарӑ хӗр пек ачаш куллине сапалать те сапалать. Лайӑх вӑхӑт суйласа илнӗ туй валли Алешкинсемпе Митрофановсен çемйисем. Кӗркунне питӗ тулӑх килчӗ кӑçал. Ресторана та чи аваннине суйларӗç. Кун пек ресторанта кашниех туй кӗрлеттереймест — хакӗсем питӗ хытӑ çыртаççӗ. Апла пулин те черечӗ пысӑк. Анчах та хулари район пуçлӑхӗн çумӗ пулса тӑрӑшакан Кирилл Николаевич Митрофановшӑн ку пӑтӑрмах пулмарӗ. Алешкинсем те сумсӑр çынсем мар. Çемье пуçӗ Олег Петрович çав районтах вырнаçнӑ пасарӑн директор çумӗ пулса вӑй хурать.

Чаплӑ туй кӗрлемелле паян. Алешкинсем чӑвашсем. Хӗрӗ вара вырӑс çемйине кин пулса кӗрет.

— Туя хамӑр тӑвансенчен Мускавра тӗп инженер пулса ӗçлекен виççӗмӗш сыпӑкри пиччене кӑна чӗнетпӗр. Унӑн арӑмӗ вырӑс. Пысӑк вырӑнта ӗçлет, — сассине хӑпартсах каларӗ Мария Яковлевна, Олег Петрович арӑмӗ, туя кама чӗнессине палӑртнӑ чухне.

— Ара, хампа пӗртӑван аппапа пиччене те чӗнместпӗр-и? — йӑвашрах сасӑпа ыйтрӗ Олег Петрович.

— Санăнне те, манăнне те чĕнместпĕр. Чăваш сăмахĕ ан тухтăр туйра. Тата вĕсенчен мĕн усси? Пĕри те туйра пин тенкĕрен ытла хурас çук.

— Аçупа аннӳне те йыхравласшăн мар-и?

— Каларăм пуль сана! — тăр-рăс тапрĕ урипе арăмĕ. — Кайран килте пуçтарăнăпăр.

— Ара, Даниловпа арăмĕ те чăвашсем-çке.

— Вĕсем çĕнĕ чăвашсем. Килĕнче пĕр сăмах та чăвашла калаçмаççĕ. Арăмĕ хура çӳçне шурă кĕрĕк çăмĕ тĕслĕ сăрласа çӳрет. Хĕсĕк куçĕ пысăкрах курăнтăр тесе косметолог патĕнче темле хатĕрпе сартарать. Çын çине тухнă чухне куç шăрçине пысăклатма хаклă тăракан шĕвек ярать.

«Юрать аттепе анне çак намăса курмаççĕ», — хурланчĕ Олег Петрович ăшĕнче.

Пурнăçран уйрăлса кайнă ашшĕпе амăшне аса илсен куçĕ шывланчĕ çак патвар арçыннăн.

Чаплă çынсем пуçтарăнчĕç туя. Хулари пысăк пуçлăхсем. Хулари пилĕк пасарăн директорĕсемпе çумĕсем мăшăрĕсемпе. Алешкинсен тăванĕсем çеç çук. Арăмĕн Мускаври тăванĕ те телеграммăпа çех саламларĕ.

— Хăть пĕр пилĕк пин укçа ярса паринччĕ, — шăл витĕр сăрхăнтарчĕ Мария Яковлевна. — Хыт кукар! Çамрăкранах виçĕ пусшăн ӳксе вилетчĕ. Тăрпалтай майри чарнă пулинех!

— Килеççĕ! Килеççĕ! — кăшкăрса ячĕ пĕри.

Акă чи хаклă, чи чаплă машинăпа çамрăк мăшăр çитсе чарăнчĕ. Вĕсен хыçĕнчен, пĕр алă машина та пур пуль, кĕрлеттерсе çитрĕ. Хулари чи пысăк телевидени ӳкерет паянхи туя. Хаçатсенчен те йышлăн.

Акă туй халăхĕ хăйсене валли уйăрнă вы-

рăнсене йышăнчĕ. Кунта кам ăçта ларас тенĕ пек вырнаçаймăн. Вырăнĕсене «рангсем» тăрăх хушаматпа палăртнă.

Урамра шăрăх пулнăран ресторан чӳречисем яриех уçă. Тамада текенни туй пуçланни çинчен пĕлтерсе сăмах калама пуçларĕ кăна — варринчи чӳречерен вăйлă çумăр пек чашлаттарса темĕнле шĕвек тăкăнма пуçларĕ. Чăтма çук таса мар шăршă сарăлчĕ залра. Туй кĕреки самантрах илемлĕ сăн-сăпатне çухатрĕ. Çамрăк мăшăра та, туй халăхне те шеллемерĕ çак «çумăр». Кам йĕрет, кам çухăрать.

— Эпĕ пĕлетĕп! Эпĕ пĕлетĕп ку киревсĕр ĕçе кам тунине! — йĕре-йĕре кăшкăрчĕ çамрăк кин.

Олег Петрович чӳрече патне çывхарчĕ те канализацисенчи каяша турттаракан пысăк машинăна курчĕ. Шоферĕ васкамасăр шлангне майласа хучĕ те Олег Петровича алне сулса саламларĕ. Çавăн пекех васкамасăр кабинăна кĕрсе ларчĕ те хула урамĕпе вĕçтерчĕ. Никамран та хăраманнине, никамран та пытанманнине пĕлтерчĕ вăл хăйĕн хăтланăвĕпе.

— Эх, пĕтерчĕ! Пуçĕпех мăшкăлларĕ! — кăшкăрса ячĕ Олег Петрович пĕтĕм чун хавалĕпе чăвашла.

Çакна илтсен çĕнĕ кĕрĕвĕн амăшĕ пуçне ярса тытрĕ те:

— Ах, эсир вырăссем мар иккен! Ултавçăсем! Ултавçăсем! Путсĕр чăвашсем! — тесе кăшкăрса ячĕ.

Туй халăхĕ вăрçăна-вăрçăна туххăмрах ресторантан саланчĕ.

— Атя киле! Эпир паянтан ку çынсене палламастпăр! — сĕтĕрчĕ ывăлне амăшĕ.

— Юрать телевиденипе хаçатри журналистсем кайса пĕтнĕччĕ, — шăппăн каларĕ çĕнĕ кĕрĕвĕн ашшĕ. — Эх, ĕмĕрлĕхе намăс куртăмăр.

* * *

Хулари Офицерсен çуртĕнче дискотека пырать. Нумай хула çамрăкĕ пуçтарăнать кунта. Студентсем те йышлăн. Кристина Алешкина та, хулари фармаци колледжĕнче вĕренекенскер, хăйĕн çывăх юлташĕпе Ольăпа час-часах кунта савăнать. Дискотекăра лару-тăру йĕркеллĕ, ӳсĕр çамрăксем çукпа пĕрех. Паян та ташша çапма килнĕ хĕрсем. Хальлĕхе иккĕшĕн те савнă каччисем çук-ха. Кристина, пуян çемьере çитĕнекенскер, каччăсем çине пит тиркесе пăхать. Вăл çӳллĕ, илемлĕ, модăн «пискĕпе» килĕшӳллĕн тумланакансене кăмăллать. Ăс-тăнĕ те çӳлти шайра пултăр паллах.

Акă алăкран пĕр çӳллĕ, тĕлĕнмелле илемлĕ, килĕшӳллĕ тумланнă, сăнĕпе, кĕлеткипе такама та кăмăла каймалла каччă кĕрсе тăчĕ.

— Кур-ха, Оля, мĕнле принц паян дискотекăра, — кăлт тĕкрĕ Кристина çумĕнче тăракан тантăшне. — Паян вăл мана ăсатать. Ак курăн-ха. — Хăй çавăнтах йăрăс пĕвне, çинçе пилĕкне, илĕртӳллĕ сăн-питне кăтартасшăн «принц» енне çаврăнчĕ те пысăк кăвак куçне ялкăштарса йăл кулчĕ.

— Куратăп-ха принцне. Рыцарь пулсан тем пекехчĕ те.

Çав самантран Кристина чипер каччăна йĕрлеме пуçларĕ. Пĕрмай ун тавра явкаланать, çав вăхăтрах ытти хĕрсене те сăнать.

«Мана сăнпа та, тумпа та çитекенни сахалтарах-ха кунта», — мăнаçланчĕ вăл.

Диджей шурă ташă тесе пĕлтерсенех Кристина çав принц патне тапса сикрĕ. Ĕлкĕрчĕ-ĕлкĕрчех çав. Тата тăват-пилĕк пике çул тытнăччĕ ун патне. Паллашрĕç. Максим ятлă вăл. Каччăн илемĕпе, япшар чĕлхипе ӳсĕрĕлнĕ хĕр темех ыйтса пĕлмерĕ ун çинчен. Хăй çапах куршанак пекех çыпçăнчĕ Максим çумне.

Такси тытсах ăсатрĕ хĕре каччă. Çула май Ольăна та килне леçрĕç. «Пуян пулмалла», — хĕпĕртерĕ Кристина.

Вăхăт иртнĕçемĕн Максим кăçал кăна политехника институтне пĕтерни палăрчĕ. Ĕç пирки ыйтсан коммуналлă хуçалăхра вăй хунине пĕлтерчĕ. «Инженер пулса ĕçлет иккен, — савăнчĕ хĕр. — Пĕрлешсен атте çӳллĕрех вырăна вырнаçтаратех».

Пĕр кунхине хула варринчи чарăнура тăнă чухне Кристина канализацисенчи тасамарлăха турттаракан машина кабининчи çамрăка асăрхарĕ.

— Ха, — тĕртрĕ вăл тантăшне. — Пулаççĕ те иккен пĕр пек çынсем. Каснă лартнă Максим.

Юлташĕ пуçне пăрнă вăхăтра машина куçран çухалнăччĕ ĕнтĕ.

— Тĕнчере пĕр пек сăнлă çын виççĕ пулать теççĕ-çке, — йăл кулчĕ Оля.

Каçхине, калаçса татăлнă пекех, Кристинăпа Максим хулари тĕп паркра тĕл пулчĕç. Пысăк чечек çыххипе килнĕ каччă тĕл пулăва. Ку енчен вара вăл питĕ те тавçăруллă, хыт кукар мар. Хĕре парнесемпе савăнтарсах тăрать. Çамрăксем уçăлса çӳрерĕç.

— Эх, чутах манса каяттăм. Паян эпĕ пĕр машина кабининче каснă лартнă сан пек çынна

куртăм. Чутах Максим тесе кăшкăрса яраттăм.

— Мĕнле машинăра? Хăш тĕлте?

— Хула варринче, — урампа чарăну ятне каларĕ Кристина. — Ольăпаччĕ эпир.

— Кăшкăрмаллаччĕ. Эпĕччĕ вăл, — лăпкăн каларĕ каччă.

— Эсĕччĕ-и?! Эсĕ çав машинăра мĕн тăваттăн вара?! — хĕремесленсе кăшкăрчĕ хĕр.

— Эпĕ вăл машинăпа ĕçлетĕп.

— Суеçĕ! Суеçĕ! Эпĕ сана инженер тесе! Эсĕ каяш турттаракан ăçтиçук иккен! Институт пĕтернĕ тет тата! Туятăп санран яланах темле таса мар шăршă çапать! — çухăрчĕ пике сурчăкне сирпĕтсе. Унтан çаврăнчĕ те Максим енне лачлаттарса сурчĕ. Каччă пĕр сăмах та чĕнмерĕ, хĕртен пăрăнса хăйĕн илемлĕ уттипе мăнаçлăн хула урамĕпе васкарĕ.

Максим хĕре пĕртте куçран вĕçертмерĕ. Çук, хăй унсăр пурăнайманнипе мар. Чун ыратăвĕ, Кристина хăйĕнчен мăшкăлласа кулни çапла тума хистерĕ ăна.

Нумай каччă улăштарчĕ пуçлăх хĕрĕ çур çул хушшинче. Максимăн та пурнăçра савăнмалли сахал мар пулчĕ. Çур çул хушшинче вăл мастер, аслă мастер тивĕçĕсене пурнăçларĕ. Пенси çулне çитнĕ тĕп инженер ĕçрен каясси пирки сăмах çӳрет. Пултаруллă, института хĕрлĕ дипломпа пĕтернĕ çамрăка ун вырăнне лартасси çинчен калаçу пырать.

Пĕррехинче урамра Максим Кристина юлташне Ольăна тĕл пулчĕ. Тантăшĕ каччă тухассине пĕлтерчĕ хĕр. Туйĕ хăш ресторанта пуласине те каларĕ.

— Эсĕ те туйра сикетĕн пулĕ-ха? — кăсăкланчĕ каччă.

— Çук. Унта чаплисем, пуяннисем çеç пулаççĕ. Тăванĕсене те чĕнмен, — салхуллăн тавăрчĕ Оля.

— Эпир чĕнмесĕрех кайăпăр çав туя, — йӳççĕн кулчĕ Максим...

Туй мыскари хыççăн икĕ кунран Митрофанов Олег Петровича ĕç пӳлĕмне чĕнтерчĕ.

— Эсир çав каччăна хирĕç айăплав ĕçĕ пуçарнă тесе илтрĕм. Заявленийĕре каялла илĕр. Мана шăв-шав кирлĕ мар. Кам-тăр илтнĕ пуль, кам-тăр пĕлмест те пуль. Çавăнпа пĕттĕр. Пиртен тăванланасси пулмарĕ. Çамрăксене шел. Ĕмĕр тăршшĕпех асран тухас çук вĕсен çак кун. Çапах сирĕн ĕçĕре чăрмав кӳрес çук çав пулăм. Эпир арçынсем-çке, йĕркеллĕ çынсем, — терĕ вăл аллине парса.

## КĔТМЕН ВЕНЧЕТ

Ольăпа Галя пĕр ялта çуралса ӳсрĕç, пĕр класра вĕренчĕç. Мĕн пĕчĕкренпех вĕсем çывăх юлташсемччĕ. Анчах çитĕнсе çитсен тантăшсен пурнăç çулĕ уйрăлса кайрĕ. Мĕн тăвас тетĕн, кашнийĕн хăйĕн шăпи. Тĕрлĕ хулара, тĕрлĕ аслă шкулта пĕлӳ илчĕç. Вăтăр çул тĕл пулаймарĕç вĕсем. Тĕлĕнмелле вĕт, вăтăр çул вăтăр кун пек тĕпĕртетсе иртсе кайрĕ.

Пĕррехинче ял урамĕнче ăнсăртран Галя Ольăна курчĕ. Пĕрне-пĕри асăрхамасăрах иртсе каятчĕ-и тен, анчах та хĕрарăм темрен такăнчĕ те хытах мар вăрçăнса илчĕ. Питĕ паллană пек туйăнчĕ Гальăна çак сасă.

— Чим-ха, чим, Оля вĕт ку! — кăшкăрнă пекех хыттăн каларĕ вăл, каялла çаврăнса хайхи хĕрарăм патне ыткăнчĕ. — Оля! Эсех-и ку?

Пĕр ĕмĕр курман сана! — ыталаса илчĕ Галя тантăшне.

— «Галя, Галя, одна средь нас ты краля». Астăватăн-и, мĕнле юрлаттăмăр çамрăк чухне. Пăх-ха, улшăнманпа пĕрех эсĕ.

— Эсĕ те пĕрре те улшăнман.

— Ну суятпăр та вара пĕр-пĕрне. Питĕ кăмăллă суятпăр, — ахăлтатаççĕ тантăшсем.

— Оля, атя пирĕн пата, — çийĕнчех хăнана чĕнчĕ Галя.

— Çук, луччĕ пирĕн пата каяр — анне килте пĕчченех. Чун каниччен калаçăпăр, иртнине аса илĕпĕр, — çине тăчĕ Оля.

...Тем çинчен те калаçрĕç юлташсем. Юлашкинчен Галя Ольăна хăйĕн вăрттăнлăхне уçса пама шутларĕ:

— Чылай çул упратăп ăна хам чĕрере. Тен, эсĕ мана кирлĕ сĕнӳ парăн...

* * *

Кольăпа Галя хула урамĕпе шăкăл-шăкăл калаçса утаççĕ. Ăнсăртран тĕл пулчĕç вĕсем паян. Тен, ăнсăртран та мар пуль. Çак илемлĕ, йăрăс пӳллĕ, хăйне килĕшӳллĕ тумланакан каччă ял хуçалăх институтĕнче пиллĕкмĕш курсра вĕренет. Галя çав институтрах иккĕмĕш курса куçрĕ. Унăн аппăшĕ Зоя та çавăнтах Кольăпа пĕр группăра пĕлӳ пухать.

Кольăпа Зоя ачаранах туслă. Анчах та аппăшне çак каччă питĕ килĕшнине пĕлет Галя. Йĕкĕт ăна савать тесе шутлать Зоя, çавăнпа Коля вĕсен пӳлĕмĕнчен тухма пĕлмест тесе ĕненет. Урăхла калама та май çук — ташă касĕсене, кинона, театра пĕрле çӳреççĕ вĕсем.

Анчах та сисет Галя: Коля аппăшĕ çине мар, ун çине ăшшăн, темле асамлă кулăпа пăхать. Пăхтăрах. Куншăн укçа ыйтмасть вĕт хĕр.

Юлашки вăхăтра тата Кольăна Галя час-часах урамра тĕл пулкаларĕ. Кашнинчех ăнсăртран пулнă пек тыткаларĕ хăйне каччă. Паян та ак:

— Вăт кама курасса сиссе куç сикет паян манăн. Сана тĕл пуласса иккен, — тесе пырса çупăрларĕ вăл хĕре. — Кунĕ тата мĕнле ырă! Атя кăштах уçăлса çӳрер хулара. Тĕп парка çитсе килĕпĕр.

Кунĕ, чăнах та, çырла пиçмеллиех. Лăпкă. Çил çук. Ытла шăрăх та мар.

— Атя, — хаваспах килĕшрĕ Галя. Хăйĕн çавăнтах чунĕ çуйханса илчĕ: «Зоя çилленмĕши мана? Вăл Кольăна савать-çке. Тепĕр тесен, уçăлса çеç çӳретпĕр-çке».

— Уттартăмăр, — савăк кулăпа ялкăшса хĕре хулран тытрĕ каччă.

Чылай вăхăт çӳрерĕç вĕсем. Паркра та, кинора та пулчĕç. Галя — ял хĕр ачи, кун пек вырансенче пулса курман тесен те юрать. Зоя аппăшĕ ăна «ирĕке» пит ямасть.

Хĕре Коля патне темле асамлă, халиччен туйман вăй туртать. Çамрăклăх мар-и. Урамра — çуркунне. Акă вĕсем пысăк чиркӳ вырнаçнă тĕле çаврăнса çитрĕç. Урисем хăйсем тенĕ пек илсе килчĕç вĕсене чиркӳ патне.

— Атя шала кĕрер. Эпĕ халиччен пĕрре те чиркӳре пулса курман, — тилмĕрсе пăхрĕ каччă хĕре куçран.

— Атя кĕретпĕр. Эпĕ те пĕрре те пулман кунта.

— Сана шыва кĕртнĕ-и?

— Кĕртнĕ. Анчах эпĕ ун чухне пĕр çулта çеç пулнă. Сана?

— Мана та кĕртнĕ. Эпĕ те хама шыва кĕртнине астумастăп.

Иккĕшĕ те хăйсем çине виçшер хут хĕрес хучĕç те хумханса чиркӳ алăкне уçрĕç.

— Иртĕр, иртĕр, çамрăксем. Питĕ хавас çамрăк Турă чурисене çак хăватлă çуртра курма. Мĕн сăлтавпа Турă çавăрса килчĕ сире? Мĕн каламалли пур сирĕн Аслă Аттене? — ытарлăн кĕтсе илчĕ вĕсене пачăшкă.

— Эпир... эпир венчете тăрасшăн, — персе ячĕ Коля Гальăна аллинчен çатăрласа тытса.

Хĕре чиркӳ урайĕ çумне пăталаса хунă тейĕн. Чĕлхи те çĕтрĕ, вăл нимĕн те калаймасть. Пуçне пĕкнĕ.

— Эсир аванах шухăшланă-и кун пирки? Турă умĕнче пысăк яваплăх ку.

— Шутланă, — çирĕппĕн каласа хучĕ каччă.

— Эсĕ вара, ачам? — Галя çине шăтарасла пăхрĕ пачăшкă. — Хĕр нимĕн те чĕнмерĕ. — Хирĕçлемест пулсан — килĕшет. Патшалăх саккунĕпе килĕшӳллĕн манăн сиртен паспорт ыйтмалла — пуçлăхсем пĕлсен сирĕн пурнăçăрта пысăк йывăрлăхсем сиксе тухма пултараççĕ. Анчах Турă умĕнче паспорт кирлĕ мар...

— ...Паянтан эсир Турă умĕнче упăшкипе арăмĕ. Венчет çĕррисем пур-и сирĕн?

— Эпир — студентсем. Пирĕн укçа çук-ха хальлĕхе. Каярахпа пулаççĕ çĕрĕсем, — хуравларĕ Коля.

Тĕлĕкри пек туять Галя хăйне. Мĕн туса хучĕç вĕсем?!

— Атя Зойăна каламастпăр венчете тăнă пирки. Никама та шарламастпăр, — тилмĕрсе

пăхрĕ Галя. — Нимĕнле арăмĕпе упăшки те мар эпир. Çырăнман. Туй та пулман пирĕн.

— Каламăпăр вара. Практика вĕçленсен çырăнма та, туй тума та пулать.

— Эсĕ те практикăна каятăн-и? Зойăна та таçта яраççĕ. Эппин, пĕрле каятăр пуль? — хĕрĕн чĕри çак вăхăтра чиксе ыратса илчĕ.

— Галя, мĕн калаçатăн эсĕ? Зойăпа пирĕн хушăра туслăхсăр пуçне нимĕн те çук. Эпир — юлташсем. Юлташсе-е-ем, ăнлан çакна. Халĕ ак тăванлантăмăр та пулас. Эсĕ ман арăм-çке Турă умĕнче.

Куна илтсен Галя тарăхса кайрĕ.

— Ан сӳпĕлтет! Вĕçерт алла! Мĕнле арăм?! Мана арăм пулма иртерех-ха! Çанă тавăрса вĕренмелле малтан! — хĕр карт туртăнса вĕçерĕнчĕ те хула урамĕпе чупса кайрĕ.

— Галя! Галя! — кăшкăрса чупрĕ хыçалтан Коля. — Эх! Мĕн туса хутăм эпĕ!..

Çакăн хыççăн чылай вăхăт пĕр-пĕринпе тĕл пулмарĕç вĕсем. Коля практикăран Галя патне тăтăшах çырусем çырчĕ. Анчах та хĕр хурав ямарĕ.

Алла диплом илсенех каччă Гальăсен ялне вĕçтерчĕ. Шăпах студентсен çуллахи каникул пуçланнăччĕ ун чух.

— Венчет çĕрри илсе килтĕм эпĕ, Галя, чăнчăнах арăм пулма ыйтатăп сана. Атя аçу-аннӳне пĕлтерер те туя хатĕрленме пуçлар. Мана Инçет Хĕвел тухăçне лаборатори ертӳçи пулса ĕçлеме яраççĕ. Ял хуçалăх институтĕ те пур унта. Эсĕ виççĕмĕш курса унта куçса вĕренме пуçлатăн.

— Çук, эпĕ Зоя сана юратнине пĕлетĕп. Тата эпир венчете тăнине пирĕнсĕр пуçне урăх никам та пĕлмест.

— Турӑ пӗлет-çке. Эпир Турӑ умӗнче мӑшăрланнă.

— Турӑ каçартăр пире. Эпӗ урăх качча саватăп.

— Ан суй, Галя, санăн нимӗнле каччă та çук.

— Çук тăк — пулать, — куççуль витӗр каларӗ хӗр.

— Эсӗ мана кăмăлланине туятăп-çке эпӗ.

— Кăмăллани — юратни мар. Эпӗ сана халӗ те кăмăллатăп. Анчах тăван аппа çулӗ урлă каçмастăп. Каçма-астăпа-а-ах.

— Акă венчет çӗрри сана пулать, — ылтăн çӗрре каччă Галя кӗсйине хучӗ те аслă çулпа чупнă пекех васкарӗ...

Галя пичӗ тăрăх юхакан тăварлă куççульне сăмса тутрипе типӗтрӗ...

* * *

— Çӗрри ăçта вара халь? Сан аллунта çӗрӗ куратăп эпӗ, — тӗлӗнсе ыйтрӗ Оля.

— Ку çӗрӗ — упăшкапа çырăннă чухнехи. Венчет çӗрри килте, турăш хыçӗнче, упранать. Ун пирки паян кунччен те никам та пӗлмест. Унтанпа Кольăна курман эп. Ун çинчен пӗр хыпар та илтмен. Виçӗ ача ӳстертӗмӗр мăшăрпа. Çапла, мăшăрпа темелле пуль. Турӑ умӗнче Петӗр ман упăшка мар. Эпӗ унăн арăмӗ мар. Эппин, камсем-ши эпир? Турӑ умӗнче Коля ман мăшăр-çке. Тен, çавăнпах пуль ачамсем чирлешкерех. Пурнăçӗсем те пит ăнсах пымаççӗ. Аслă хӗрӗм ачаранах нерв чирӗпе асапланать. Турӑ каçармасть пуль мана çамрăклăхра шухăшламасăр тунă утăмшăн. Чиркӗве кайса пачăшкăпа калаçмалла пуль, — вӗçлерӗ Галя хăйӗн сăмахне.

## ИКĔ ÇЕМЬЕ — ИКĔ ШĂПА

Маша вăранчĕ те яланхи йăлипе чӳрече каррине сирсе урамалла тинкерчĕ. Пĕр чӳречере те çутă асăрхамарĕ вăл. Аякра-аякра, хĕвел тухăçĕнче, ерипен-ерипен çĕнĕ кун вăранать. Упăшкипе икĕ ывăлĕ лăпкăн çывăраççĕ. Кĕçĕнни ачашшăн кулкаласа илет. Ырă тĕлĕк курать пулас. Мĕнле лаша пуласси тихаран паллă теççĕ. Питĕ ырă кăмăллă Петюк. Нихăçан та кĕçĕн ывăлĕ тӳрккес пулнине асăрхаман Маша.

Хĕрарăм ирхи апат хатĕрлеме пуçларĕ. Çĕр улми шуратса турарĕ. Чăх ашне çуса вакларĕ. Çĕр улмипе аша, кишĕрпе сухана веçех пĕрле чугун савăта ячĕ. Газ çулăмне кăшт чакарчĕ те урама тухрĕ.

Тĕлĕнмелле лăпкă ир. Лĕм çил те çук. Маша хусканусем тума пуçларĕ. Юратать вăл çĕнĕ куна зарядкăран пуçлама. Акă ирсерен пĕрле чупакан вырăс хĕрарăмĕн сасси илтĕнчĕ:

— Чее, чее, Маша! Манран хитререх кĕлеткеллĕ пуласшăн.

— Сан пек хитре кĕлеткеллĕ пуласси иртрĕ пуль ман. Кĕлеткӳ — авалахи грексен тăмран ăсталанă савăчĕ пек. Чăн-чăн амфора. Сăнпитӳнтен хăть икона çыр.

— Мухта-мухта! Кĕлетке — амфора, сăнпит — Таса Турă Амăшĕн. Пĕр-пĕр курава анчах вырнаçтармалла пуль, — йӳçенчĕклĕн кулчĕ Ирина. — Мĕн усси ман кĕлеткепе сăн-питрен? Санăн ав икĕ тĕрекӳ, икĕ çутă çăлтăру пурнăçна çутатаççĕ. — Хĕрарăм пĕр вăхăт шăпланса тухăça тинкерчĕ. Унтан ассăн сывласа илчĕ те малалла калаçрĕ: — Хамах айăплă. Çам-

рӑк чухне ирӗклӗрех пурнӑҫпа пурӑнас килетчӗ. Упӑшкапа пӗрлешнӗ чухне эпир студентсемччӗ. Йывӑрлӑхран хӑрарӑмӑр пулас. Ҫие юлсан хырӑмран тасалма шутларӑм. Упӑшка та хирӗҫ пулмарӗ. Ах, анчах! Тӑр ухмахсем пулнӑ мар-и! — кӑшкӑрнӑ пекех каларӗ Ирина пырне капланса килнӗ ыратӑвне кусҫуль витӗр ҫӑтса. Хӗрарӑм шӑпланчӗ те яланхи ҫулпа малалла чупса кайрӗ. Маша та унран юлмарӗ.

Малтанах вӗсем вунӑ-вун икӗ хӗрарӑм пӗрле чупатчӗҫ. Вӑхӑт иртнӗҫем иккӗн ҫеҫ юлчӗҫ. «Ак курса тӑр, пурте пӑрахаҫҫӗ. Эсӗ пӗчченех юлатӑн ҫухрӑмсене шутлама», — ытарлӑн кулса каланӑччӗ Машӑна упӑшки.

Тӗрӗсех пулчӗҫ Миша сӑмахӗсем. Пӗлет арҫын арӑмӗн ҫирӗп кӑмӑлне. Вӑл лартнӑ тӗллеврен пӑрӑнни сайра пулнӑ.

Акӑ хӗрарӑмсем аслӑ ҫул ҫине тухрӗҫ. Хальлӗхе унта машинӑсем ӗрӗхтермеҫҫӗ-ха.

— Побежали дуры-лошади! — илтӗнчӗ хыҫра урмӑшнӑ сасӑ.

Нимӗн те шарламарӗҫ чупакансем. Ку — ирпе ирех мухмӑр чӗртмелли шырама тухнӑ вырӑс хӗрарӑмӗ пулчӗ. Эх, ҫав эрех! Мӗн чул ҫын сывлӑхне пӗтермест-ши? Мӗн чул пурнӑҫа аркатмасть-ши? Ҫак хӗрарӑм та ҫурт-йӗрсӗр тӑрса юлчӗ. Малтан виҫӗ пӳлӗмлӗ хваттерне пӗр пӳлӗмлипе улӑштарчӗ. Хушса панӑ укҫине самантрах салатса ячӗҫ вӗсем. Икӗ хӗрӗ те амӑшӗ ҫулӗпех пыраҫҫӗ. Пӗр вырӑнта тӗпленсе ӗҫлени ҫук. Пирус паккаҫҫӗ, эрех лӗрккеҫҫӗ. Халь кафесем ҫӗрӗпех ӗҫлеҫҫӗ-ҫке. Янттине юратакансkерсем унтан тухма та пӗлмеҫҫӗ. Нумаях пулмасть пӗр пӳлӗмлӗ хваттерне те сутса ячӗҫ вӗсем, пӗр хӑйсем пекех ӗҫекен пӗччен арҫын

патне пурăнма куçрĕç. «Турă каçартăрах. Çынсем çинчен ырă мар шухăшлани те пархатарлă мар», — чупнă май пăшăлтатрĕ Маша.

Ахăр самана çитрĕ пулас. Çамрăксем хушшинче ырă тĕллевсемпе малалла ăнтăлакансем сахалланса пыраççĕ. Телевидени те, хаçат-журнал та пĕр саслăн ирĕклĕ пурнăçа мухтаççĕ, пуянсене, намăссăрлăха, киревсĕрлĕхе иртен пуçласа тепĕр ирччен рекламăлаççĕ. Çынна вĕлерни, çаратни, проституци, наркомани кино-спектакльте тĕп сăнара çаврăнчĕç. Ĕç çынни, тирпейлĕ, çынлăхне çухатман халăх пурнăçра çук пекех. Ав пĕрне ĕнер телевизорпа кăтартрĕç. Вăл, «перестройка» текен тапхăрта влаç тытăмĕнче ĕçленĕскер, ял халăхĕ çинчен йĕрĕнсе те йĕкĕлтесе калаçрĕ.

«Халĕ пуласлăх нимле дядя Ваççăран та килмест. Саккунсем вĕсем ĕç çыннисем валли. Вĕсем пăхăнччăр саккунсене», — павраре хайхискер хăйĕн сысна сăмси евĕр хулăн тутине елпĕрсе, шакла пуçне пуклак пӳрнисемпе сăтăркаласа. Кам çăкăрне çисе пурăнать-ши çав çын?!

Киле çаврăнса çитнĕ çĕре упăшкипе ачисем вăранса çăвăнма ĕлкĕрнĕччĕ ĕнтĕ. Апат та хатĕр.

— Ну, мĕнле хыпарсем таврара? — ытарлăн йăл кулчĕ упăшки Машăн йĕпеннĕ мулаххайĕпе перчеткийĕсене илсе хунă май.

— Хыпарсем итлесе çӳремерĕмĕр эпир. Ӳсĕр Дашăсăр пуçне никамах та тĕл пулмарăмăр.

—Васкăр, васкăр, пепкемсем. Пирĕн те ĕçе васкамалла, — асăрхаттарчĕ çав вăхăтрах ашшĕ ывăлĕсене. — Петюка садике ăсатăп, Ваççука — шкула.

— Эп çимесĕр каймастăп, — васкаса кĕрсе ларчĕ сĕтел хушшине Петюк. Вăл хурлăхан варенийĕ тултарнă савăта хăй патнелле туртрĕ те пысăк кашăкпа ăсса илчĕ. — Витаминсем çимелле малтан, — васка-васка хыпрĕ хайхи çăра, техĕмлĕ варение.

— Кам выçă варла варени çиет тет? — пырса тĕкрĕ çурăмĕнчен пиччĕшĕ.

— Кам, кам? Эпĕ. Мана садикре кам çавăн чухлĕ варени парать тет. Хыт кукарсем унта. Пылак нумай çимелле маррине асăрхаттарсах тăраççĕ.

— Тĕрĕсех калаççĕ, — кулчĕ амăшĕ. — Варени çинипех пысăк пулаймăн. Кăштах та пулин яшка çи.

— Яшкине Ваççук çитĕр. Вăл икĕ çул аслăрах. Хăй пурпĕрех манран пĕр пӳрне чухлĕ çех пысăкрах.

Ним те шарламарĕ пиччĕшĕ, васка-васка апатланчĕ те шкула пуçтарăнма пуçларĕ.

— Мана илме Ваççук та, анне те ан пырăр паян, — асăрхаттарчĕ кĕçĕн ывăлĕ кĕрĕкне тăхăннă май. Хăй ниепле те сылтăм çаннине лекеймест. — Мана илме атте пытăр. Атте, пулăш-ха мана.

Ваççук Петюка пулăшма васкарĕ.

— Кай-ха кунтан. Ялан хăвна асли пек кăтартма ан тăрăш, — тĕртсе ячĕ вăл пиччĕшне. — Атте, мана илме пырасси çинчен ан ман. Санăн уроксем хатĕрлеме те васкамалла мар, апат пĕçересси те çук. Тăраниччενех сăрт çинчен ярăнăп.

— Юрать, командир! — çупăрларĕ ашшĕ.

Пурте кула-кула тухса кайрĕç. Яланах çапла. Çемйине ăсатса ярать те Маша пĕр кана ди-

ван çинче ларать. Унтан салтак пек сиксе тăрса кил-çурта тирпей кĕртмеваскать. Ĕç вырăнĕ инçех мар унăн. Ик çĕр метр чухлĕ çеç утмалла. Пĕр кантурта шут ĕçĕнче тăрăшать хĕрарăм. Çамрăкран хăнăхнă йăлине çирĕп тытса пырать.

«Ĕç вырăнĕ ĕç кунĕ пуçланиччен вунă-вун пилĕк минут маларах хатĕр пулмалла», — асăрхаттарнăччĕ ăна ĕç биографийĕ пуçланас умĕн практика ертӳçи. Çакна лайăх астуса юлчĕ çивĕч ăслă, пур ырă хушăва та тимлекен хĕр.

Паян та ĕçе пуринчен малтан çитрĕ.

* * *

Çулталăк пуçламăшĕ. Пуç çĕклеми тăрăшать Маша. Бухгалтер ĕçне те, кассир тивĕçне те туса пыма тивет унăн. Отчетсене вăхăтра туса парайманнипе ĕç укçине те палăртнă кун параймарĕç. Тĕп бухгалтер патне тăруках пырса тĕкĕнеймĕн. Сайра пулать ун кăмăлĕ ырă. Питĕ сăрхăнтарса кăларать вăл кашни пуса алли витĕр. Калăн, çынсене ĕç укçине хăй шутĕнчен тӳлет.

Пĕррехинче пĕр хĕрарăм тӳсеймесĕр каласа хучĕ:

— Лидия Михайловна, эсир хăвăрăн вун пилĕк пин тенкĕ ĕç укçине сахал тесе шутлатăр, пирĕн икĕ пин тенкĕ те нумай пек туйăнать сире. Ытларах тытăнса тăтăр пулас кунта. Эсир ĕçлесе пăхман организаци çукпа пĕрех салара.

Черетре тăракан халăх кĕр-р кĕрлесе кайрĕ. Тахăшĕ чăхлатса кулни илтĕнчĕ.

— Маттур! — мухтарĕ пĕр çулланнă арçын. — Ан хăра, сана вăл нимĕн те тăваймасть. Икĕ

пин тенкĕшĕн ун хыçĕнчен тасатакансем сайра пулаççĕ.

— Ăçта кайса кĕрĕн? Вĕренмен çынна кам сума сăвать, — тавăрчĕ хĕрарăм алне сулса.

Ĕçлекенсен кăмăлсăрлăхне ытларах Машăн тӳсме тивет. Вăхăт-вăхăт çилли те капланса килет унăн. «Укçа çук. Михĕпех киле илсе кайрăм», — тесе лаплаттарса хурас килет, анчах та хăйне тытса чарать. Кăра çиллине кăтартса ăçтан ĕç кăларайăн? Халăх хăй ĕçлесе илнĕ, хăйне тивĕçекен укçа-тенке ыйтать. Кашнийĕнех çемье, ача-пăча. Хаксем те, коммуналлă тӳлевсем те куç хупса иличчен çӳлелле хăпарса каяççĕ.

— Мария Ивановна, паян ĕç укçи илеетпĕрши? — илтĕнчĕ хыçра хăюсăр сасă.

Вахтер пулса ĕçлекен Маюк аппа иккен. Çынна шанса пăхаççĕ куçĕсем. Аллисем типсе куштăрканă. Пичĕ пĕркеленчĕксемпе витĕннĕ. Чиксе ыратса кайрĕ çамрăк бухгалтер чĕри. Пĕлет Маша çак йăваш, хăй ĕçне чун-чĕререн пурнăçлакан хĕрарăм икĕ ачине пĕччен пăхса ӳстернине. Пилĕк çул каялла упăшки пурнăçран вăхăтсăр уйрăлса кайрĕ. Хĕрĕ кăçал университета вĕренме кĕчĕ. Ылтăн медале тивĕçнĕскер хăй пĕлĕвне экзаменра та çирĕплетнĕ теççĕ. Турă шеллерĕ пуль мĕскĕн çемьене. Ывăлĕ шкулта «пиллĕксемпе» çеç вĕренет, амăшне кил-çуртра нумай пулăшать. Çуртра арçын пулмасан та выльăх-чĕрлĕх тытаççĕ.

— Кассăра кăштах укçа пур. Сире ĕç укçипе тивĕçтерме çитет, — сăпайлăн сăмах хушрĕ Маша, хăй çавăнтах шутларĕ: «Юлашки укçана паратăп-çке. Пуçлăхпа тĕп бухгалтертан лекмĕ-ши? Пуçлăхĕ ырăскер-ха, ăнланакан

çын. Леш эсремечĕ вара тимĕр тылă пекех тылласа пăрахма пултарать. Хăйĕн çемйи çук та, çын нушине ăнланма тăрăшмасть вăл. Ĕç вырăнĕнчен хăпма васкамасть. Жандарм пекех сăнаса тăрать бухгалтери ĕçченĕсене».

— Эй, Турă пулăштăрах, йăмăкăм, сана. Мĕнпе ăсатнă пулăттăм-ши ыран хĕрĕме? Хĕллехи каникултаччĕ-ха вăл, — пуплерĕ хĕрарăм укçине майласа чикнĕ май.

— Лайăхах вĕçлерĕ пуль семестра?

— Лайăхах, лайăхах. Турă пăрахмасть пире, тăлăхсене. «Пиллĕк» паллăпа анчах вĕренет хĕрĕм. Ӳстерсе тӳлекен стипенди илет.

Тав тăва-тăва тухса кайрĕ Маюк аппа. Машăн чĕри каллех чиксе ыратрĕ. Хăйĕн ачалăхĕ куç умне тухса тăчĕ.

...Çуллахи лăпкă кун. Пӳртре те, пăлтăрта та, урамра та лăк тулли халăх. Пысăк пӳлĕм варринче — икĕ пукан çине вырнаçтарнă пысăк тупăк. Тупăкра хăнана кайма тумланнă пек ашшĕ выртать. Пĕчĕк хĕр ача тĕлĕнсе пăхать ун çине. Ма унта кĕрсе выртнă-ха ашшĕ? Ун çумĕнче пукан çинче амăшĕ ларать. Вăл хура кĕпепе. Хура тутăр çыхнă. Пĕрмай ĕсĕклет хăй.

— Атте! Атте! Тăр! Эсир хăнана кайма пуçтарăннă-и аннепе? Анне, эсĕ мĕншĕн макăратăн? Атте, тăр тетĕп! Эпĕ те пыратăп сирĕнпе пĕрле!

Амăшĕ пуçне çĕклерĕ, тĕлĕннĕ пек унта-кунта пăхкаларĕ. Унтан пĕчĕк хĕрне ыталаса илчĕ те тата хытăрах макăрма пуçларĕ. Кĕтесе тĕршĕннĕ аппăшĕпе пиччĕшĕ амăшĕ патне ыткăнчĕç, ăна ыталаса ӳлесе макăрчĕç. Çакна курса пĕтĕм халăх макăрма пуçларĕ.

— Çук текех сирĕн аçăр, çук. Паянтан вăл пирĕнтен яланлăхах уйрăлса каять, — ĕсĕклерĕ амăшĕ.

— Ăçта каять? Ма каять? Ма эпир каймастпăр унпа?

— Вăл хăй ялне пурăнма куçать. Турă ялне, — ăнлантарчĕ ватă кинемей, кўршĕри карчăк...

Çапла Машăна тата унăн аппăшĕпе пиччĕшне амăшĕ пĕчченех пăхса ўстерчĕ, пурнăç çулĕ çине тăратрĕ. Пурте аслă пĕлў илчĕç ачисем.

Кĕсье телефонĕ сас пачĕ. Чĕмпĕрте пурăнакан аппăшĕ шăнкăравлать иккен. Хăнана чĕнет.

— Саша салтакран курма килчĕ. Лайăх енĕпе палăрнăшăн черетсĕр отпуска янă ăна, — савăнса пĕлтерчĕ тăванĕ.

— Пыратпăрах. Пурте пыратпăр Сашăна курма, — тараватлăн килĕшрĕ йăмăкĕ. «Ну Петюкпа Ваççук савăнаççĕ ĕнтĕ. Саша вĕсемшĕн чăн-чăн кумир-çке».

Ĕçрен питĕ хавхаланса таврăнчĕ хĕрарăм. Подъезд умĕнче ăна упăшкипе кĕçĕн ывăлĕ кĕтсе илчĕç. Петюк шур упа пекех. Калăн, пўрт умĕнчи юра веçех хăй çине купаланă.

— Шăнса пăсăлатăн-иç, — хыпăнса ўкрĕ амăшĕ. — Атьăр хăвăртрах киле.

— Чим-ха. Кăштах тасатам-ха çак упа çурине, — кулать ашшĕ.

— Аптрамасть, атте! Эс хăв та пĕртте манран кая мар. Шур упа пекех.

— Ăмăртрăр пулать апла?

— Ман кампа ăмăртас вара?! — подъезд алăкне шанлаттарса сиксе тухрĕ Ваççук.

— Эсĕ Хĕл Мучипе ăмăрт. Эпир пӳрте кĕретпĕр, — мăнаçлăн тавăрчĕ Петюк.

— Ан аташ-ха! Çĕнĕ çул хăçанах иртнĕ те, Хĕл Мучи кайнă ĕнтĕ кунтан.

— Хăвалаласа çит! — ахăлтатать Петюк. — Спортсмен-утюг! Сана кĕтет Устюг! Хĕл Мучийĕн керменĕ унта вырнаçнă тет. Паян пире воспитательница каласа пачĕ.

Маша пуçне çĕклерĕ те кӳршĕ подъезд умĕнче тăракан Иринăна курчĕ. Тĕмсĕлсе, тунсăхлăн сăнать хĕрарăм туслă, телейлĕ çемьене. Икĕ куçĕ куççульпе тулнă.

— Эсир кĕрĕр-ха пӳрте. Чей вĕретме лартăр. Эпĕ кăштах Ваççукпа ăмăртам, — хушрĕ хĕрарăм.

— Есть! — аллине пуçĕ çумне яшт тытрĕ Петюк.

— Командир, мĕнле хушать, — кулчĕ ашшĕ.

— Уçă сывлăшпа сывлатăн-и? — пырса тăчĕ Маша тантăшĕ çумне.

— Сывлăшпа та, пурнăçпа та, — салхуллăн пуплерĕ Ирина. — Федора кĕтетĕп. Юлашки вăхăтра таврăнмасăр çӳрекен пулчĕ. Кил ăшши çитмест пуль ăна. Эрехпе те туслашсах пырать.

— Килет пуль-ха, таçтах каймĕ. Мĕнле ăшши çитмест пултăр? Сан кил-çуртра яланах тирпейлĕх хуçаланать. Апат-çимĕçĕ те сĕтел тулли. Леш, скатерть-самобранка, текенни пекех, — лăплантарасшăн пулчĕ Маша.

— Туятăп, тем çитмест Федора. Мĕн çитменнине те туятăп. Яланах ача-пăча вылянă çĕрте куратăп. Пӳрт умĕнче те, спорт площадкинче те шăпăрлансем тавра явкаланать. Пĕчĕккисене алла илет. Канфет-печенипе хăналать.

Ним хуравлама та пӗлмерӗ Маша. Хӑй илтнине тантӑшне каламан та, каласа парас та ҫук. Суранлӑ чӗрене епле тата ытларах суранлатӑн. Пӗр хӗрарӑмпа ҫывӑхланнӑ теҫҫӗ Федора. Лешӗ упӑшкинчен уйӑрӑлнӑскер. Хӗр ача ӳсет унӑн. Иринӑпа танлашаймӗ вӑл хӗрарӑм. Ирина — Илем турри. Калаҫҫӗ ҫав вырӑссем: «Не родись красивой, а родись счастливой», — тесе. Илемпе телее ылмаштараймӑн.

— Мӗскер, Хӗл Мучине хӑваласа ҫитейрӗн-и? — ҫупӑрларӗ Маша хӑй ҫумне пырса тӑнӑ Ваҫҫука.

— Эпӗ пысӑкланнӑ ӗнтӗ. Мана улталаймӑн, — кулать ывӑлӗ. — Ҫӗнӗ ҫулта чӑрӑш айне кам парне хунине те пӗлетӗп. Эпӗ Юрпикене «ӳсме» пулӑшрӑм. Атту вӑл кӑштах пӗчӗкленнӗччӗ.

— Эсир ҫухалман-и унта?! — пуҫне форточкӑран кӑларчӗ ашшӗ.

* * *

Пайтах тӑчӗ подъезд умӗнче Ирина. Унталла-кунталла уткаларӗ. Кӗтсе илеймерӗ упӑшкине. Апатланмасӑрах, салтӑнмасӑрах диван ҫине выртрӗ. Икӗ аллине пуҫ айне хурса мӑччаналла тинкерчӗ.

«Годы — это тонкие струны. Только тронешь — запоет струна», — аса килчӗҫ юрӑри сӑмахсем...

Ирина вырӑс салинче сумлӑ ҫемьере ҫуралса ӳсрӗ. Ашшӗ колхоз председателӗ пулса ӗҫлетчӗ, амӑшӗ шкулта вырӑс чӗлхи вӗрентетчӗ. Пӗртен-пӗр хӗрӗшӗн нимӗн те шеллеместчӗҫ ашшӗпе амӑшӗ. Ҫемьере мӗншӗн пӗр пепке анчах пулнӑ пирки Ирина нихӑҫан та кӑсӑк-

ланман. Амăшĕнчен те, ашшĕнчен те кулянса калаçнине илтмен. Тулăх пурнăç, халăх хисепĕ хăй ĕçне тунă-тунах. Мăн кăмăллăрах ӳссе çитĕнчĕ хĕр ача. Пăхса ытармалла марскер пĕр çулхи каччăсем çине пăхмастчĕ. Аслăрах çулхисем килĕшетчĕç ăна. Анчах та хăйне йĕркеллĕ тытатчĕ пике, мораль тенине çирĕп пăхăнатчĕ. Шкула «пиллĕк» паллăсемпе пĕтерчĕ. Медицина институтне вĕренме кĕчĕ. Çавăнта паллашрĕ вăл пулас упăшкипе Федорпа. Çӳллĕ, яштака, салтак тивĕçне пурнăçланă каччă пĕрре курсах килĕшрĕ ăна. Улăм тĕслĕ кăпăшка çӳçĕ, янкăр таса пĕлĕт пек пысăк кăвак куçĕ пике умĕнче ĕмĕтри яш тăнине çирĕплетрĕç. Миçе хутчен килмен-ши хĕр тĕлĕкне çакăн пек чипер яш.

Федор та Иринăна кăмăлларĕ пулас. Паллашсанах кино курма чĕнчĕ. Чĕлхи япшар, ăстăнĕ çивĕч.

Федя икĕ курс маларах вĕренетчĕ, хирург пулма ĕмĕтленетчĕ. Ирина ача-пăча тухтăрĕ пулма шутларĕ. Федя юлашки курсра вĕреннĕ чухне пĕрлешрĕç вĕсем. Аякри Украинăранччĕ каччă. Ял ачи.

Хулара туй кĕрлеттерчĕç çамрăксем. Федорăн ашшĕпе амăшĕ те, пĕр çĕршывран тепĕр çĕршыва куçас йывăрлăхсене çĕнтерсе туя килсе çитрĕç. Мĕн каламалли, Совет Союзне пайласа янăранпа ют çĕрте пурăнаççĕ мар-и. Паян кунчченех асра Ирина хунямăшпе пĕрремĕш хут тĕл пулни. Еплерех пăралларĕç хĕрарăмăн çивĕч куçĕсем пулас кине. «Мĕнпе савăнтарăн? Мĕнле пурнăç хатĕрлетĕн ман ывăл валли?» — тенĕн ыйтуллăн пăхрĕç. Хуняшшĕ кăмăлĕ пачах урăхла.

«Аван, аван, — терĕ вăл Иринăна ачашшăн хулпуççийĕнчен лăпкаса. — Халĕ ĕнтĕ мăнуксем çинчен те ĕмĕтленме пулать».

Вĕсен ĕмĕтне тивĕçтереймерĕ кинĕ.

Иринăн ашшĕпе амăшĕ укçи-тенкине шеллемерĕç пĕртен-пĕр хĕрĕшĕн. Туй хыççăнах çамрăк çемье валли уйрăм хваттер тӳлесе илчĕç. Пуçланчĕ вара çĕнĕ пурнăç. Вĕренсе пĕтерсен Федьăна кӳршĕ районти больницăра ординатурăра малалла пĕлӳ пухма ячĕç. Кунсерен çамрăк арăмĕ патне таврăнчĕ арçын.

Пĕр каçхине Ирина упăшкине ăшĕнче пĕчĕк пепке тĕвĕленнине пĕлтерчĕ. Федор савăннине те, куляннине те кăтартмарĕ.

— Вăхăтсăртарах пулчĕ, — терĕ çех.

Çак сăмахсем «пулăшрĕç» те ĕнтĕ ăшри пепкине тĕп тума. Никампа та канашламарĕ Ирина. Ашшĕпе амăшне те нимĕн те каламарĕ.

— Паян аборта каятăп, — хумханнă сасăпа пĕлтерчĕ хĕрарăм савнă мăшăрне.

— Мĕнех, хăвăн кăмăлу, — лăпкăн тавăрчĕ упăшки.

Эх, çав вăхăтра мăшăрĕ тытса чарнă пулсан-и! Халĕ вĕсене вунă çулхи ывăл е хĕр савăнтарнă пулĕччĕ. Юратсах юратнă-ши ăна Федор? Юратнах пулсан хăйĕн пепкине çут тĕнчене килме çине тăнă пулĕччĕ.

Ирина сехет çине пăхса илчĕ. Кĕçех çур çĕр çитет. Чĕри туять: таврăнмасть паян киле Федор. Хваттерте шăп. Çак шăплăх чуна çӳçентерет. Урамра çил-тăман çĕкленнĕ пулас, вăхăт-вăхăт кантăкран пӳрт умĕнчи чие йывăççи тураттипе шаккаса сас парать. Эп те пĕччен теет пулас.

— Эсĕ пĕччен мар-çке, — пăшăлтатрĕ Ирина. — Сан çумăнта мĕн чул турат. Эпĕ вара хăр тăлăх.

Иринăн ашшĕпе амăшĕ пĕрин хыççăн тепри пурнăçран уйрăлса кайрĕç. Амăшĕ мĕн астăвассах сывлăхран айвантарахчĕ. Ашшĕне инфаркт çапса пăрахрĕ. Пĕр-пĕринпе питĕ килĕштерсе пурăнатчĕç.

Ирина çĕрĕпе лĕм куç хупмарĕ тесен те йăнăш пулмĕ. Ирхине те апатланмарĕ: пĕр курка чей ĕçрĕ те каçхине çуса тултарнă кăпăшка юра аша-аша ĕçеваскарĕ. Ирхинехи чупăва та пурнăçламарĕ вăл паян.

Ача-пăча тухтăрĕ пулса ĕçлекен Иринăн кунĕпех ачасемпе пулма тивет. Пĕлинччĕ çав пепкесемпе вĕсен ашшĕ-амăшĕсем тухтăрăн чĕри епле чиксе ыратнине. Пĕтĕм çепĕçлĕхне, ырă кăмăлне парать вĕсене хĕрарăм.

Алăк хуллен уçăлчĕ те, пӳлĕме пĕр утмăлалла çывхаракан япăхрах тумланнă хĕрарăмпа виçĕ-тăватă çулхи хĕр ача кĕрсе тăчĕç. Çи-пуçĕ пуян пулмасан та таса, типтерлĕ. Çамрăк хĕрарăма курсан хĕр ача пысăк кăвак куçĕсене мăчлаттарса йăл-л кулчĕ.

— Анне! — терĕ вăл тухтăр енне пĕчĕк кăпăшка аллине тăсса.

Кинемейĕн куçĕсем шывланчĕç. Вăл тухтăр çине айăплăн пăхрĕ те унăн куçĕсем те куççульпе тулнине асăрхарĕ.

— Аннӳ мар вăл. Тухтăр аппу, — çупăрларĕ хĕрарăм хĕр ачана.

— Тухтăр анне! — каллех аллисене тăсрĕ хĕр ача.

Ирина пĕтĕм чун хавалĕпе ыткăнчĕ хĕр ача патне. Ăна йăтса илчĕ те хăй çумне хыттăн

чăмăртарĕ, çепĕççĕн пит çăмартинчен чуптурĕ.

— Питĕ тунсăхлать амăшĕшĕн. Хăр тăлăха тăрса юлчĕ мăнукăм. Сарăмсăр çĕре кĕчĕç хĕрĕмпе упăшки.

Хĕр ачана ача çуртне вырнаçтарма справка илме килнĕ иккен вĕсем.

— Питĕ шел-çке. Опекун пулса хăйсен çемйине илес текен тăванăрсем çук-им?

— Çук çав. Хам та пĕччен ӳсрĕм. Ывăлăн хăйĕн виçĕ ача. Вăл хирĕç мар та, арăмĕ килĕшмест. Мана çулсем нумай тесе опекун тума килĕшмеççĕ. Сывлăхăм та хавшак тата. Юн пусăмĕ пысăккипе нушаланатăп.

Çирĕп сывлăхлă хĕр ача. Сумлă çемьерен иккен. Амăшĕ учительница, ашшĕ инженер пулса ĕçленĕ. Çул çинче аварие лекнĕ...

Ирина куçне хупрĕ те хăйсен виçĕ пӳлĕмлĕ, хăтлă хваттерĕнче пӳлĕмрен пӳлĕме чупакан сарă çӳçлĕ, пысăк кăвак куçлă хĕр ачана курчĕ. Вăл ассăн сывласа илчĕ те справка çырма пуçларĕ.

Хĕрарăмпа ача тухса кайсан Ирина хăйĕн блокночĕ çине вĕсен адресне çырса хучĕ. Темĕнччен лăпланаймарĕ вăл. Ун куçĕ умĕнчен хĕр ача сăнарĕ каймарĕ.

Ĕç кунĕ вĕçленсе çитнĕ çĕре хĕрарăм хăй питĕ ывăнса çитнине туйрĕ. Шăм-шакĕ ыратать, пуçĕ çаврăнать. Такам çапса, хĕнесе пĕтернĕ тейĕн. Аран-аран утса çитрĕ хăйсен çурчĕ патне. Подъезд умĕнче Машăпа Мишăна тата вĕсен икĕ ывăлне курчĕ. Çитрĕ те йывăррăн ларчĕ çурт умĕнчи сак çине.

— Ирина аппа! Ирина аппа! — сиккелеççĕ ун тавра Петюкпа Ваççук.

Пĕлеççĕ шăпăрлансем: вĕсен валли унăн

сумкинче яланах тутлă çимĕç пур. Пĕрер мандарин тыттарчĕ вĕсене Ирина.

— Тем шурса кайнă эсĕ. Чирлемерĕн пуль те? — хыпăнса ыйтрĕ Маша.

— Çĕрĕпех куç хупман тесен те юрать. Федор киле çывăрма таврăнмарĕ.

Миша ывăлĕсене çавăтса сăрт еннелле утрĕ, хĕрарăмсене калаçма чăрмантарас мар терĕ.

— Маша, эпĕ ача усрама илесшĕн. Федорпа калаçса пăхма шутлатăп. Пирĕн çемье арканасси патне çитсе пырать пулас. Туятăп, Федорăн такам пур. Хăй мана яланах каçхи операцисем пирки ĕнентерет. Пирĕн хушăра арлă-арăмлă хутшăнусем те тахçантанпах çук.

— Калаçса пăх, тантăшăм, калаçса пăх. Тен, килĕрте ача-пăча сасси янăрама пуçласан пурнăçăр майлашса кайĕ. Енчен те хăвăн пепке çуралас пулсан?

— Эпĕ нумай сипленнĕ, Маша. Тĕрлĕ анализсем нумай тутарнă. Тухтăрсем «приговор» текеннине пилĕк çул каяллах çырса панă. Манăн ача пулмасть. Эпĕ пĕрремĕш хырăма пăрахнă.

— Эх, Ирина! Епле пысăк йăнăш тунă эсĕ. Хăв тухтăра вĕреннĕ-çке. Мĕнле шутламан пуласлăх çинчен?

— Чавса çывăх та — çыртма çук çав. Упăшка та чармарĕ. Паянах калаçатăп Федорпа. Тен, килĕшĕ. Пирĕн çемьере пепке çуккишĕн унăн айăпĕ те пур-çке.

Урамра темĕнччен уçăлса çӳрерĕç тантăшсем. Петюкпа Ваççука çак кăна кирлĕ те.

— Эй! Арçынсем! Сирĕн хырăмăрсем хыр тăрне хăпарман-и унта?! — кăшкăрса ыйтрĕ Маша.

— Тĕрĕс те, выçрăмăр, — ун патнелле утрĕç упăшкипе ачисем. Петюкпа Ваççук амăшĕн сумкине йатса хăпарма васкарĕç.

— Эй, ан ашкăнăр. Пылак çимĕçе апатланнă хыççăн çеç çимелле.

— Апатланас умĕн, апатланнă хыççăн та! — сиккелет Петюк.

* * *

Упăшки каллех çывăрма киле килмерĕ çĕркаç. Пăшăрханса ÿкнĕ Ирина кĕсье телефонĕпе шăнкăравларĕ те мăшăрĕн çиллĕрех сассине илтрĕ:

— Ăçта çÿретĕп?! Мана шырама эпĕ пĕчĕк ача мар. Аппендицитпа аптăранă хĕрарăма илсе килчĕç. Операци тумалла пулчĕ.

— Шăнкăравласа пĕлтерме пулмарĕ пуль çав? — хăйне лăпкăрах тытма тăрăшса калаçрĕ арăмĕ.

— Ĕç вăхăтĕнче кил çинчен шухăшлама хушмаççĕ — тимлĕхе чакарма пултарать, — пат татса хучĕ упăшки.

Çав вăхăтра трубкăра хĕрарăм сассисем илтĕнчĕç. Лах-лах! кулаççĕ хăйсем.

«Федор Иванович, нумай калаçатăр эсир! Васкăр! Атту эрех ăшне шăна урине чиксе кăларать!» — кăшкăрчĕ пĕри.

Ирина аллинчи телефон урайне лап ÿкрĕ.

Мĕншĕн пăсăлса кайрĕ-ха вĕсен пурнăçĕ? Юратсах пĕрлешрĕç-çке. Иккĕшĕ те тухтăрсем. Интересĕсем те, пурнăç тĕллевĕсем те пĕр пекрехчĕ вĕсен. Ирхине пĕрле пуçтарăнса ĕçе васкатчĕç. Килте ĕçри пулăмсене сÿтсе яватчĕç. Нимĕн те пытармастчĕ упăшки. Яланах пĕрпĕрне канаш пама тăрăшатчĕç.

Юлашки вăхăтра Федор куç умĕнчех улшăнса пычĕ. Каçхи дежурствăсем, операцисем нумайлана пуçларĕç. Канмалли кунсенче те сăлтав тупса тухса кайма тăрăшать. Час-часах эрех шăрши кĕре пуçларĕ упăшкинчен. Кăмăлĕ те кăраланчĕ. Ним çукранах харкашма пăхать. Ĕç патне аллисем пымаççĕ унăн. Урлă выртаканне тăрăх та çавăрса хумасть вăл. Пур ĕçе те пултарнă таран арăмĕ тăвать. «Мана йывăр йăтма, хура ĕç тума юрамасть. Эп — хирург. Манăн пӳрнесен туйăмлăхне упраса хăвармалла», — унăн яланхи сăмахĕ. «Эрехпе туслашни пӳрнесен туйăмлăхне, ăс-тăн çивĕчлĕхне ытларах мăкатать-çке», — ассăн сывласа каларĕ Ирина.

Упăшкине шанакан хĕрарăм ун хыççăн нихăçан та йĕрлесе çӳремест. Ачасен поликлиники тĕп больницăран аяккарах вырнаçнă. Вăл çырман сулахай енче ларать. Кирлех пулсан ыйтса пĕлме май пур паллах. Анчах та йĕрлесе çӳренипе çынна йĕркене кĕртейместĕн-çке.

Ĕнерхи пулăм аса килчĕ: Ирина лавккаран тухатчĕ. Кăмăл-туйăмĕ савăк. Çанталăкĕ те питĕ ырă. Кунсем вăрăмланнă май хĕвелĕ те çутăрах, унăн кулли те ачашрах.

— Феденька, ан асаплантар-ха мана каппа. Ах, пĕрре те уйрăлас килмест-çке санран. Суйлама вăхăт çитрĕ санăн. Е арăму, е эпĕ, — илтĕнчĕ аякрах та мар паллакă хĕрарăм сасси.

Ирина пуçне калаçакансем еннелле пăрчĕ те упăшкине тата унпа пĕрле ĕçлекен медсестрана курчĕ. Хĕрарăм лавкка кĕтессине тĕршĕнсе малалла сăнарĕ, лешсем ăна асăрхама-

рĕç. Федя медсестрана никамран именмесĕр ыталаса илчĕ те, иккĕшĕ урампа анаталла утрĕç.

— Çак кунсенче татса паратăп, чунăм, — илтĕнчĕ унăн Иринăн чун-чĕрине ватакан, çутă ĕмĕчĕсене татакан сасси...

Ăçта кайса кĕчĕ-ши çутă хĕвел? Нимĕн те курмасть хĕрарăм. Урисем утмаççĕ. Вăл вăйсăррăн лавкка çумне таянчĕ. Мĕн чухлĕ ларнăши çапла?

— Ирина Васильевна! Ирина Васильевна! — силлет такам хулпуççинчен. Хĕрарăм куçне уçрĕ те пĕр çамрăк арçынна курчĕ. Лешĕн куçĕсем шиклĕн пăхаççĕ. — Ирина Васильевна, мĕн пулнă сире? Эсир чирлесе ӳкнĕ пулас. «Васкавлă пулăшу» чĕнтерес пуль. Е хамăн машинăпа больницăна леçес мар-и?

— Чирлĕ мар эп, — асаплăн тухрĕç хĕрарăм сăмахĕсем. — Темшĕн вăй пĕтсе килчĕ. Машинăпа пулсан киле леçсе хăварăр-ха.

— Хаваспах, — çăмăллăн сывласа ячĕ арçын. — Эпĕ питĕ хăраса ӳкнĕччĕ. Пирĕн Айболитшăн Турăран сывлăх, тăнăçлăх ыйтмалла. Манăн пепкесем сире питĕ юратаççĕ, мăшăрăм та хисеплет.

«Чирлĕ çав, чирлĕ. Паянтан манăн чун сывалми чирлĕ», — пăшăлтатрĕ Иринăн самантрах типсе çуркаланса кайнă тути вĕри сывлăша сăрхăнтарса.

Упăшкине мĕн курни çинчен пĕлтерес мар тесе тĕв турĕ Ирина. Тен, ку вăхăтлăх йăпану анчах уншăн? Халĕ вĕт хĕрарăмĕсем те ним уяса тăмасăрах çынсен упăшкисем çумне çулăхаççĕ.

— А мĕн вара? Хĕрĕхри арçын — самый смак, — илтрĕ вăл пĕррехинче пĕрле ĕçлекен

çирĕм çулхи медсестраран. — Укçи пулсан, машини чупсан — о' кей! Арăм стена мар — подвинется.

Упăшкипе пĕрле ĕçлекен Аня нихăçан та йăл кулмасăр, сывлăх сунмасăр иртсе кайман. Вăл та çавăн пекех шутлать иккен.

— Пăрасшăн, пăрасшăн вăл мана упăшка çумĕнчен. Пуçĕпех туртса илесшĕн, — куççульпе çăвăнчĕ Ирина.

* * *

Паян Машăн канмалли кун. Вăл иртнĕ шăмат кун район администрацийĕнче дежурнăй пулнăччĕ те, çав куншăн паян канма пачĕç. Упăшкипе ачисене ăсатса ячĕ те килти ĕçсемпе тăрмашма пуçларĕ. Ĕçĕ хĕрарăмăн лавĕпех. Маша тирпее юратать. Паян та пуçĕпех ĕçе пуçăнчĕ.

«Тавах турра, — шутларĕ хĕрарăм. — Паян кунччен пурнăçăм йĕркеллех пулса пырать. Ачасем те тĕрĕс-тĕкелех. Сывлăх енчен аптрасах каймаççĕ. Садикра та, шкулта та вĕсем çинчен япăх каламаççĕ. Ваççук кăçал виççĕмĕш класа кайрĕ. «Пиллĕк» паллăсемпе çеç вĕренет. Асли юнтармăшрах. Характерне те кăтартма тăрăшать. Хăйĕн пек тăвасси пур. Вăхăтвăхăт кĕçĕннине кӳрентерме пăхать. Урамра, вăйăра вара хăйне кăтартма пĕлмест — куççуль юхтарса кĕни те пулкалать. Кунта Мишăпа иксĕмĕрĕн айăп та пур-тăр-ха. Маххă ан пар. Хирĕç тăр тесе вĕрентместпĕр ачасене. Апла тесен Петюк пачах урăхла. Хăй чĕрре кĕмест, кӳрентерекенсене парăнмасть. Сăмахпа намăслантарать тата. Улттăри ача тесе калаймăн».

Маша йăл кулса илчĕ. Урамри пĕр самант аса килчĕ ăна. Пĕр арçын ача хĕр ачана кӳрентерчĕ — юр çине тĕртсе ӳкерчĕ. Петя чупса пычĕ те кăкăрне каçăртса арçын ача умне тăчĕ:

— Эс ма хĕр ачапа çапăçатăн?! Арçын тăк — манпа çапăç! — терĕ. Ура хучĕ те юр ăшне чăмтарчĕ.

Лешĕ мĕкĕлт! турĕ. Тăраймасăр выртать. Петюк пычĕ те ал пачĕ:

— Тăр! Мир-и?! — терĕ.

— Мир! — хуравларĕ лешĕ сăмса витĕр.

Юрла, юрла ĕçлет Маша. Сасси çепĕç, янăравлă. Культура керменĕ çумĕнчи хора та çӳрет вăл. Пĕччен юрласа дипломсемпе парнесем те çĕнсе илнĕ.

Телефон сас пачĕ.

— Шкултан шăнкăравлатпăр. Ывăлăр шуса ӳксе урине ыраттарнă. Шкул тухтăрĕ «васкавлă пулăшу» машинипе больницăна илсе кайрĕ, — пĕлтерчĕ хыпăннă сасă.

Ним ыйтса та ĕлкĕреймерĕ Маша, трубкăна хучĕç.

Амăшĕ чĕри мар-и? Машăн ал-ури чĕтреме пуçларĕ. Ним тума пĕлмест хĕрарăм. Унталла-кунталла чупкалать хваттер тăрăх. Упăшкине шăнкăравлама телефон кĕпçине тытрĕ. Лере никам та сас памасть. Унтан вăй-халне пухрĕ те килти тумĕ çинех пальто уртса ячĕ. Кун пек чухне тата ал айĕнчи япаласемех таçта тарса çухалаççĕ. Пуçне калпак тăхăнмасăр, çара аллăн тухса чупрĕ. Юрать урамра çанталăкĕ сивех мар. Пуш уйăхĕ вĕçленсе пырать.

Больницăна чупса çитрĕ те ăçта каймаллине шутласа тăмарĕ, тӳрех поликлиникăна, хирург кабинетне, васкарĕ. Кабинет умĕнче пĕр

çын та çук. Ĕç кунĕ вĕçленсе пырать пулас. Яри уçса ячĕ те хĕрарăм алăка кабинета кĕчĕ.

— Федор Иванович! Эсир кунта-и?

Сас паракан пулмарĕ. Маша пуçне пăрчĕ те ширма хыçĕнче чуптуса тăракан хирургпа медсестрана курчĕ.

— Ах! — терĕ хĕрарăмĕ. Сассинче намăсланни, чун ыратăвĕ палăрчĕ.

Пуля пек тухса вирхĕнчĕ Маша кабинетран. Чупрĕ те чупрĕ хăй ăçталла кайнине ăнланмасăр. Çак вăхăтра вăл кунта мĕн сăлтавпа килнине те манса кайрĕ. Унтан тăп чарăнчĕ, пĕр вăхăт хушши вырăнтах тăпăртатса тăчĕ. Пуçне аллипе ярса тытса унталла-кунталла силлерĕ. Вара васкамасăр «Васкавлă пулăшу» уйрăмне утрĕ.

Алăка уçса ячĕ те кушетка çинче ларакан ывăлне курчĕ. Чупса пырса ыталарĕ, чуптурĕ.

Ваççука пĕрремĕш пулăшу панă ĕнтĕ. Сылтăм урине гипс лангеткипе çирĕплетнĕ.

— Ытлашши ан пăшăрханăр. Хуçăлман ури. Мăкăлтаннă çеç. Вунă кунран гипсне илетпĕр, — лăплантарчĕ хĕрарăм травматолог.

— Тавтапуçах сире.

— Пирĕн ĕçĕ çавă, — кулать тухтăр. — Ну, Ваççук, малашне асăрханулларах пулмалла. Халĕ сире «васкавлă пулăшу» машинипе киле ăсатăпăр.

Ывăлне килне леçсе хăварчĕ те Маша шкула васкарĕ. Ваççукăн сумки те, сылтăм уринчи пушмакĕ те шкултах юлнă. Утнăçемĕн унăн куççулĕ шăпăр-шăпăр юхрĕ. Юрать-ха паллакансем хирĕç пулмарĕç, атту тем шутланă пулĕччĕç. Ку куççульте ачине шеллени те, Иринăшăн хурланни те пĕрле пулчĕç пуль.

Эх, пурнăç! Паян-ыран мĕн кĕтмеллине те картаймастăн вĕт. Машăна упăшкипе мĕнле паллашни аса килчĕ.

Экономика институтне пĕтернĕ хыççăн çамрăк специалиста çак район центрне ĕçе ячĕç. Аван кĕтсе илчĕç Машăна унта. Ĕçе вырнаçсанах общежитинче пӳлĕм пачĕç. Иккĕн пурăнма тытăнчĕç вĕсем. Лида — вырăс хĕрĕ. Питĕ ăш пиллĕскер. Часах пĕр чĕлхе тупрĕç вĕсем. Маша институтра вĕреннĕ чухне вырăс хĕрĕсем чăвашсене тĕккелесе илнине нумай курнă та малтанласа ютшăнарах тытрĕ хăйне. Пурте пĕр пек мар иккен вырăссем те. Лида питĕ ăслă, çынна хисеплеме пĕлекен хĕр. Вăл та шут ĕçĕнче ĕçлет, анчах урăх организацире. Клуба тухкалама пуçларĕç. Икĕ чипер пикене вырăнти каччăсем часах асăрхарĕç. Мишăпа Сергей юлташсем иккен. Ташша чĕне пуçларĕç Машăпа Лидăна. Каччисем яштака, чиперскерсем. Иккĕшĕ те вырăс. Пĕр хуçалăхрах тăрăшаççĕ. Миша шофер пулса ĕçлет. Сергей, ял хуçалăх институтне пĕтернĕскер, механик лавне туртать.

Машăн ĕçтешĕсем вăл Мишăпа тĕл пулкаланине илтсен карах хирĕç пулчĕç.

— Мĕне кирлĕ сана çав çил хăван?! — сассине хăпартсах калаçрĕ тĕп бухгалтер Мария Петровна. — Вăл çыпăçман хĕр те юлман пуль пирĕн салара. Эрех-сăраран та пăрăнса иртмест. Юрĕ, пирус туртни темех мар-ха.

— Сан валли вĕреннĕ çын та тупăнĕ-ха, — пуплет тĕп экономист.

Маша нимех те чĕнмерĕ. «Мĕнле-ха капла? Питĕ йĕркеллĕ çын пек курăнать-çке Миша. Çак виçĕ уйăх хушшинче пĕрре сыпкалани

пулнăччĕ-ха. Ун чухне Маша хытарсах асăрхаттарчĕ:

— Пирĕн килте атте те, икĕ пичче те ĕçмеççĕ те, пирус та туртмаççĕ. Манăн эрехпе пирус çине аллергия.

Çапла каларĕ те пăрăнса утрĕ. Çав кунран Мишăран эрех шăрши кĕни пулман. Пĕр-ик эрнерен туртма та пăрахрĕ.

— Сан хуняма пуласси чăваш кинне кĕртесшĕн мар теççĕ, — каларĕ пĕррехинче Мая. Мая — чăваш хĕрарăмĕ. Упăшки те чăвашах. — Атя сана упăшкан шăллĕпе паллаштаратăп. Вăл икĕ çул каялла институт пĕтерчĕ. Авланман. Хулара пурăнать.

— Хăтана яман, лашине кӳлмен, çĕррине паман, — юрланă пек тăсарах тавăрчĕ Маша. — Турă мĕн çырни пулатех.

— Турри вăл хамăр сыхланнине те юрататъ.

Маша чĕрине канăçсăрлăх, ырату вырнаçрĕ. Хĕр каччăран пăрăнарах çӳреме пуçларĕ.

Çакăнпа Миша ниепле те килĕшмерĕ.

— Маша, чунăм, мĕн пулса иртет пирĕн хушăмăрта? Туятăп, эсĕ манран сивĕнме шутлатăн тем? Тĕрĕсех ăнланатăп-и?

— Тĕрĕсех, — пуçне пĕкрĕ хĕр. — Икĕ расна халăх ывăл-хĕрĕ икĕ çулпа çӳресен аванрах пулмалла.

— Маша, эсĕ хăш вăхăтра пурăнатăн? Халĕ миçемĕш ĕмĕр пырать? — ачашшăн ыталарĕ каччă хĕре. — Эпир икĕ çулпах çӳрĕпĕр, анчах алла-аллăн тытăнса, — йăл кулчĕ Миша. — Эсĕ сылтăм енчен утса пырăн. Тулькkăш мала та ан ирт, хыçала та ан юл. — Çапла каларĕ те Миша Машăна йăтса илсе çӳлелле çĕклерĕ. Вара пĕрремĕш хут хĕре чуптурĕ.

Çав-çавах хăпмарĕ вырăс каччи чăваш хĕрĕнчен. Каласа памарĕ хĕр Майăран мĕн илтнине. Амăшĕпе ывăлĕ хушшинче хирĕçӳ кăларасшăн пулмарĕ. Сала хĕрĕсем хăй çине шăл хăйранине сисмен мар-ха хĕр. Киревсĕр сăмахсем вĕçтернине те илтнĕ.

— Чăваш тункати, — каласа хунăччĕ пĕри пирус паклаттарнă май.

Пĕр каçхине клубра пысăк концерт пулмаллаччĕ. Машăпа Лида общежитирен иртерех тухрĕç те кăштах урамра уçăлса çӳрерĕç. Каçĕ ырă. Çу уйăхĕнче çуллахи пекех ăшă. Кайăксем ытарлăн юррисене шăратаççĕ. Икĕ ретпе ӳсекен çăкасен çулçисем юрату юрри юрланăн шĕпĕлтетеççĕ.

— Атьăр çав чăваш тункатине пăртак ăстăн кĕртсе илер! — илтĕнчĕ аякрах та мар.

Куç хупса иличчен Машăпа Лидăна пилĕкултă хĕр çавăрса илчĕç. Лидăна тĕксе ячĕç те Машăна «тăпăлтарма» пуçларĕç. Пĕри темле шĕвĕр япалана хĕр пичĕ патнелле тăсрĕ.

— Куçна шăтарса кăларатăп ак! Çын каччисем çине пăхаймăн текех! — çĕре лачлаттарса сурчĕ те аллине сулса ячĕ.

Маша пуçне пăрма ĕлкĕрчĕ. Мĕн пулса тухнă пулĕччĕ-ши Миша çитсе çапса ӳкермен пулсан?

— Ирсĕрсем! Тепре тĕкĕнсен йĕпе вырăн анчах юлать сиртен! — çĕкле-çĕкле ывăтрĕ тăрлавсăрсене каччă. — Пырăр, халĕ милицие евитлĕр. Ку шĕвĕр тимĕр манра юлать. Тепре тĕкĕнсен сирĕн куçăрсене чиксе шăтарма.

Çавăнтан вара хĕрсен çумне çулăхакан пулмарĕ. Икĕ хĕрпе икĕ каччă уйрăлми туссем пулса тăчĕç.

Паллашни çулталăк çитсен Лидăпа Сергей пĕрлешрĕç. Вĕсен туйĕнче Миша Машăна хăйне качча тухма ыйтрĕ. Ку хутĕнче те каламарĕ хĕр Мишăна унăн амăшĕ чăваш хĕрне хирĕç пулнине.

— Шухăшласа пăхма пулать, — куларах тавăрчĕ вăл.

Ку вăхăтра ĕнтĕ Миша ял хуçалăх институтне куçăмсăр майпа вĕренме кĕнĕччĕ, иккĕмĕш сессие кайма хатĕрленетчĕ. Лидăпа Сергей хулана куçса кайма шутларĕç.

Машăпа Миша та чаплă туй кĕрлеттерчĕç. Мăшăрĕ Машăн пӳлĕмне пурăнма куçрĕ. Ваççук çуралсан вĕсене çĕнĕ çуртра икĕ пӳлĕмлĕ хваттер пачĕç...

— Тавах Турра, — пăшăлтатрĕ Маша Ваççук япалисемпе киле утнă май. Хунямăшĕнчен халиччен пĕр сив сăмах илтмен. Çамрăксем те амăшне пăрахмаççĕ. Уйрăм çуртра пурăнаканскере пулăшу пĕрмаях кирлĕ. Мунча кĕме унта çӳреççĕ. Çамрăксем шывне йăтаççĕ, мунчине хутаççĕ. Маша хунямăшне хăй амăшне мунчара çунă пекех малтан милĕкпе «çапса ярать», унтан çуса тумлантарса кăларать.

— Ман кин ылтăн, — тесе калать тет хунямăшĕ яланах кӳршисене. — Хунямăшсене вырăс кинĕсем ун пек пăхнине хам пурнăçра курман.

Çитнĕ çĕре Ваççук лăпкăн мăшлатса çывăратчĕ. Акă упăшкипе Петюк та çитрĕç.

— Ваççук, кур, эпир садикра мĕнле хитре теттесем ăсталатпăр! — кăшкăрчĕ кĕçĕн ывăлĕ алăкранах.

Маша шĕвĕр пӳрнине çăварĕ патне тытрĕ:

— Ан шавла. Ваççукăн ури ыратать. Çывăрать вăл.

Упăшки салтăнмасăрах арçын ача патнелле ыткăнчĕ.

— Кам çывăрать пуль! Ваççук — çук! — кăшкăрса ячĕ аслă ывăлĕ. — Ман ура та ыратмасть халь. Эх, шел! Пĕр эрне шкула çӳрейместĕп.

— Апла пулсан эпĕ те садика каймастăп. Ваççука кичем пулать-çке, — сиккелерĕ Петюк.

— Эпĕ те ĕçе каймастăп. Манăн Ваççукпа килте ларма ирĕк пур. Акă хучĕ.

— Ура! Килте уяв! — алă çупрĕ Петюк.

— Атте, эсĕ те вăл хута ил.

— Ун пек саккун кăларман-ха, — кулчĕ ашшĕ.

* * *

Яланхи пекех подъезд умĕнче тĕл пулчĕç Машăпа Ирина.

— Ĕнер Федор килте çывăрчĕ. «Сана Маша ним те каласа памарĕ-и?» — тесе ыйтать. «Эпĕ ăна иртенпе курман», — терĕм. Урăх ним те шарламарĕ. Хăйне ним пулман пекех тыткалать. Паян эпĕ унпа ача усрава илесси пирки калаçса пăхасшăн.

Мĕн курнине каласа памарĕ Маша тантăшне. Хушша-хуппа кĕни сăваплă япала мар. Тен, майлашса кайĕ вĕсен пурнăçĕ.

— Калаçса пăх çав, — терĕ вăл, — мĕн чул тăлăх çĕр çинче атте-анне ăшшисĕр нуша курать.

— Манăн куç хывнă пепке те пур. Ашшĕпе амăшĕ сарăмсăр çĕре кĕнĕ. Вată асламăш-

не чирлӗ пирки опекун пулма ирӗк памаҫҫӗ.

Ирина виҫӗ уйӑх каялла поликлиникӑра пулнӑ хӗр ачапа асламӑшӗ ҫинчен каласа пачӗ.

Кунӗпех пӑлханса ҫӳрерӗ Ирина. Темле кӗтсе илӗ Федор арӑмӗн калаҫӑвне. Хӗрарӑм палланӑ ҫынсем урлӑ хӗр ачан шӑпипе кӑсӑклансах тӑчӗ. Ача ҫуртне ӑсатнӑ иккен Альӑна. Юрать-ха инҫех мар. Облаҫри пӗр ача ҫуртне вырнаҫтарнӑ ӑна.

«Васкамалла! Васкамалла!» — шаккать тӑнлавра. Альӑна аякка илсе кайма та пултараҫҫӗ. Халӗ ача усрава илес текенсем те сахал мар. Вӑхӑчӗ те васкамасть пек тата. Ниепле те ӗҫ кунӗ вӗҫленмест.

— Федор, паян ӗҫрен вӑхӑтра таврӑнма тӑрӑш-ха. Питӗ калаҫмалли пур, — шӑнкӑравларӗ хӗрарӑм упӑшкине.

— Мӗнле пулать, — типпӗн тавӑрчӗ лешӗ.

Вӑхӑтрах пулмасан та таврӑнчӗ вӑл киле.

Упӑшки килнӗ ҫӗре тутлӑ апат-ҫимӗҫ хатӗрлерӗ Ирина. Чаплӑ эрех те туянчӗ. Сӗтел майларӗ.

— Мӗнле уяв паян? Мана ҫӗнӗрен авлантармаҫҫӗ пулӗ те? — йӳҫенчӗклӗн кулчӗ арҫын.

Вырӑна хумарӗ арӑмӗ унӑн шӳтне, анчах та чӗри теме сиснӗн чиксе ыратрӗ. Апата ларчӗҫ. Пӗрер черкке эрех ӗҫсен Ирина майӗпен калаҫу пуҫларӗ. Хӑй йӑл кулса упӑшкине куҫран тинкерчӗ, вӗсенче ӗлӗкхи пек ялтӑркка ҫутӑ шырарӗ. Ачашлӑх, шанӑҫлӑх курасшӑн пулчӗ вӑл хаклӑ мӑшӑр куҫра. Анчах та пӑр пек сивӗ мӑшӑр куҫ тинкерчӗ ун ҫине. Ача усрава илесси пирки каласан Федор вӗри шывпа сапнӑн сиксе тӑчӗ.

— Мĕнле ача?! Кам ачи?! Мана çын ачи кирлĕ мар! Эсĕ манăн тăван ачана пăрахрăн! — кăшкăрчĕ вăл пысăк чăмăрĕпе сĕтеле çапса.

Ирина ним те чĕнмерĕ. Упăшки каллех кăшкăрма пуçларĕ:

— Манăн хамăн ача пулать! Хамăн! Тăван ача! Вăл тата виçĕ уйăхран çут тĕнчене килмелле!

Çакна илтсен Ирина çĕре тĕшĕрĕлсе анчĕ. Тăна кĕрсен хăй диван çинче выртнине курчĕ.

Ирхине Федор япалисене пуçтарма пуçларĕ.

— Эпĕ санран уйрăлатăп. Хваттер сана юлать. Мĕнпур пурлăх та. Машинăна илсе каятăп. — Çапла каларĕ те алăка шаплаттарса тухса кайрĕ.

Мĕн тумалла? Малалла мĕнле пурăнмалла?

— Илтнĕ эпĕ унăн урăх хĕрарăм пуррине. Анчах та сана хуйхăртас темен. Те тĕрĕс ку, те тĕрĕс мар сăмах, — каларĕ Маша. Больницăра курни çинчен шарламарĕ вăл.

Вăхăт шăвать, вăхăт иртет...

Пĕр ирхине ирех Ирина алăкран шаккарĕ.

— Хваттере пăхкаласа тăр-ха. Эпĕ отпуск илтĕм. Ача çуртне каятăп. Тен, кая юлман пульха, — хваттер уççине тыттарчĕ вăл.

— Васка çав, васка, — ыталарĕ тантăшне Маша. — Турă пулăштăрах сана. Ытла та черченкĕ-çке этем телейĕ. Хăçан, ăçта татăлассине те пĕлеймĕн.

Ирина хыççăн алăк хупăнсан турăш умне тăрса сăхсăхрĕ хĕрарăм.

— Упрасам телейĕме. Упрасам ывăлсене. Упрасам упăшкана, — пăшăлтатрĕ вăл...

## ПĔР ЧУСТАРАН

Шăкăл-шăкăл калаçса утаççĕ сала урамĕпе Ирина Петровнăпа мăшăрĕ. Çанталăк тĕлĕнмелле ырă. Вăхăт каç енне сулăннă пулин те хĕвел хăйĕн савăк, ачаш куллине сӳнтерменха. Вăл çак килĕшӳллĕ мăшăршăн савăннă пек йăл-ял çиçет. Аркадий Николаевич, çӳллĕ, кĕрнеклĕ, илемлĕ арçын, вăхăт-вăхăт пуçне мăшăрĕ енне тайса хăлхинчен темĕн пăшăлтатать. Ун сăмахĕсене итлесе Ирина Петровна янравлă куллипе ахăлтатса кулать.

— Хурах! Вĕлерет! Пулăшăр! — илтĕнчĕ çав вăхăтра инçех те мар.

Мăшăр çаврăнса пăхрĕ те аслă çулпа чупакан лăпăс-лăпăс тумланнă, çӳллех мар, çӳçне-пуçне сапаланă хĕрарăма курчĕ. Ун хыççăн «Беларусь» трактор çĕмĕрттерсе пырать. Акă вăл хĕрарăма хăваласа çитрĕ те чарăнчĕ. Ун ăшĕнчен çӳллех мар типшĕм арçын сиксе тухрĕ.

— Çынна ан култар-ха, Маюк. Атя лар çума, киле май кĕрлеттерер, — терĕ вăл палламан хĕрарăмпа арçын енне именерех пăхса.

— Киле-и?! Киле пымастăп вара! Эсĕ унта мана çыхса пăрахатăн! — кăшкăрашрĕ хĕрарăм урмăш сассипе. Вăл урă марри аякранах сисĕнет. Арçын алне сулчĕ те тракторĕ çине ларса малалла вĕçтерчĕ. Хĕрарăм урине тăр-рăс! тапрĕ, пĕтĕм вăйне пухса «Беларусь» хыççăн тапса сикрĕ. Акă вăл трактора хуса иртсе кайрĕ те икĕ аллине çунат пек сарса ун умне тăчĕ. Упăшки тракторне унталла-кунталла пăрасшăн — хĕрарăм çул çинчен каймасть.

— Тух трактор ăшĕнчен! Ӳсĕр пуçпа руль умне лармаççĕ! Милицие евитлетĕп! — çухăрашрĕ вăл.

Арçын тракторне чарчĕ те кабинăран тухса арăмĕ патнелле ыткăнчĕ. Лешĕ тем вăхăтра Ирина Петровна çумне пырса та тăчĕ.

— Чарăн ĕнтĕ. Тем сиксе тухас пур. Хĕнесе тăкĕ тата, — лăплантарма пăхрĕ хĕрарăма Ирина Петровна.

— Хуп çăварна! Сан ĕç çук пирĕн çумра. Мушепет мана çакăн пек пурнăç кăмăла каять пуль! — кăшкăрашрĕ хĕрарăм сурчăкне сирпĕтсе.

Ирина Петровна алне сулчĕ те тем аса илсе упăшки çине çиллессĕн пăхрĕ.

— Вăт сана çакăн пек арăм кирлĕччĕ, — терĕ.

Аркадий Николаевич мăшăрне мĕнле усал шăна çыртнине ăнланмасăр тĕлĕнсе пăхрĕ ун çине.

— Мĕн пирки калаçатăн, чунăм? Эс ун пек мар çав. Çавăнпа сана хампа вăтăр çул ытла пурăнтаратăп та. Эсĕ вĕт ман ылтăн çĕрĕ ăшне тăхăнтарнă хаклă чул, — савса çупăрларĕ вăл Ирина Петровнăна.

— Кам кама пурăнтарать-ха унта. Хă! Вăл мана пурăнтарать иккен. Кай-ха кунтан, идиот! — персе ячĕ вăл пĕр шутламан çĕртен. Хăй, темрен хăранă пек, йĕри-тавра сăнарĕ. Ăçтан тухса кайрĕ çак сăмах? Хытах каласа хучĕçке.

— Вăт, вăт. Çакăн пек илемлĕ, япшар чĕлхеллĕ хĕрарăм çăварĕнчен начар сăмах тухас çук. «Идиот» тени вăл вырăсла куçарсан «идеальный друг и отличный товарищ» тенине пĕлтерет.

Пĕрĕхтерсе кулса ячĕ Ирина Петровна упăшкин сăмахĕсене илтсен. Çапăçма чарăннă арçынпа хĕрарăм та вĕсен калаçăвне тăнлаççĕ ик-

кен. Акă вĕсем те варĕсене тытса ахăлтатма пуçларĕç. Кĕрлесе тăрать урам. Унтан трактор хуçипе хĕрарăм ыталанса хурçă ут патнелле утрĕç.

— Кулса вилмелле. Ахальтен каламан иккен ваттисем арăмĕпе упăшкине пĕр чустаран унанă тесе, — мăшăрне хулран çакăнчĕ Ирина Петровна.

## ПĔР ТАКĂНСАН

Ирхине такăнсан кунĕпех тенĕ ваттисем. Аньăн çавăн пекех пулса тухрĕ. Ирхине ĕçе кайиччен парикмахерскине кĕрсе çӳçне илем кĕртесшĕнччĕ. Хĕрарăмăн ĕç кунĕ тăхăр сехетре çеç пуçланать. Парикмахерскисем сакăр сехетрех уçăлаççĕ. Вăт пăтăрмах. Çывăрса юлнă. Çиччĕ çурăра çеç куçне уçрĕ. Тепри пулсан тухса чупнă пулĕччĕ те, анчах Аня нихçан та душ айĕнче çăвăнмасăр, лайăх кăна сăрланмасăр, тутлă çимесĕр килтен тухса каймасть. Кая юлни те темех мар уншăн. Чĕлхи-çăварĕ шăмăсăр. Такама та чике тăршшĕ лартĕ. Кулли ачаш. Кирек камăн чĕрине те ирĕлтерĕ. Вăрăм куç хупанкине сиктерсе пысăк кăвак куçне мăч-мăч тутарать, шăнкăрав пек сассипе янраттарса кулса ярать те, пай пуçлăхĕ, Мартын Ильич, аванмарланса шĕвĕр пӳрнипе куçлăхне сĕртĕнсе илет, илемлĕ мăйăхне пĕтĕркелесе хăй пӳлĕмне кĕрсе каять.

Çу-у-ук. Вăрçма мар, асăрхаттарса та пĕр сăмах калаймасть вăл Аньăна. Пĕрле ĕçлекенсем-и? Вĕсем мĕн шухăшлани хĕрарăма чĕрне хури чухлĕ те кăсăклантармасть, кĕвĕçчĕрех. Кĕвĕçекене кĕве çинĕ тет. Тĕрĕс, пĕр аван енĕ

пур Аньăн. Вăл çынна ырă тума тăрăшать. Акă паян таултă хутлă çурт умĕнче икĕ чăваш хĕрарăмĕ калаçса тăнине илтрĕ. Сĕтел-пукан сутакан лавкка кирлĕ иккен вĕсене. Çав сутуилӳ çурчĕ ăçта пулма пултарнине сӳтсе яваççĕ.

— Кунтан инçех мар вăл. Кĕтесрен пăрăнатăр та çав лавккана пырса тăрăнатăр, — илемлĕ куллипе йĕлпĕрсе сăмах хушрĕ Аня.

— Ут хăвăн çулупа. Санран кам ыйтнă, мелке пуç, — патлаттарса хучĕ икĕ аркăллă чăваш кĕпи тăхăннă хĕрарăм. — Хă, пырса тăрăнтарасшăн пире. Хăвăн тăрăнмалла пултăр.

— Вăт упăте, — парăмра юлмарĕ Аня. — Пулăшасшăнччĕ эп сире.

— Пулăшасшăнччĕ, — мăкăртатрĕ чăваш хĕрарăмĕ. — Сансăрах тупатпăр çулне.

— Марье, йĕркеллĕрех пул-ха, — чарма пăхрĕ тепĕр хĕрарăмĕ.

— Эс те пулин лăпăртатса ан тăр кунта. Манпа çӳреме намăслансан пĕччен ут, — пăрăнса таплаттарчĕ вăрăм чĕлхелли.

«Иккĕмĕш хут такăнтăм паян», — кулянса шухăшларĕ Аня.

Ĕç вĕçленсен хайхиултă хутлă çуртра вырнаçнă лавккана çитсе килме шутларĕ вăл. Çав çуртран инçех мар пĕчĕк пасар пур. Çула май кĕрсе тухма юрать.

— Тархасшăн, пăхăр-ха, çак юбка ман çинче мĕнлерех? — йăлăнса пăхрĕ Аня çине пĕр çамрăк хĕрарăм. Кĕлетки йăрăс хăйĕн, анчах та юбки шалпартарах пулнипе илемлĕхне çухатать. Сутуçă вара сурчăкне сирпĕтсех таварне мухтать.

— Сире шалпартарах ку. Эпĕ сĕнмен пулăттăм, — ăшшăн кулчĕ Аня.

— Сире кам хушнă кунта сĕкĕнсе çӳреме?! Пăрăнăр хыçăртан тапиччен! — хăмсарчĕ сутуçă.

— Анкă-минкĕ. Çынна улталани пурпĕрех усса пырас çук, — пăрăнса утрĕ Аня. — Каллех такăнтăм. Эп хам анкă-минкĕ. Тĕрĕс те, кам хушнă мана хутшăнма. Çӳреччĕр катемписем пек, — сасăпах ятлаçрĕ вăл.

«Кун пек пулакан марччĕ-çке. Паян манăн такăнмалли кун пулчĕ пулас», — пăшăрханса шухăшларĕ хĕрарăм. Шухăшларĕ çех — темрен такăнса чикеленсе кайрĕ.

«Уйи айне пăхмалла», — аса килчĕç кӳршĕре пурăнакан пĕчĕк Оля сăмахĕсем. «Çын çине пăхиччен ура айне пăхмалла çав», — кулса ячĕ Аня.

## ЭХ, ТĔНЧЕ-Е-Е!

Отчечĕсене лайăх йышăннипе савăннă Сергей Алексеевич лӳшкекен çумăра пăхмасăрах урам тăрăх шăхăрса юрласа пырать. Ĕнтĕ йĕпенмен вырăн та юлмарĕ пуль хăйĕн çинче, пурпĕрех ертӳçĕн кăмăлĕ уçă. Ара, кун пек лайăх пулса тухасса шутламанччĕ те вăл. Ĕнер кăнтăрла отчетсем хатĕр маррине пĕлсен çил-тăман кăларнăччĕ ертӳçĕ кантурта.

— Укçа илекенĕ пĕр кĕтӳ, çапах ĕçне тĕплĕ тăвакана хунарпа шырасан та тупаймастăн! — хĕремесленсех кăшкăрашрĕ Сергей Алексеевич сĕтеле çапса.

— Çак сăмахсене пурте тивĕç мар-ха та, — лăпкăн кăна сăмах хушрĕ ăна хирĕç кадрсен пайне ертсе пыракан Алина Петровна. — Камăн туса лармалла тет Ингăшăн отчетсене.

Иккĕмĕш çул ĕçлет пирĕн патра. Экономист тивĕçĕсене халиччен те пĕр чĕптĕм те вĕренсе çитеймерĕ. Укçа тӳлесе виçĕ хут сессие кайса килнипе мĕн пĕлĕвĕ пултăр. Унăн бази те профессии училищинчи курс анчах. Асăрхаттартăмçке эп сире ăна ĕçе илнĕ чухне.

Çак калаçăва пĕр чĕнмесĕр итлесе ларчĕ Дмитрий Эдуардович, унтан лăпкăн кăна сăмах хушрĕ:

— Хам пулăшас пуль. Çĕрĕпех ларма тивет паллах. Чирлекелесе тăратăп та. Пулăшасах пулать.

Дмитрий Эдуардович ку кантурта вăхăтлăха анчах ĕçлет. Вăл пенсионер. Тавах турра! Хальхинче отчетсене çĕрĕпе ларса йĕркеллех хатĕрлесе панă.

«Да-а-а!.. Тĕрĕс калаççĕ иккен вăл арçын пирки тума пĕлмен ĕçĕ çук, çырма пĕлмен хучĕ çук тесе», — кăмăллăн аса илчĕ ертӳçĕ.

Машинăна унран маларах çитсе ларнă Ингăпа тĕп бухгалтера курсан ун ĕнерхи çилли эрне каялла хурса лартнă ханша пăтти пек йӳçме пуçларĕ. Малтанласа вăл хăйне алла илчĕха. Çула май тĕп бухгалтера килне çитерсе хăварчĕç те машинăра шоферсăр пуçне Ингăпа иккĕшĕ çех юлчĕç.

— Инга Петровна, кăштах тимлĕрех пуласчĕ. Ĕçлеме вĕренмелĕх вăхăт пулнă сирĕн. Хăçанччен çын ĕнси çинче лармалла? Тĕп бухгалтер та сирĕншĕн ĕçлесе ывăнчĕ пуль. Дмитрий Эдуардович нихăш енчен те айăплă мар.

— Эсир! Эсир!.. — хĕремесленсе кăшкăрчĕ çамрăк хĕрарăм. — Мана вĕрентсе пынă ан пултăр! Ак ыранах прокуратурăна çăхав çырса паратăп.

— Мĕн çăхавĕ тата? Мĕн пирки? — тĕлĕннипе чĕлхине аран-аран çавăрса каларĕ ертӳçĕ.

— Эсир шоферпа иксĕр мана тапăнтăр тесе. Тата кассăран суя хутпа укçа илтĕр тесе.

Шофер тĕлĕннипе куçне чарса пăрахрĕ, машинине чарса лартрĕ.

— Çак сӳпĕлти тухмасăр эпĕ машинăна хускатмастăп, — терĕ вăл.

— Хуп çăварна, ăçтиçук! Çак лӳшкекен çумăр витĕр утассăм çук-ха! — ахăлтатса кулса ячĕ хĕрарăм.

— Тĕрĕс калать Миша. Тухăр машинăран.

— Хурах кăшкăратăп! Халех хускатăр машинăна. Мана киле леçсе хăварăр. Ыранах кирлĕ çĕре пĕлтеретĕп.

— Пĕлтерĕр, кăшкăрăр, анчах та халех машинăран тухнă пултăр, — хăйне алла илсе лăпкăн каларĕ Сергей Алексеевич.

Хĕрарăм алăка шаплаттарса хупрĕ те намăс сăмахпа кăшкăрса çул урлă танккарĕ. Пăрăнса ĕлкĕреймерĕ — иртсе пыракан машина ăна пуç тӳпинчен пуçласа ура тупанĕ таранах пылчăкпа «хăналаса» хăварчĕ. Инга çаврăнчĕ те тем кăшкăра-кăшкăра чăмăрĕпе юнарĕ. Миша çакна курсан пĕççине çапа-çапа ахăлтатма пуçларĕ.

Шофер умĕнче хăй мĕнле намăс курнипе минренĕ ертӳçĕ пуçне икĕ аллипе тытса темĕнччен хускалмасăр ларчĕ. Унтан алне сулчĕ.

— Атя хускат машинуна. Çав кирлĕ мана. Çӳлтен хушнипе илсе тултарнă çынпа тулчĕ кантур. Мĕнле ĕçлемелле кун пек? Кама кайса шалăп памалла?..

* * *

Тепӗр кунне Сергей Алексеевич кантура ирхине тӑхӑр сехет тӗлне ҫитрӗ. Район администрацине чӗнтернӗччӗ ӑна. Кантурта шӑп. Калӑн, паян никам та ӗҫе тухман. Ҫав вӑхӑтра экономист пӳлӗмӗнче лӑх-лӑх кулни, ҫӑвар тулли намӑс сӑмах калани илтӗнчӗ. Сергей Алексеевич пӳлӗме уҫса ячӗ те Ингӑпа иккӗмӗш бухгалтер чей ӗҫсе ларнине курчӗ.

— Вӑй патӑр. Ӗҫле-ӗҫле ывӑнтӑр пуль, выҫрӑр та пуль, — йӗкӗлтерех пуҫларӗ сӑмахне пуҫлӑх.

Елена Николаевна ӑна курсан вӗри шывпа сапнӑ пек сиксе тӑчӗ те пӳлӗмрен тапса сикрӗ.

— Эсир, Инга Петровна, паян хӑвӑр ирӗкпе ӗҫрен тухма заявлени ҫырса парӑр. Текех сирӗнпе пӗрле ӗҫлесе пулмасть.

— Ҫы-рӑ-пӑ-ӑ-ӑр, ҫы-рӑ-пӑ-ӑр, — типпӗн, сӑмахне тӑсарах каларӗ ҫамрӑк хӗрарӑм. Хӑй ҫавӑнтах пысӑк кӑвак куҫне вылятса илчӗ. Ҫӳллӗ кӗлеллӗ туфли тӑхӑннӑ илемлӗ вӑрӑм урисемпе вӑр-вар ҫаврӑнса илчӗ те кулса ячӗ: — Паян мӗнле ҫыратӑр приказне, ыран ҫаплах хурататӑр! — ҫапла каларӗ те заявлени ҫырса ертӳҫӗ умне хучӗ, ҫиелтен аллипе шаплаттарса ҫапрӗ. Сӗтел ҫинчи чей чашӑкӗсем такам тытса силленӗ евӗр чӗтренсе илчӗҫ.

Сергей Алексеевич ҫырнӑ заявление алӑ пусса ҫирӗплетрӗ те кадрсен пайне леҫсе пачӗ.

— Паянах приказ ҫырса хатӗрлӗр. Мӗнле те пулсан опытлӑрах, йӗркеллӗрех экономист тупасчӗ.

— Не-най, не-най, — кулянса калаҫрӗ кадрсен пайӗн пуҫлӑхӗ. — Хӑтӑласси пулать-ши ку хӗрарӑмран? Илемре вӑй тесе ахальтен кала-

маççĕ пуль çав. Ку хĕрарăмăн вара намăссăрлăхĕ илемĕнчен те пысăкрах.

Тепĕр ирхине Сергей Алексеевич пӳлĕм алăкне уçнă кăначчĕ — телефон сас пачĕ.

— Палларăн пуль, — терĕ мăнаçлă, пурне те пăхăнтаракан, чĕтреве ертекен сас, — сирĕн кантурта малашне те йĕркеллĕ лару-тăру хуçаланасса шанас килет...

Çакăнпа çыхăну татăлчĕ. Икĕ кун иртсен тăхăр сехетре кантура куçне-пуçне вылятса Инга Петровна килсе кĕчĕ.

— Ай вăйлă çыврăнă та вара! Упăшка ачана садика леçме кайнине те сисмен, — тутлăн карăнса илчĕ вăл йăл-ял çиçкелесе.

— Эх, тĕнче-е-е! — ик пĕççине шарт çапрĕ кадрсен пайĕн пуçлăхĕ Алина Петровна.

## ТЕЛЕФОНПА ЯНĂ ÇЫРУ

Паян ĕç кунне çĕкленӳллĕ кăмăлпа пуçларĕ Мая Александровна. Килте пурте йĕркеллĕ, ĕçре те ку эрнере чăрмавсем çук. Пай пуçлăхĕ Николай Ефремович командировкăра. Никам та ăна илсе кил, куна туса пар, унта шăнкăравла тесе тинкене илмест. Юлашки вăхăтра интернетпа кăсăкланма пуçларĕ Мая Александровна. Питĕ аван япала иккен вăл. Тем те пĕлме пулать ун урлă. Ак ĕнер аякри тăванĕсен тăхăмĕсене шыраса тупрĕ. Лешсем Çĕпĕр çĕрĕ çинче пуçĕпех çухалнăччĕ. Мăн аслашшĕпе пĕртăванне кулак тесе çемйипех ăсатнă пулнă та, çавăнтанпа вĕсем çинчен нимĕн те пĕлмен халиччен. «Ав мĕнле вăл прогресс теккенни. Ют çĕршывра ăсталанă пуян ăс-тăнлă техникăпа рехетленетпĕр вĕт. Пирĕн çĕршыв-

ра юлашки вăхăтра мĕнле прогресс пулчĕ-ши? Пĕтĕм прогресс — хаксем урнă юлан ут пек ĕрĕхнинче», — кулянса шухăшларĕ хĕрарăм.

Чăнкăр-чăнкăр! сас пачĕ кĕсье телефонĕ. СМСка килчĕ пулас. Кам та пулин шăнкăравласан ун телефонĕ: «Тыт, тыт хăвăртрах!» — тесе çухăрать. Упăшки шӳтлесе çапла туса панă ăна.

Хĕрарăм телефонне илчĕ те СМСка вулама пуçларĕ. Вуласа тухрĕ те лаках ларчĕ пукан çине. «Пуйăс ыран кăнтăрла иртсе икĕ сехет çурăра çитет вокзала. Эсĕ мана кĕтсе илессе шанса тăратăп. Санăн Николашка».

Хăй пурнăçĕнче пĕр çынна кăна Николашка тесе чĕннĕ Мая Александровна. Вăл хĕр чухнехи савниййĕ. Виçĕ çул çӳресен уйрăлчĕç вĕсен çулĕсем...

«Николашка, Николашка. Вун икĕ çултан аса илтĕн пулать. Ман телефон номерне тата ăçтан пĕлнĕ-ши?» — тĕлĕнчĕ Мая Александровна.

Мĕн тумалла? Тухмалла-ши ыран кĕтме, тухмалла мар-ши? Мĕн ĕçпе çӳрет-ши Николай пирĕн хулара? Маншăнах килес çук-ха вăл урăх хуларан. Енчен?..

Ма шăнкăравласа каламарĕ-ха вăл. Калаçмасран хăрарĕ-ши?

Çак самантран канлĕхне пачах çухатрĕ хĕрарăм. Алли те ĕç патне пымарĕ, чĕлхи-çăварĕ те çыхланчĕ. Тухма шутларĕ вăл вокзала. Ара, мĕн пулать тĕл пулнипе. Тĕл пулĕç те — уйрăлĕç. Иккĕшĕн те çемье. Пулни-иртни манăçнă. Манăçнă-ши? Апла пулсан мĕншĕн хĕрарăм чĕри кăкăртан сиксе тухас пек тăпăртатать?

Унăн ĕлĕкхи савниййĕн сăнĕ куç умне тухса тăчĕ. Анчах та çав сăн темшĕн шĕвек тĕтре

ăшĕнче. Темле сирме тăрăшсан та тасалмасть çав тĕтре. Çапла. Вун икĕ çул вун икĕ кун мар çав. Вăхăт хăйĕннех тăвать.

Акă пуйăс палăртнă вăхăтра çитсе чарăнчĕ. СМКра çырнă вакун патнех пырса тăчĕ Мая Александровна. Пурте тухса пĕтрĕç темелле ĕнтĕ, анчах та Николашка çук та çук. Акă юлашкинчен пай пуçлăхĕн Николай Ефремовичăн пуçĕ курăнчĕ. Мая Александровна самантрах çурăмпа çаврăнса тăчĕ. Тĕлĕнмелле... Тен, пай пуçлăхĕ янă çав СМСкăна? Пулма пултараймасть. Вăл халиччен Мая Александровнăпа сăмах вылятса калаçман.

Николай Ефремович унта-кунта пăхкаларĕ, такама шырарĕ. Унтан сасăпах каласа хучĕ:

— Эх, телефон счечĕ çинче укçа çукки пăтăрмах пулчĕ. СМСкăна вуламан пулас арăм, — терĕ те салхуллăн такси çине ларса хула урамĕпе ярăнтарчĕ.

«Эх, анрашкасем! Пай пуçлăхĕ те, эпĕ те. Николай Ефремович йăнăшпа ман номер çине пуснă пулас. Эпĕ, ухмаххи, иртнине аса илсе чуна ыраттаратăп».

Вăл хăвăртрах ĕç вырăнне çитес тесе такси тытрĕ. «Пуçлăх малтан ĕçе те кĕрсе тухма пултарать, — пăшăрханса шухăшларĕ Мая Александровна. — Ĕç вырăнĕнче пулманшăн вăл мана самантрах чăнлăха тавăрĕ».

## ÇЫНЛĂХА — ТАКĂР ÇУЛ

Ял юбилейĕн сценарине тĕрĕслесе ларакан Сергей Иванович шарт сиксе пуçне çĕклерĕ. Коридорта темĕн кĕмсĕртетни, вырăсла хытă калаçни, киревсĕр сăмахсемпе вăрçăнни

илтĕнчĕ. Апайтурах! Ятлаçаканĕ хĕрарăм-çке. Алăк яриех уçăлса кайрĕ те, директор пӳлĕмне районти культура пайĕн пуçлăхĕпе унăн çумĕ кĕрсе тăчĕç.

— Мĕн пăрахса тултарнă унта?! Чутах такăнса ӳкеттĕмччĕ! — хĕремесленсе кăшкăрчĕ культура пуçлăхĕ.

— Ара, ремонт пырать-çке. Хăнасем пуçтарăннă тĕле кăштах тирпейлес тетпĕр.

— Пар-ха кунта сценарине! Пăхса тухам! — сассине тата хăпартарах калаçрĕ майра. — Так! Кунта ку кирлĕ мар! Кăна убрать! — турта-турта пăрахма тытăнчĕ пуçлăх.

— Чимĕр-ха, мĕн тăватăр эсир? — чарма тăрăшрĕ Сергей Иванович сассине пĕртте хăпартмасăр. — Сценари ял историйĕпе çыхăннă-çке. Эсир вара ун историйĕ пирки нимĕн те пĕлместĕр!

— Заткнись, дурак! — ахăрашрĕ майра. — Ак район пуçлăхĕ килтĕр-ха. Кăтартса парĕ сана, пуç мимине самантра вырăна лартĕ.

— Мана хăратма кирлĕ мар. Эпĕ район пуçлăхне мĕн кăмăла кайнине пĕлетĕп. Ун тавракурăмĕ пирĕннинчен чылай анлă. — «Пирĕнниинчен» сăмаха çирĕппĕн, пусарах каларĕ директор.

Акă уçă алăк умне репетицие пуçтарăннă ял халăхĕ пухăнчĕ. Пурте çăварĕсене карса пăрахнă, Сергей Иванович çине шеллерех пăхаççĕ.

Çакă майрана вăй-хал пачĕ тейĕн çав, вăл тата хытăрах çухăрашма пуçларĕ:

— Ухмах! Ухмах! Директор пулса ĕçлет тата! Хуса кăлармалла сана!

Сергей Иванович вăл сӳпĕлтетнине урăх ит-

лесе тăрас мар терĕ. Шкулта-çке. Ав ача-пăча сасси илтĕнет.

— Кайрăмăр, репетицие уйран пуçлатпăр. Лашасем хатĕр-и? Ял никĕсне хывакансем вырăнта-и?

— Пурте вырăнта, пурте йĕркеллĕ, Сергей Иванович.

Çакна курса тăракан майра кăвапинчен кăшт çӳлерех хăпарса кайнă кофтине турткаларĕ, çинçе кукăр урисене, шĕвĕр чĕркуççийĕсене аран-аран хуплакан юбкине çӳлелле туртса майларĕ те халăх хыççăн тĕнкĕлтетрĕ.

Хăйне никам та чĕнменнине курсан сулахай уринчи туфлине хыврĕ те Сергей Иванович еннелле вăркăнтарчĕ. Лап! ӳкрĕ туфли директор умне. Лешĕ чарăнчĕ те сылтăм аллипе тăнлавне сăтăркаларĕ. Унтан пĕшкĕнсе туфлие илчĕ те çӳ-ӳ-ӳллĕ йывăç тăррине вăркăнтарчĕ. Унтах юлĕ тесе шутланăччĕ. Пăр-р вĕçсе саланчĕ йывăç çинчи вĕçен кайăк, лап! ӳкрĕ туфли йывăç айне.

— Шел, питĕ шел, — çамкине сăтăркаларĕ директор.

— Ухмах! Ухмах! — намăс сăмахпа ахрашса тринкки-транкки сикрĕ хăрах уран майра.

Никам та туфлине илсе пырса паракан пулмарĕ.

Хĕрсе репетици пырать. Сергей Иванович, ял историне аван пĕлекенскер, сценарие питĕ интереслĕ хатĕрленĕ. Пĕрремĕш çемье мĕнле килсе вырнаçни, колхоз йĕркеленни, вăрçă пуçланни... Кунта тĕлĕнмелли тем чухлех. Кулмалли те, выртса йĕмелли те пур.

Репетици хыççăн халăх тĕлĕнсе калаçрĕ:

— Кам чĕнсе килнĕ ку майрана?

— Вăл кунта мĕне кирлĕ? Юбилее хăна пулса килсен юрĕ. Чĕнсен паллах.

— Чĕнмесен мĕн туса çӳремелле кунта?

Сергей Иванович, репетици йĕркеллĕ иртнипе хĕпĕртенĕскер, хăйĕн ĕç пӳлĕмне таврăнчĕ. Анчах та лăпланса çитеймерĕ-ха.

«Намăс, мĕнле намăс ял халăхĕ умĕнче, — пăшăрханчĕ вăл. — Çакăн пек çынсем ĕнтĕ пирĕн культурăна, йăла-йĕркене тĕпĕпех кăкласçĕ».

Директорăн ĕçĕ нихăçан та вĕçленмест пуль. Татса памалли ыйтусем темĕн чухлех.

Телефон шăнкăртатрĕ. Арăмĕ иккен.

— Çеруш, эсĕ сывлăшпа тăранса пурăнатăн пулас. Кăнтăр апатне те таврăнмарăн. Каçхи апат та сивĕнсе кайрĕ ĕнтĕ.

— Ан ятлаç. Пĕр чухне сывлăшпа тăранни те кирлĕ. Кĕçех çитетĕп.

Вăл аллинчи сехечĕ çине пăхса илчĕ. Тăххăр иккен.

Васкамасăр утать арçын урампа. Паянхи пулăм ниепле те асĕнчен тухмасть. Килĕ умне çитрĕ те ансăр сак çине ларчĕ. Çанталăк тĕлĕнмелле ырă. Çакăн пек ырă, тӳлек кун килсе вырнаçнă пулас пĕрремĕш çемье вĕсен ялĕ пулас вырăна. Чăваш çемйи. Чăваш ĕмĕртен çынна хисепленĕ, çăкăр-тăварпа кĕтсе илнĕ. Никам умĕнче те алăка шаплаттарса хупман. Ватăсем яланах хисепре пулнă. Чăвашăн чи сумлă, чи хăватлă шĕвекĕсем те сăрапа пыл çех пулнă. Эрехпе нихăçан та иртĕхмен чăваш.

«Эх-хе-хей, — ассăн сывласа илчĕ Сергей Иванович. — Халь мĕнле пурнăçпа пурăнатпăр эпир? Анкетăна ĕненсен шкул ачисем вунăвун икĕ çултах сăра-эрех тутанса пăхаççĕ».

Каллех шухăшĕпе паянхи пулăм патне таврăнчĕ вăл. Ара, хĕрарăмсем хăйсене мĕнле киревсĕр тыткалаççĕ те. Леш, майра пуçлăх, чăвашсем çине яланах питĕ çӳлтен пăхать. Май килнĕ чух кӳрентерме тăрăшать. Вырăс хушшинче пулсан ун пек пуçлăхсене митинг туса ялтан хăваласа кăлараççĕ.

* * *

Икĕ çул каялла пулнăччĕ ку ĕç-пуç. Облаçри вĕрентӳ управленийĕнче тĕп специалист пулса тăрăшакан чăваш хĕрарăмĕ Татьяна Федосеевна Сергей Иванович ертсе пыракан шкулта регионсем хушшинчи культурăпа çут ĕç ĕçченĕсен наукăпа практика конференцине ирттерме шутларĕ. Директор килĕшрĕ. Юратать вăл хăй ертсе пыракан шкулта хăнасене кĕтсе илме.

«Çак майпа яланах йĕрке тытса пыма меллĕ», — шӳтлет шкул директорĕ.

Тĕплĕн хатĕрленчĕç конференцие. Хăнасем умĕнче намăс курас килмест-çке. Буклет таранах пичетлесе кăларчĕç. Пĕтĕм шкул ĕçченĕ ирне-каçне пăхмасăр тăрăшрĕ.

Ирхине тăхăр сехете леш культура пайĕн пуçлăхĕ çитрĕ. Алăкранах ахăрашма пуçларĕ: ку апла мар! ку капла мар!

— Эсир, Валерия Петровна, хăвăр уйрăмăрта мар. Питех чарусăрланмасан та юрать, — лăпкăн асăрхаттарчĕ директор.

Лешĕ тем хирĕçлесшĕн çăварне уçрĕ те, Сергей Ивановичăн сивлек куçĕсене курсан шăпах пулчĕ.

Хăнасене çул çине тухсах кĕтсе илчĕç. Çанталăкĕ, калаçса татăлнă тейĕн, лăпкă, хĕвеллĕ.

Ака уйăхĕн пуçламăшĕ кăна пулин те ăшă, чуна лăпкать.

— Садри сар улмине шыра-шыра
Сачĕ тавра саккăр çаврăнтăм.
Хамăр тăвансене шыра-шыра
Çурчĕ тавра çиччĕ çаврăнтăм, —

юрлаççĕ район центрĕнчи ачасен «Чĕкеç» ансамбль юрăçисем.

Хăнасем те килсе çитрĕç. Вĕсем хушшинче: облаçри культура департамент, çут ĕç департамент, чăваш автономи пуçлăхĕсем, тĕрлĕ хаçат-журнал корреспонденчĕсем.

Кӳршĕ регионран та питĕ пысăк делегаци килнĕ. Икĕ министерствăран, хаçатсенчен, телевиденирен, радиоран, университетри тĕрлĕ преподавательсем.

Салам сăмахĕсем, докладсем хыççăн концерт пуçланчĕ.

— Сире виçĕ номер кăтартма ирĕк паратпăр, — пĕлтерчĕ облаçри тĕп специалист «Чĕкеç» ансамбль ертӳçине.

Виççĕмĕш юррине пуçланăччĕ анчах, районти культура пуçлăхĕ ансамбль ертӳçи патне таплаттарса пычĕ те куçне-пуçне чĕтретсе намăс сăмахпа: «... сократи программу!» — тесе кăшкăрчĕ.

— Программăна эпĕ хатĕрлемен, — лăпкăн тавăрчĕ Нина Николаевна.

— Кам хатĕрленĕ вара?!

— Облаçри специалистсем.

Тăхтав вăхăтĕнче облаçран килнĕ аслă пуçлăхсем сывпуллашса уйрăлма васкарĕç.

Малалла кӳршĕ регионтан çитнĕ артистсемпе преподавательсем практика мелĕпе занятисем ирттерчĕç. Акă сцена çине кӳршĕ регион

университечĕн эстрада уйрăмĕн доценчĕ тухрĕ. Вăл а капелла майĕпе мĕнле тĕрĕс юрламаллине кăтартса пачĕ. Малтан халăх юррине юрларĕ, унтан Г. Хирбю çырнă илемлĕ юрра пуçларĕ.

Çав вăхăтра «культура майри» алăка яриех уçса ячĕ те:

— Культура, за мной! — тесе кăшкăрчĕ.

Районти культура ĕçченĕсем салтаксем пек сиксе тăчĕç те ун хыççăн тухса вирхĕнчĕç.

«Йĕркесĕрсем! Юрă вĕçлениччен кĕтме пулмастчĕ-ши?!» — илтĕнчĕ залра.

Майран заместителĕ ун-кун пăхкаласа илчĕ те хыçалтан тĕнкĕлтетрĕ. «Эх, аван мар пулса тухрĕ-çке», — кулянса шухăшларĕ вăл.

Доцентăн куçĕсем куççульпе тулчĕç, çапах та вăл вĕрентĕве вĕçлерĕ. Унтан куççуль витĕр йăл кулчĕ те: «Эпир педагогсем хушшинче пулни питĕ лайăх курăнчĕ. Пысăк тав сире», — терĕ.

«Вăл педагог мар! Вăл педагог мар! — кăшкăрчĕç залран. — Вăл культура пайĕн пуçлахĕ!»

Темиçе çын доцент патне пырса майрашăн каçару ыйтрĕç, вĕрентӳ питĕ кăмăла кайнине пĕлтерчĕç.

Хăнасем валли пуян сĕтел хатĕрленĕ. Кулса-калаçса вĕçленчĕ уяв. Анчах вĕçленчĕ-ши?

Акă хăнасем тĕрлĕ еннелле саланма пуçларĕç. Пурте тав сăмахĕ калаççĕ. Конференцие лайăх хатĕрленнĕшĕн хуçасене тав тăваççĕ. Аванни çапах ытларах-çке. Майра та тухрĕ ăсатма. Темиçе ушкăна пайланнă хăнасем пĕр çĕре пуçтарăнчĕç.

Акă хайхискер усал сăмахсемпе вăрçăнса «газель» ураписене тапма тытăнчĕ, машина алăк-

не ласкарĕ. «Открой, придурок!» — тесе кăшкăрашрĕ. Такама хулана çити лартса ярасшăн иккен.

— Пушă вырăн çук ман, — лăпкăн тавăрчĕ шофер.

— Да пошел ты! — çухăрчĕ майра.

Хăнасем куçĕсене чарса пăрахнă, ăнтан кайса пуçĕсене силлеççĕ, кӳршĕ регионтан килнĕ культура министрĕн çумĕ те пуçне ярса тытнă. Ах! та ах! илтĕнет йĕри-таврара.

Чăваш чĕлхи урокĕсене ертсе пыракансем пĕрне-пĕри пӳле-пӳле ку киревсĕр пулăма ахаль хăвармалла маррине каларĕç. Каларĕç те — çакăнпа вĕçленчĕ. Чăваш халăхĕ кӳрентернине ĕмĕртен çăтса яма хăнăхнă мар-и?

* * *

Паян ял юбилейĕ. Мĕн чухлĕ халăх пуçтарăннă кунта. Район, область пуçлăхĕсем. Ялтан тухса кайса урăх çĕрсенче тĕпленнĕ çынсем те нумаййăн. Мĕнле кăна паллă çын çук! Ял шкулĕ ĕмĕртенпех аваннисен ретĕнче тăнă: врачсем, художниксем, çыравçăсем, инженерсем, çар çыннисем...

Юбилей питĕ ăнăçлă иртрĕ. Сергей Иванович çырнă сценари пурин кăмăлне те кайнă.

— Маттур, Сергей, — пырса ыталарĕ район пуçлăхĕ. Вăл шкул директорне питĕ хисеплет, ялан тенĕ пекех ятран чĕнет.

Çав вăхăтра Сергей Иванович куçĕ умне майра туфлийĕ çӳлелле вĕçнĕ ӳкерчĕк тухса тăчĕ. Ахăлтатса кулса ярасран аран-аран тытса чарчĕ вăл хăйне.

Хăнасем салансан Сергей Ивановичпа хуçалăх ертӳçи ял халăхне кĕрекене йыхăрчĕç.

— Эсир — ял хуçалăх тĕрекĕ, тав турра эсир пурришĕн, пур пулăма та кирлĕ пек ăнланнăшăн. Сирĕнпе ĕçлеме çăмăл пире, — ăшшăн калаçрĕ ял хуçалăх ертӳçи Валерий Петрович Мухин.

Сергей Иванович хăй эрех-сăрана кăмăлламасть пулин те черкке çĕклерĕ:

— Эх, тăвансем, ял-йыш, çак çут тĕнчере ырри усаллинчен чылай нумайрах. Такăр çул сунар паян çынлăха, ырра.

Пурте ура çине тăчĕç:

— Такăр çул çынлăха! Такăр çул ырра!

## ПЕРЕСТРОЙКА

Килнелле утнă май Александр Трофимович хăй юратнă юррине юрласа пычĕ: «Чи илемлине-е-е, чи илемлине-е-е», — ĕнĕрлерĕ вăл. Акă вĕсен подъезчĕ патĕнчен инçех те мар виçĕ çамрăк пĕр ачана тăпăлтараççĕ. Хĕнекенсем хушшинче Александр Трофимович паллакан ача та пур: вун пиллĕкри Коля — ĕçтешĕн ывăлĕ. Вăл хĕнекенсене чарма пăхать ахăр.

— Пăрăн кунтан! Атту хăвна лекет! — кăшкăрчĕ çӳçлемес пуçли, патвар кĕлеткелли. Унтан çаврăнчĕ те Кольăна сулмак чăмăрĕпе тăрăслаттарчĕ.

— Эй! Эй! Ачамккăсем! Илемлĕ мар, арçынла мар темиçен пĕр çынна тапăнни! — чарма пăхрĕ çамрăксене Александр Трофимович.

— Хăй айăплă! Туртмалли парăр, вара хĕнеместпĕр.

— Эпĕ туртмастăп. Сире те çав йытă çимен япаларан писме хушатăп.

— Ха! Итлĕр-ха, итлĕр, писме хушать пире! Кам эс кунта мĕн тумаллине хушма! — тесе лач! сурчĕ лăпăс-лăпăс пуç. — Атьсемри, туртмалли памарĕ — хĕнетпĕр! — аллисене ирĕке ячĕ услап.

— Так! — кăшкăрчĕ те арçын икĕ каччăна çавăрса тытса пĕр-пĕрин çумне çамкисемпе шаклаттарчĕ. Нач! илтĕнчĕ сасă. — Тасалăр куç умĕнчен! Ачасем урамра çӳремелли вăхăт тахçанах иртсе кайнă.

Хирĕç чĕнекен пулмарĕ.

Ырă çанталăкпа киленсе, сăра ĕçсе хавасланнă кăмăлĕ пăсăлчĕ Александр Трофимовичăн. «Мĕнле ăру çитĕнет пирĕн? Çухатрăмăр, çухатрăмăр çĕршыв чапне, пуласлăхне», — шухăшларĕ вăл тăруках урăлса кайса. Унтан подъезда кĕчĕ те виççĕмĕш хваттертен илтĕнекен шăв-шава итлесе тăчĕ.

Перестройка! Перестройка!
Перестройка теççĕ.
Ман пек чухăн хĕрарăмсем
Пуянсемпе ереççĕ!.. —

пырĕ çурăласла кăшкăрса такмаклать кӳршĕри вырăс хĕрарăмĕ. Вăл икĕ пӳлĕмлĕ хваттерте пĕчченех пурăнать. Больницăра медицина сестри пулса ĕçлекенскер шавлă, ирĕклĕ пурнăçа кăмăллать. Александр Трофимович хăй те часчасах хăналанкаланă-ха ун патĕнче. «Перестройкăна манмаççĕ çынсем. Мĕн «перестройки» унта? Çак пулăм çирĕм çула яхăн лачакана путнă машина пек мекĕрленет, çăрăлса тухасси курăнмасть», — шутларĕ арçын. Вăл майра алăкне шаккас тенĕччĕ кăна — темĕн кĕрĕслетрĕ хĕрарăм хваттерĕнче.

— А-а-а! А-а-аскăн! Миçе вара вĕсем санăн?! Вĕлере-е-е-тĕп! — илтĕнчĕ урса кайнă арçын сасси. Черетлĕ еркĕнĕ пулас.

Александр Трофимович хăй хваттерĕ патнелле васкарĕ, алăк шăнкăравне чăтăмсăррăн çине-çине пуса пуçларĕ.

Арăмĕ упăшки каçхи вунă-вун пĕр сехетсĕр киле килменнине хăнăхса çитнĕ ĕнтĕ. Çывăрмалли пӳлĕмре кĕнеке вуласа лараканскер аванах илтрĕ шăнкăрава.

— Анне, такам килчĕ. Атте мар-ши? Вăл ялан çавăн пек чăтăмсăррăн шăнкăравлать, — ура çине çĕкленчĕ хутсемпе тăрмашакан ывăлĕ.

— Ан чăрман, хамах уçатăп, — чарчĕ ывăлне амăшĕ.

Çак йăрăс пӳллĕ, ырă кăмăллă, хуйхă-суйхă та илемне сӳнтереймен хĕрарăм аслă шкулта студентсене вĕрентет. Ывăлĕ Юра Мускаври Ломоносов ячĕллĕ университетра пĕлӳ пухать. Паян вăл çуллахи каникула таврăнчĕ.

Куккук сассипе янăракан шăнкăрав «авăтрĕ-авăтрĕ» те шăпланчĕ. Çав самантра коридорта çакăнса тăракан сехет ăшĕнчи куккук триксе тухрĕ те шăнкăрав пăчланнишĕн те савăнса, те кулянса ку-кук! тесе кăшкăрчĕ.

Хĕрарăм çакна курса ахăлтатса кулса ячĕ, унăн сӳрĕк кăмăлĕ çĕкленчĕ. Сăнĕ çуталчĕ, куçĕсем темле халиччен никам та асăрхаман çутăпа ялкăшма пуçларĕç. Ара, сехет ăшĕнчи куккук сас паманни темиçе çул çитет ĕнтĕ. Юсав ăстисене те кăтартса пăхнăччĕ те, ĕçлекен тăваймарĕç. Унтанпа илемне ытараймасăр упраççĕ çемьере çак авалхи сехете. Тата вăл Алина Петровнăшăн питĕ хаклă япала — асламăшĕнченех куçнă çемьене.

Хĕрарăм уçма васкамарĕ-ха. Алăк леш енче кăшкăрашни, алăка урапа тапни илтĕнчĕ. Кил хуçи арăмĕ пуçне мăнаçлăн çĕклерĕ те алăк патнелле таплаттарса утса пычĕ.

— Мĕн тӳрех уçмастăн?! Элле еркĕнӳ балконтан сиксе тарасса кĕтрĕне?! — хăмсарма пăхрĕ арçын.

— Кĕтрĕм çав, кĕтрĕм, — лăпкăн таварчĕ хĕрарăм упăшки çине йĕкĕлтерех пăхса. — Элле санăн кăна пылак пурнăçпа киленмелле-и? Пире-е-е те Турă туйăмсăрах çуратман. Эпи-и-ир те кама та пулин «çăтмаха-а-а» ертсе кĕме пултаратпăр, — тăсарах каларĕ вăл хăш-пĕр сăмахсене.

Александр Трофимович, халиччен арăмĕ хăйне хирĕç тăнине курманскер, пĕр вăхăт шанк хытса тăчĕ. Çак самантпа усă курса хĕрарăм çывăрмалли пӳлĕме кĕрсе кайрĕ.

— Мда-а-а! — мĕкĕрсе ячĕ арçын. — «Перестройка» текенни халăха веçех ухмаха кăларчĕ. Ман арăм патне те персе çитнĕ иккен. Мĕнле çиллессĕн пăхаççĕ куçĕсем. Май пулсан çапса та пăрахĕччĕ. Халăх хăйĕн хуçи камне маннă пек, арăм та ирĕке тухасшăн пулас. Не выйдет! — тăр-рăс тапрĕ вăл тарăхса урипе. Унтан алăк патĕнче тăракан пукан çине лак ларчĕ. Тăхăр вунă килограмм таякан кĕлетке йывăрлăхне чăтаймасăр пукан «йынăшса» ячĕ.

— Чи илемлине-е-е! Чи илемлине!.. — кисретет хваттере кил хуçи. Унтан тайкаланса тăчĕ те хăйпе хăй вăрçăнма пуçларĕ: — «Ан васка эс юратма чи илемлине-е!..» Кам ухмахĕ çырнă çак сăмахсене?! Чи илемлине юратмалла çав! Мĕне кирлĕ ăсли?! Ак эпĕ ăслипе пурăнса ирттеретĕп ĕмĕре. Сăпайлипе. Мĕн пĕлет вăл ин-

тим пирки?! Илемĕ чăнах пур вара ман арăмăн. Кунпа эп мухтанма пултаратăп! — шĕвĕр пÿрнине çÿлелле çĕклесе кулса ячĕ арçын. — Тĕрĕссипе, кÿршĕ хваттерте пурăнакан Зоя илемлĕ те мар, куçĕсем те хĕсĕкрех, çăварĕ те чалăшрах, анчах арçынна мĕн кирлине питĕ ăнланаканскер. Пирĕн отделта тăрăшакан кук тĕрриллĕ Лена та пит вĕрискер, тепĕр илемлисем айккинче тăччăр, — сасăпах пуплешрĕ вăл. Пуçне сылтăм енне пăрчĕ те хăй çине çиллине пытараймасăр пăхакан ывăлне курчĕ. Тимлĕрех сăнаса пăхнă пулсан ывăлĕн куçĕсенче мĕн чул ырату курнă пулĕччĕ ашшĕ. — А-а! Юрка таврăннă иккен, — япала çине пăхнă пек пăхса илчĕ вăл каччă çине. Хăçан юлашки хут ывăлăм тесе çупăрланă-ши вăл хăйĕн пепкине. Пулнă та пуль ун пекки, анчах питĕ сайра. Тахçан, тахçан... тĕтре хупланă ачалăхра. Нимĕн те чĕнмерĕ Юрка. — Çиес килет манăн! Кам апатлантарать мана?!

— Çиессÿ килсен антарса çи, — сассине хăпартарах каларĕ ывăлĕ.

Пĕрремĕш хут илтрĕ Александр Трофимович хăйне хирĕçленинине.

— Каллех перестройка вăйĕ хуçаланать. Юрка, эс кампа калаçатăн? Аçу-и эп, аçу мар-и?!

— Атте çав эс, аттех, — ассăн сывларĕ лешĕ. — Атте ăшшине, унăн тимлĕхне туясси пулмарĕ пурнăçра...

— Яшкана тăвар каламан! — кăшкăрчĕ хывăнса кухньăна апатланма ларнă арçын сивĕннĕ яшкана лĕрĕп-лĕрĕп сыпкаласа.

— Тăварсăр пулсан тăвар ярса çи, — кăшкăрнă пекех каларĕ кухньăна тем ĕçпе кĕнĕ

арӑмӗ. — Тутли кирлӗ пулсан малашне хӑв валли хӑвах пӗҫерсе ҫиме пултаратӑн. Пӗҫерме ӳркенсен — ресторанта апатлан. Сан пек «шурӑ ҫыннӑн» килти апата ҫимесен те пулать. Ҫитет тарҫу пулса пурӑнма. Пӗтӗм укҫуна эрех кӳпсе, ерӗшкӳсемпе алхассах пӗтеретӗн. Ав Юркӑн тумӗ те веҫех кивелчӗ. Вӑл вӗт ниҫтан пӗр пус илеймен арҫын ҫемйинче ӳссе ҫитӗнмен. Пай пуҫлӑхӗнче тӑрӑшать унӑн ашшӗ хулари шурӑ ҫуртра.

Ывӑлӗ ашшӗпе амӑшӗ харкашнине именсе итлесе тӑчӗ.

— М-да-а-а! Тем, эсӗ питӗ хӑюллӑ калаҫатӑн! Килте кам хуҫа пулнине мантӑр-и?! — кӗмсӗртетрӗ кил хуҫи. — Перестройка! Перестройка! Кӑтартса парӑп эп сире «Кузькину мать»!

— Перестройка тӑвасшӑн-ха эпӗ те паянтан, — йӗкӗлтерех пӑхрӗ ун ҫине мӑшӑрӗ Алина Петровна. — Малашне килте апатланас тесен пурӑнмалӑх минимум чухлӗ укҫа паратӑн. Ҫавӑн чухлех Юрка пайне те. Унӑн тата икӗ ҫул вӗренмелле. Алимент текенни пулать ку. Кӗпӳ-йӗмна ҫуса якатнӑшӑн — виҫӗ пин, санпа ҫирӗм ҫул ытла нушаланса пурӑннӑшӑн — «моральнӑй ущерб» текеннишӗн — пилӗк пин. Вӑт ҫавӑн чухлӗ — кашни уйӑхра. Унсӑрӑн — уйрӑлатпӑр! — ҫапла каларӗ те арӑмӗ урине тӑр-рӑс! тапрӗ, унтан кухня алӑкне шанлаттарса хупрӗ. Тепре уҫрӗ те шӑл витӗр сӑрхӑнтарса: — Малашне залра ҫывӑратӑн. Уйрӑлас тесен — эпӗ хирӗҫ мар. Хваттере виҫӗ пая пайлатпӑр, — терӗ.

Читлӗхри попугай темшӗн савӑннӑ пек ҫуначӗсене лӑс-лӑс силлерӗ те:

— ...латпӑр-р!.. Р-р-р! — тесе кӑшкӑрчӗ.

## ТĂВАН КИЛ

Кунĕпех пахчара ĕçлесе ывăннă Акулина аппа çуллахи душ айĕнче çăвăнкаларĕ те каçхи автобуса ĕлкĕрес тесе япалисене пуçтарма пуçларĕ.

— Аппа, апатланмасăрах ан пуçтарăн-ха, — пырса ыталарĕ Алевтина йăмăкĕ. Вăл, Акулинăпа пĕрле кунĕпех пахчара ĕçлесе ĕшеннĕскер, пӳрт çумĕнчи ансăр сак çине ларчĕ.

— Ывăнтăм эпĕ те, — пырса вырнаçрĕ ун çумне аппăшĕ. — Тем пекех вĕри чей ĕçес килет. Кунĕпе вĕретмен лĕп шыва лĕрккесе ăшчик те кӳпсе кайрĕ.

— Газ пĕтнĕ тет вĕт кин. Вĕри апат та пулмарĕ ĕнтĕ сана валли.

Акулина çум курăкран тасалнă пахча çине савăккăн пăхса илчĕ.

— Алевтина, сăнаса пăхса ларатăп та, мĕнле тарăннăн сывлать çум курăкран тасалнă пахча. Тав тунăн чĕлтĕртетеççĕ пахча çимĕçĕн парка çулçисем. Хамăр лартса ӳстернĕ улмуççисем те пуç таяççĕ пире. Ăнса, тухăçлă пулмалла кăçал пахча çимĕçĕ, — сăмаха пăрса яма тăрăшрĕ вăл. «Чейне кипятильникпе те вĕретме пулнă-ха. Апатне те хатĕрлеме ан ӳркен. Çулла-çке. Лаçра тăракан такан çине пĕчĕк хуран çакса урамра турпас чĕртсе те пĕçерме пулать-çке. Çук, иртеймест çав йăмăкăм кинĕнчен», — шутларĕ хĕрарăм.

Алевтина аппăшĕн шухăшне ăнланать тейĕн.

— Кипятильник те таçта мура çĕтнĕ, пăлтăртах çакăнса тăратчĕ. Лаçра таканĕ тăрать — пĕчĕк хуранĕ çухалнă. Калăн, юри тунă, — пăшăрханса калаçрĕ вăл.

Акулина тем каласшăн çăварне уçнăччĕ кăна — калиткере Алевтинăн кинĕ курăнчĕ. Вăл лутакаскер, куçĕсем хĕсĕкрех, темле сиввĕн пăхаççĕ. Ача çуратнă хыççăн катка пекех сарăлса кайнă. Килти пĕтĕм ĕçе хунямăшĕ çине тиенипе, ирхине тăхăр сехетчен ыйха çапнипе ӳчĕ кунсерен хушăнса пырать ахăр.

«Самăртма хупнă сысна амиех-çке ку, — шутласа илчĕ Акулина. Хăй чутах ахăлтатса кулса ямарĕ. Кĕске йĕм, çара хырăмне аран-аран хуплакан майка евĕрлĕ кофта тăхăннă кинĕ чисти вутă çурмалли сӳсленнĕ пукана аса илтерет. — Эх, çирĕ Алюш пуçне çак самăр сысна. Йăрăс пӳллĕ, илемлĕ, ăслă арçын çак килпетсĕр хĕрарăмшăн çуралнă иккен. Кăмăлĕ те ниме юрăхсăр-çке», — чунне ыраттарчĕ хĕрарăм.

— Кинĕм, кӳрше кайса пĕр çур чейник шыв вĕретсе килеймĕн-ши? Аппана инçе çула выç варлах кăларса ярас марччĕ, — шăппăн, йăлăннă пек пăхса сăмах хушрĕ Алевтина. — Кипятильник таçта кайса кĕнĕ.

— Çунса кайнă вăл. Чейшĕнех çынна йăлăнса çӳрессĕм çук. Мĕншĕн выç варла? Пахчара хăяр çук-и, сухан ӳсмен-и? — икĕ сарăхнă хăярпа виçĕ пуç сухан пырса хучĕ кинĕ сак çине. — Ак тата тăварланă пулă пур, — пулă пуçĕпе хӳри выртакан турилккене пырса лартрĕ вăл. — Пăянам, килте çăкăр пĕтнĕ пулас. Эпĕ те лавккана кĕме маннă.

— Ан чăрманăр маншăн. Автобус хулана икĕ сехетрен çитет. Ну, хускалас, автобусран юлăп тата.

— Аппа, ак кăштах укроп илсе кай-ха, — пĕчĕк çыхă пырса хучĕ Акулина сумкине йăмăкĕ.

— Кирлĕ марччĕ, йăмăкăм, — пырне капланнă чăмаккана аран-аран çăтса ячĕ аппăшĕ. — Алюша салам кала. Сайрарах пырса çӳрет вăл халь пирĕн пата. Хам ача пекех пăхса ӳстертĕм темелле те. Пилĕк çул пуранчĕ вĕт пирĕн патра университетра вĕреннĕ чух. Пилĕк çул пилĕк кун пек иртсе кайрĕ. Халь ав пысăк çын. Начальник.

Кинĕ урăх шарламарĕ, чипер кайăр, килсе çӳрĕр текен сăмах пулмарĕ, кăвакал пек енчен енне тайкаланса пӳрте кĕрсе кайрĕ.

Акулина пысăк пушă сумкине çĕклерĕ те калиткене уçрĕ. Шăпăр-шăпăр юхакан куççульне ал тупанĕпе шăлчĕ те йăмăкне ыталарĕ:

— Ăсатма ан пыр. Чуна йывăр пулать. Халь ман йывăр сумка сĕтĕрмелле мар. Кунта килнĕ чух йывăр çĕклесе пилĕк хускалчĕ. Ну, йăмăкăм, ытла кансĕр пулсан хамăр пата пыр. Пĕр кĕтес тупăнĕ. Ав ман автобус та килсе чарăнчĕ. Сывă пул, атте кил-çурчĕ — ачалăхăм, çамрăклăхăм юрласа иртнĕ кĕтес. Малашне Çимĕкре масар çине çеç килсе çӳремелле пулать пуль. Пĕр-пĕр машина е такси тытса килĕп.

* * *

Автобус чарăнăвне çитеспе çумăр пĕрĕхкелеме пуçларĕ. Унтан пĕр аслатисĕр-мĕнсĕр витререн тăкнă пек чашлаттарчĕ. Халиччен вăтăр градусран иртекен шăрăхпа ăшаланса асапланнă çĕр ассăн сывласа илчĕ те Турă панă сĕткене антăхса çăтма пуçларĕ. Халăх туххăмрах автобус ăшне тарса пытанчĕ. Акулина та хăйĕн вырăнне йышăнчĕ. Автобус та çумăршăн савăннă тейĕн, вырăнтан пысăк хавхаланупа хускалчĕ. Шофер та хаваслă, текех кашни ву-

нă-çирĕм çухрăмрах тимĕр утне чарса сивĕтмелле мар-çке.

Акулина шухăша путрĕ. Килĕшӳллĕ, туслă, йышлă çемьере ӳссе çитĕнчĕç вĕсем. Ашшĕпе амăшĕ ял çинче ятлă-сумлă çынсемччĕ. Çичĕ ачине пĕр тан, уйăрмасăр пăхатчĕç. Акулинăпа Алевтина амăшĕ ытти пилĕк ачашăн тăван амăшĕ пулман. Упăшки вăрçăра пуçне хурсан вăл кунта иккĕмĕш хут качча пынă. Пĕрремĕш упăшкинчен ача-пăча юлман. Якурăн малтанхи арăмĕ те йывăр чирленĕ хыççăн çĕкленеймен — пилĕк ачине тăлăха хăварса пурнăçран уйрăлнă.

Марье аппа тăлăхсемшĕн питĕ тимлетчĕ. Лешсем те ăна тăван амăшне юратнă пекех юрататчĕç. Пĕчĕк чухне Акулинăпа Алевтина виçĕ аппăшĕпе икĕ пиччĕшĕ урăх аннерен çуралнине пĕлмен те. Паян кунччен питĕ туслă вĕсем. Ашшĕ-амăшĕ панă пиле ăша хывса пурăнаççĕ. «Пĕр-пĕрне ан пăрахăр. Эсир аван пулсан — пире те леш тĕнчере канлĕ пулĕ», — терĕ амăшĕ куçне ĕмĕрлĕхех хупас умĕн. Çичĕ ачи те амăшĕ умне чĕркуçленнĕччĕ ун чухне. Ашшĕ икĕ çул маларах пурнăçран уйрăлса кайнăччĕ.

Ачисем пурнăçра пурте хăйсен вырăнне тупрĕç. Тĕрлĕ çĕрте тĕпленнĕ пулин те пĕрпĕринпе тăванла çыхăнăва татмаççĕ. Акулина та кӳршĕ ял ачипе пĕрлешсе Шупашкарта тĕпленчĕ. Упăшки те, хăй те — паллă çынсем. Икĕ ача çуратса ӳстерчĕç, аслă пĕлӳ пачĕç. Кам кăна çук пуль вĕсен ăратĕнче. Аппăш-пиччĕшсен ывăл-хĕрĕ те сумлă профессисем алла илнĕ.

Алевтинăн кăна шăпи йывăртарах пулчĕ. Институт пĕтерсе ют чĕлхе вĕрентекенĕн дип-

ломне алла илнĕччĕ вăл. Белоруссие янăччĕ ăна. Унтах çемье çавăрчĕ. Анчах та ачине çуратсан йывăр чирлерĕ. Упăшкин тимлĕхĕ нумая пымарĕ. Хунямăшĕ те чашкăрса анчах çӳреме пуçларĕ. Алюш иккĕре чухне ашшĕ-амăш килне таврăнчĕ Алевтина...

Акулина килне çитсе хывăннăччĕ кăна, телефон шăнкăртатрĕ.

— Аппа, кунта ман кин асар-писер тăман тустарать. Укропа мĕншĕн çавăн чухлĕ парса ятăн тет.

— Эх, тĕнче! — макăрса ячĕ Акулина. — Кун пеккине пуçласа илтетĕп. Ура айĕнче çум курăк пек ӳсекен укроп та шел пулчĕ иккен.

...Кермен пек çурта пырса кĕчĕ Маша кинĕ. Пĕртăвансем пухăнса-канашласа ашшĕ-амăш çуртне тĕпрен юсанăччĕ.

— Хамăра килсе çӳреме кăмăллă пулĕ, — терĕ аслă пиччĕшĕ Микулай.

Алюш Машăна качча илесшĕн те марччĕ, пĕртăвансем лешĕн çие юлнине пĕлсен çине тăчĕç. Ара, пурпĕрех пăрăнайман пулĕччĕ унран каччă. Епле çил-тăман кăларса пычĕ те вăл Алевтина патне.

— Тĕрмере çĕртетĕп ывăлăра! — тесе пĕтĕм урама янратрĕ.

— Çынна йĕртмелле мар. Ачу хăвăнтан пулсан авлан — çирĕппĕн каларĕ Алевтина та.

Пĕр çулранах тилхепе пушаннине туйса илчĕ кинĕ. Килте тĕп хуçа пулса тăчĕ. Алюшпа Алевтина сăмахĕ çук кунта. Упăшки сассине хăпартсанах прокурор патне каяссипе хăратать. Ара, лешĕ прокурора пулăшакан пулса тăрăшатьçке-ха.

Пĕр вăхăт пуçне усса ларнă хыççăн Акулина Алюш патне шăнкăравларĕ.

— Итлетĕп, мăн акка, — илтĕнчĕ лăпкă, кăмăллă сасă.

— Алюш, ачам, халиччен пирĕн тăвансен хушшинче киревсĕр лару-тăру пулман. Аннӳнтен капла мăшкăллатăр пулсан пур пĕртăвана пуçтаратăп, çурта пысăк хакпах сутатпăр. Ун пек кермене район центрĕнче туххăмрах ярса илĕç. Алевтинăна хамăр пата илсе килетĕп. Ăна, чирлĕскере, пирĕн патра канлĕрех те пулĕ. Хăвах пĕлетĕн, эсĕ пирĕншĕн пĕчĕкрен хамăр ача пек пулнă, пĕрле пурăннă. Ун валли те пĕр кĕтес тупăнĕ. Аннӳн пенсийĕ çителĕклĕ. Тăкăсланмалли çук, — çапла каларĕ те Акулина телефон кĕпçине хучĕ.

Пĕр пилĕк минутран телефон каллех сас пачĕ. Алюш шăнкăравлать иккен.

— Мăн акка, çын çине шăв-шăв кăларас марччĕ. Эпĕ çемçешкерех пултăм пулас. Тилхепене хытармаллах пулать. Ачаш шăпчăк пек юрлакан хĕрте çăткăн кашкăр чунĕ амаланнă иккен. Хытараймасан — уйрăлатăп. Ачана шел паллах.

— Эпĕ сирĕн пурнăçăра пăсас теместĕп, анчах та çемьере арçын сăмахĕ тĕпре пулмалла. Сирĕн çемйĕр телейлĕ пулсан пирĕншĕн те пысăк савăнăç. Алевтина мăнукне Сашука та питĕ юрататć. Ну юрĕ. Эпĕ асăрхаттартăм.

Акулина укроп пирки сăмах хускатмарĕ, пакета илчĕ те çӳп-çап витрине кайса пăрахрĕ. «Ун пек сăмахлă япалана ăша ярас мар», — пăшăлтатрĕ типсе куштăркана тути.

## ГОСПОДИН

Юрласа пырать урампа утмăл пилĕкри отставкăри подполковник: «Утатпăр утмăла-а-а, çитетпĕр çитмĕле-е-е», — янăрашать вăл. Ара, юрламасăр епле чăтăн. Пенси укçине каллех ӳстерчĕç. Арçын сулахай кăкăрне шап-шап шаккаса илчĕ. Кунта, курткăн шалти кĕсйинче, мĕн чул укçа! Ăшăтать вăл чунчĕрене, лăпкать. — Пурăнасчĕ-ха, туссем, пурăнасчĕ, таврари хĕрарăма юратасчĕ, — ĕнĕрлет арçын. — Эх! Кунĕ мĕнле паян! — сасăпах савăнать Кирилл Николаевич. — Эх, чун юрла-ать, ман чĕре юрла-ать, ватлăхăмра йăпанмалăх юрату шы-ра-ать.

Çанталăк та Кирилл Николаевичпа пĕрле савăнать пулас. Ирхине сулхăнрахчĕ. Тĕтре карса илнĕччĕ тавралăха. Халь ав епле ешерет тавралăх! Хĕвел йăл-йăл кулать. Çулăн икĕ енĕпе ӳсекен хурăн çулçисем шĕпĕлтетеççĕ. Пĕрисем калашле: «Кивçен ил те ĕç», — теççĕ пулас.

Кирилл Николаевичăн мĕн тума кивçене каяс? Ун яланах укçа пур. Вăл çак çула çитсе ĕç укçине те, пенси укçине те арăмне парса курман. Мĕн те пулин туянмалла пулсан арăмĕ, йăпăлти кушак хуçи куçĕнчен апат ыйтса илнĕ пек, тилмĕрсе пăхать. Çак вăхăтра Кирилл Николаевич хăйне чăн-чăн пурнăç хуçи пекех туять. Ак паян та çаплах пулчĕ.

— Кириле, ман аялтан тăхăнмалли кĕпе-йĕм те кивелчĕ. Тухтăр патне тăхăнса кайма намăс. Çĕннине илме укçа параймăн-ши кăштах, — терĕ арăмĕ.

— Ара, эс нумай пулмасть кăна пенси илтĕн вĕт. Ма кĕпе-йĕм туянмарăн?

— Эх, Кириле! Ман пилĕк пин пенсие ăçта чикмелле-ши? Коммуналлă тăкаксемшĕн, телефоншăн тӳлеме çурри каять, булка-çăкăр валли — кунне алă тенкĕ. Сĕтшĕн эрнене çĕр çирĕм тенкĕ тӳлетĕп. Эс укçа шутлама пĕлетĕн те, анчах хăвăн кĕсйӳрине кăна шутлатăн çав. Апатне те тутлине кăна çиесшĕн.

— Юрĕ, ан лăрка. Ме сана пилĕк çĕр тенкĕ, — тăсса пачĕ вăл арăмне пĕр хут укçа. Алли чĕтрет хăйĕн.

— Иртрĕ ĕмĕр, — шăппăн каларĕ арăмĕ. — Çак господин куçĕнчен пăхсах ватăлтăм. — Вăл кухньăра тăрмашма пуçларĕ.

Итлемерĕм аннене,<br>Анне усал сунас çук.<br>Халь йĕретĕп куççульпех,<br>Чавса çывăх — çыртма çук, —

шăппăн юрларĕ ватă хĕрарăм вĕри куççульне çăтса.

Тĕрĕс те. Ывăлпа хĕр çуратнисĕр пуçне нимĕн аваннине те курмарĕ вăл пурнăçра упăшкинчен. Сывă-и ун ачисем, выçă-и, тутă-и — нихăçан та интересленмен Кирилл Николаевич. Кашни пуса тилмĕрсе ыйтмалла унран. Юрать ачисем ăна хывмарĕç, ырă кăмăллă, ĕçчен, çивĕч ăс-тăнлă çитĕнчĕç.

Укçине хăй пĕлнĕ пек тăкаклать арçын. Паян та самай укçа пĕтерчĕ вăл, анчах та çемйи валли мар.

Перекет кассинчен тухса инçех те каяйманччĕ арçын, акăш пек ярăнса, йăл-йăл елпĕрсе, ик аллине çунат пек сарса хирĕç утакан Аленăна курчĕ. Вăл Кирилл Николаевич перекет кассинчен тухасса сыхласа тăнă ахăртнех. Çак вăтăр пиллĕкри хĕрарăм ниçта та

йĕркеллĕ ĕçлеймест. Вĕсем амăшĕпе иккĕшĕ, юмахри пек, пурлăх йăтăнса анасса кĕтсе пурăнаççĕ. Илемĕ пур вара Аленăн. Çавăнпа усă курса пурăнать те. Аслă çул çине те тухкалать теççĕ...

— Ну çар çыннисене юрататăп та вара. Подполковниксене пушшех те, — пырса ыталарĕ вăл хайхискере. — Эсир, Кирилл Николаевич, пĕртте ватăлмастăр. Яланах каччă пек...

Сар çу пекех ирĕлет вара арçын çак çепĕç сăмахсене илтсен.

Паянхи «ырлăха» аса илсе йăл-йăл кулкалать Кирилл Николаевич. Хăй арăмĕ çине çиллес куçпа пăха-пăха илет.

«Çак тункатаран çепĕçлĕх кĕтсе илеймĕн, ялан ăмăр пĕлĕт пек ун сăн-пичĕ», — тарăхса шухăшларĕ вăл.

— Мĕн, апат пиçнĕ-и унта санăн?!

— Пиçнĕ, пиçнĕ. Сĕтел хатĕрлес-и?

— Мĕн пĕçернĕ?! — кăсăкланчĕ арçын.

— Кăмпапа çĕр улми ăшаларăм. Эс юратнă пек, — ăшталанчĕ арăмĕ.

— Хăв çисе пăхрăн-и?

— Çинĕ, çинĕ.

— Мĕн чухлĕ вăхăт иртрĕ унтанпа?

— Икĕ сехет те иртрĕ пуль.

— Апла пулсан вилместĕп. Хатĕрле сĕтел.

«Эп вилсен те хуйхă мар паллах куншăн», — кулянса шухăшларĕ хĕрарăм. Вăл упăшкин сăмахĕсене аса илчĕ.

«Трамвай-автобус çине мана нихăçан та çынсен арçыннисем пек малтан лартмастăн», — кӳренсе каланăччĕ вăл пĕррехинче упăшкине. Çакна илтсен Кирилл Николаевич икĕ пĕç-

çине çапа-çапа ахăлтатрĕ. «Пĕлетĕн-и пĕр-пĕр çĕре хĕрарăма малтан кĕртесси ăçтан пуçланнине? Вăл ĕлĕкрен, çынсем пещерăсенче пурăннă вăхăтранах, килет. Ун чух арçынсем пĕр-пĕр тискер чĕр чун хăйсене туртса çурасран хăраса хĕрарăма пещерăна малтан кĕртсе янă. Ман халь мĕнрен хăрамалла? Трамвай-автобусра мана никам та туртса çурас çук. Ха-ха-ха!» — лахлатса кулчĕ арçын.

Арăмĕ сĕтел майларĕ те кухня алăкне шăппăн хупрĕ. Юратмасть упăшки апат вăхăтĕнче кухньăра çын пуррине. Рехетлентĕрех пĕччен. Чаплаттартăрах сысна аçи пек икĕ пит çăмартине силлентерсе.

## ТĔЛĔК

Те ир ку? Те уйăх çутиллĕ каç? Йĕри-тавра те çеçен хир, те тинĕс-океан? Янкăр тӳпе пек те туйăнать. Ниçта та нимĕнле çурт-йĕр те, чĕр чун та курăнмасть. Ӳсен-тăран та çук кунта. Йывăççем те ӳсмеççĕ.

Шăплăх. Чуна çӳçентерекен шăплăх.

— Хĕрĕм, ут ман хыççăн, ан хăра, — илтрĕ Антонина Васильевна.

Кам сасси? Ăçтан килет ку сасă? Питĕ чуна çывăхскер. Лăпкать, ачашлать вăл чуна. Ара, амăшĕн сасси-çке. Пулма пултараймасть! Амăшĕ çут тĕнчерен уйрăлса кайнăранпа нумай çул иртрĕ ĕнтĕ.

— Эпĕ ку, Туня, эпĕ ку. Аннӳ-çке. Ан хăра манран. Эпĕ сана илме килтĕм, — ачашшăн çупăрларĕç паллакă алăсем.

Çав вăхăтра Тоня умне çĕртен тӳпенелле кармашакан, лăс-лăс силленекен чикмек пырса тăратрĕç. Амăшĕ çав чикмек тăрăх çӳлелле йăпăр-япăр улăхса кайрĕ те аллипе Тоньăна кăчăк туртса чĕнчĕ:

— Улăх, улăх, хĕрĕм. Манран ан юл.

Пусмаран пусма çине улăхать Тоня. Анчах та ниепле те амăшне хуса çитеймест. Пусми-

сем те çирĕп пек. Вĕсене савалантă сап-сарă хăмаран ăсталанă. Сарлака хăйсем. Темшĕн çак пусмасем пусмассерен унта-кунта силленеç-çĕ, чӳхенеççĕ, Тоньăна амăшĕ хыçĕнчен ярас-шăн мар тейĕн.

Акă ĕнтĕ амăшĕ çӳлти пусма çинче тăрать. Таçтан вĕр çĕнĕ, сап-сарă шултра пĕренесен-чен ăсталанă сарă кермен пек çурт тухса тăчĕ. Малтанласа çукчĕ-çке вăл. Амăшĕ çав çуртăн пусми çине пусрĕ, Тоньăна кăчăк туртса чĕнет. Хăпарса çитнĕпе пĕрехчĕ ĕнтĕ, пусма лăс-лăс силленчĕ те, хĕрарăм аялалла персе анчĕ. Çук, сусăрланмарĕ вăл. Нимĕн те ыраттармарĕ. Пуç-не тепĕр хут çĕклерĕ те хăй умĕнче çав çурта улăхмалли вĕр çĕнĕ пусмана курчĕ. Питĕ хăвăрт хăпарса кайрĕ Тоня çӳле амăшĕ патне. Алăка уçса ун хыççăн кĕресшĕн пулчĕ çеç — çав вă-хăтра арçын сасси янăраса кайрĕ:

— Мĕнле йĕркесĕрлĕх кунта?! Ку турпассе-не кам пуçтарать?!

Тоня аялалла пăхрĕ те темĕнле çынсене кур-чĕ. Пурте хура тумпа. Вĕсем тăракан тĕлте — вĕр çĕнĕ турпассем, саваланă хыççăн юлнă çӳп-çап. Хĕрарăм улăхиччен çукчĕ-çке вĕсем унта, йĕри-тавра тирпейччĕ.

— Пуçтарăпăр. Хамах пуçтаратăп. Эпĕ кун-та çĕнĕ çын-ха. Çавăнпа ĕлкĕреймерĕм, — тӳрре тухма васкарĕ вăл.

Çапла каларĕ те вăранса кайрĕ. Антонина Васильевна вырăн çинче выртать. Хускалас та килмест унăн. Мĕне пĕлтерет ку? Амăшĕ илме килни ырра мар. Юлашки вăхăтра час-час чир-лекен пулчĕ Тоня. Кам чирлемест пулĕ? Пур-те чирлеççĕ. Çине тăрса сипленеççĕ те чĕрĕ-леççĕ. Хĕрарăм аллипе вырăна хыпашласа

тĕрĕслерĕ. Эппин, тĕлĕк çеç курăннă ăнą, килтех вăл. Упăшки те çумрах. Пăравус пекех чăхăмла-чăхăмла харлаттарать. Чӳрече карри витĕр ирхи çутă сăрхăнса кĕрет. Курнă тĕлĕк пирки асапланать Тоня. Кун пек уçăмлă, асра юлаканнисем сайра пулаççĕ пурнăçра.

Сӳрĕк кăмăлпа çĕкленчĕ хĕрарăм вырăн çинчен, аллисем те ĕç патне пымаççĕ.

Антонина Васильевна турăш умне тăрса сăхсăхрĕ:

— Эй, Çӳлти Турă, усал-тĕселтен сыхласамччĕ, мана пурнăçран халех ан уйăрсамччĕ. Эпĕ çамрăк вĕт-ха. Вилĕмрен хăрамастăп та, мăнуксене те утьăкка сиктерес килет-çке. Хĕре качча парасчĕ, кин кĕртесчĕ. Мăнуксене кĕтсе илсе вĕсене ура çине тăма пулăшасчĕ.

Унтан упăшкине тĕрткелесе вăратрĕ те хăй курнă тĕлĕке каласа пачĕ.

— Ырă мар тĕлĕк паллах, анчах ан кулян. Аннӳ уçнă алăкран кĕмен вĕт эс. Арçын сасси Çӳлти Атте Турă сасси пулнă тейĕпĕр. Вăл сана аннӳ хыççăн кайма чарнă. Ман ку тĕлĕк çинчен, пурнăç пирки шухăшламалла.

* * *

Ниепле те тухмасть çак тĕлĕк Антонина Васильевна асĕнчен, пĕр вĕçĕмсĕр хăй çинчен асăрхаттарать. Хăть пĕр саманчĕ, пĕр сăмахĕ те пулин манăçасчĕ. Типсе шурса кайрĕ хĕрарăм. Апат анмасть. Алли-ури ĕç патне пымасть. Тĕлĕнсе пăхаççĕ ун çине паллакансем. Кăшкарĕ çеç тăрса юлчĕ илемлĕ, тăп-тăпăл кĕлеткеллĕ хĕрарăмран. Чирĕ шалалла кайрĕ пулас. Ăша пусарса калаçма та çын кирлĕ-çке. Чĕмпĕр хулинче упăшкин те, хăйĕн те пĕр тăван та çук.

Тус-юлташсен кашнийĕнех хăйĕн пурнăçĕ. Итлеççĕ, шелленĕ пек ассăн сывлаççĕ те çакăнпа çырлахаççĕ. Тăван тăвалла туртать тесе ахальтен каламан çав. Ӳкĕнет халĕ Антонина Васильевна упăшкипе тăванĕсен çывăхнелле тĕпленменшĕн. Юрать-ха ачисем тимлĕ. Шкул пĕтернĕ хыççăн иккĕшĕ те аслă шкула вĕренме кĕчĕç. Хĕрĕ тухтăр пуласшăн, ывăлĕ вара юрист лавне туртма ĕмĕтленет. Хĕрĕ пĕр çул анчах аслăрах кĕçĕннинчен. Умлăн-хыçлăн килчĕç вĕсем çут тĕнчене. Туслă пурăнаççĕ ачисем. Пĕчĕк чухне те теттесемшĕн харкашни пулман. Улăштарса е пĕрле вылятчĕç. Коля шофер пулса Ленăн пуканийĕсене яла асламăшĕ патне илсе каятчĕ. Ялĕ вара коридорăн пĕр кĕтесĕнче вырнаçнăччĕ.

— Сана лартаймастăп. Эсĕ юнашар утса пыр. Эпĕ хытă хăваламăп машинине, — тетчĕ.

Темиçе роль выляма тиветчĕ вĕсен пĕр вăхăтрах. Антонина Васильевнăна пĕр пулăм аса килчĕ.

— Аван-и, асанне? Эпир çитрĕмĕр. Лена, кучченеçсене хăвăртрах кăлар-ха.

— Эй, нянккасем, эй, чĕппĕмсем, — пырса ыталарĕ Кольăна пуçне шурă тутăр çыхнă, кăштах пĕкĕрĕлнĕ Лена. — Çул çинчен куçа илместĕп сире кĕтсе. Ленук ăçта тата?

— Кучченеçсене пушатать-ха. Асанне, асатте ăçта? Пулла кайман пуль те?

— Эй, няняккам, сирĕнсĕр пулла епле кайтăр аслаçу?

Коля пуçне карттус тăхăнчĕ те кĕтесрен патак илчĕ, уксахларах васка-васка хĕр ачана çаврăннă Лена патне пычĕ.

— Вăт мĕнле пысăккă ӳссе кайнă манăн мăнуксем, — çупăрларĕ вăл «мăнукне».

Çакна курса тăракан ашшĕпе амăшĕ варĕсене тытсах кулчĕç...

— Аннеçĕм, — терĕ пĕр ирхине Лена. — Куратăп, сан сывлăху йăшсах пырать. Больницăна выртсах пур енлĕн тĕрĕслеттермелле сывлăхна.

— Майĕпен-майĕпен майлашăп-ха. Ĕçре эп хама лайăххрах туятăп. Ачасене те шел. Вĕсем урăх вĕрентекене йывăррăн хăнăхаççĕ.

Пĕрремĕш классем унăн кăçал. Чăх чĕпписем амăш патне туртăннă пекех туртăнаççĕ вĕсем учителĕ патне.

— Анне, ачасене те сывă учитель кирлĕ.

— Чиркĕве кайса килесшĕн-ха. Юлашки вăхăтра унта пачах та пулман эпĕ.

Упăшки те пăшăрханать арăмĕн сывлăхĕ пирки. Петр Иванович, пĕр заводра цех начальникĕ пулса тăрăшаканскер, ĕлĕкрех килти ĕçсене арăмĕпе ачисем çине тиеме тăрăшатчĕ. «Сан ав мансăрах икĕ пулăшакан», — текелетчĕ.

Шкула пухусене те пит çӳремен вăл. Мăшăрĕ шкулта ĕçленипе ачасене унăн воспитанийĕ çитет тесе шутланă пуль.

Пĕррехинче питĕ кăсăклă самант пулчĕ. Пыраççĕ урампа Антонина Васильевнăпа Петр Иванович шăкăл-шăкăл калаçса. Çанталăкĕ те вĕсен кăмăлĕ пекех ăшă та янкăр.

— Сывлăх сунатăп. Мĕнле пурăнатăр? Петр Ивановича курманни пайтах пулать. Питĕ ĕçлĕ çын пулас вăл? — ăшшăн кулкаласа пырса тăчĕ вĕсен умне çамрăк, илемлĕ, питĕ килĕшӳллĕ, юлашки модăна пăхăнса тумланнă хĕрарăм. — Çут çанталăкпа киленетĕр пулас?

— Пĕртте тултан кĕрес килмест паян. Пире

ĕçĕ те яланах хăйĕн серепинче тытса тăрасшăн та, паян уçăлса çӳреме май тупасах терĕмĕр, — евĕккĕн тавăрчĕ Антонина Васильевна.

— Ан та калăр. Пирĕн килте те пĕр лав тетрадь тĕрĕслемелле. Ну, ыранччен, Антонина Васильевна. Сывă пулăр, Петр Иванович.

Хĕрарăма тĕсесе пăхса ăсатрĕ арçын.

— Кам пулчĕ-ха ку? Питĕ çывăх çын пек калаçать.

Антонина Васильевна пĕрĕхтерсе кулса ячĕ:

— Ой, кулса вилеп! Петя, паянхи тĕлпулу пулман пулсан ывăлун класс ертӳçи кам пулнине те пĕлмесĕрех юлаттăн. Э-эх, воспитатель. Ывăлупа хĕрӳ ӳснине те сисмесĕрех юлтăн вĕт.

— Мда-а. Çапла çав. Кольăнне пĕлмен те, Ленăнне вара кунсерен тенĕ пекех курса калаçнă. Ну, мĕнле воспитатель эпĕ?

— Çапла, — кулчĕ арăмĕ. — Пĕр площадкăра вырнаçнă хваттерте пурăнакан хĕрарăма асăрхамасăр юлма йывăртарах.

— Тоня, астăватăн-и пирĕн малтанхи тĕлпулăва? — ачашшăн пăхрĕ упăшки мăшăрне куçран. Куçĕсем ĕлĕкхи пекех хĕм сапаççĕ. Мĕн чул туйăм унта! Калăн ак-ак пĕрремĕш хут туйăмĕсем çинчен пĕлтерет тесе.

— Çук, манман, — йăвашшăн пăхрĕ хĕрарăм упăшкине куçран. — Манма та пултараймастăп. Эсĕ мана халиччен чĕрене хытармалăх пĕрре те кӳрентермен-çке.

— Кăштах пулнă пуль те-ха.

— Кăштах-и? Чĕрне хури чухлĕ те çук пуль. Тавах сана, Петя. Пурнăçра санпа юнашар утнишĕн пĕрре те ӳкĕнместĕп. Ӳкĕнес те çук пулĕ тесе шутлатăп.

— Эх, Тоня. Мĕнле кӳрентерĕн-ха сана. Эпĕ сана савнийӳнтен туртса илнĕ чухне хама сăмах панă. Арçын сăмахне. Эпĕ вара сăмаха çилпе вĕçтерме хăнăхман, — ытарлăн çупăрларĕ мăшăрне арçын.

Кун пек пĕрле уçăлса çӳрени сайрарах пулать те, иккĕшĕ те килнеççĕ çут çанталăк илемĕпе. Петр Иванович иртен пуçласа каçчен ĕçре. Канмалли кунсенче те канăç çук ун валли.

Юлашки вăхăтра упăшки улшăнсах пычĕ. Ĕçре те пит вăрах тытăнса тăмарĕ. Май пур таран пулăшма тăрăшрĕ. Ĕлĕк алла пылесос тавраш тытманскер халĕ чиперех тусан пуçтарать. Савăт-сапа та çăвать, çĕр улми те шуратать. Ывăлĕ те канăçсăрланать амăшĕн сывлăхĕ пирки. Лена та, Коля та яланах ăшă сăмахпа та, ĕçпе те хавхалантарма тăрăшаççĕ.

— Çитет çут çанталăкран пулăшу кĕтсе. Ыран хам илсе каятăп сана тухтăр патне, — хытарсах каларĕ Петр Иванович пĕр ирхине.

Антонина Васильевна хирĕç нимĕн те каламарĕ.

Кĕçĕн класра вĕренекенсем шăмат кун канаççĕ. Антонина Васильевна ирхине ирех чиркĕве тухса утрĕ. Ăçтан-тăр вăй килнĕ пек туйрĕ хăйне.

Чĕррисемшĕн Турăран сывлăх, вилнисемшĕн леш тĕнчере чун лăпкăлăхĕ ыйтса çуртасем лартрĕ. Ирхи кĕлĕ пĕтичченех пулчĕ чиркӳре хĕрарăм. Хăй пĕлнĕ пек кĕлтурĕ. Кунта çамрăксем те пур. Палланă çынсем те курăнкалаççĕ. Халь совет самани мар.

Антонина Васильевна хăй мĕнле шыва кĕнине аса илчĕ. Çирĕм пĕр çул тултарнă хĕрччĕ вăл ун чухне. Учительсен çемйинче çуралса

ӳснĕскер чиркӳрен аякра тăнă паллах. Турăш тавраш пулман вĕсен килĕнче. Пĕчĕк ача çеç пулнă пулин те астăвать çакна: малти пӳлĕмри хĕрлĕ кĕтесре урайĕнчен пуçласа маччана çити Сталин портречĕ вырнаçнăччĕ. Çитĕнсе çитсен хĕр чиркӳре шыва кĕме шутларĕ. Мĕнле пурнăçа кĕртмелле çакна? Студентка, комсомолка-çке. Паллană хĕрарăмпа калаçрĕ те иккĕшĕ чиркĕве пачăшкă патне кайрĕç. Пачăшкă ирĕк панипе çав хĕрарăм паспорчĕпе шыва кĕме килĕшрĕ Тоня.

Ун чухне паспорт кăтартмасăр шыва та кĕртмен чиркӳре, кам хăçан шыва кĕнине виççĕмĕш куннех кирлĕ çĕре, çӳлти влаç тытăмне, пĕлтермелле пулнă.

Хĕрарăмĕ Тоньăран пĕр вун пилĕк çул аслăскерччĕ.

Çапла Турă умĕнче хăй ячĕпех, анчах хут çинче Белова Александра пулса Христос тĕнне йышăнчĕ хĕр. Хĕреснамăшĕ çав хĕрарăм пулчĕ. Ун чухне институт общежитийĕнче пурăнатчĕ Тоня.

Виçĕ кунран ăна вахтăна телефон патне чĕнчĕç.

— Мухтав Турра, пире сыхларĕ. Мĕнле йыврлăха кĕрсе ӳкнĕ пулăттăн-ши эсĕ хăв паспортупа шыва кĕнĕ пулсан, — хыпăнса калаçрĕ хĕреснамăшĕ.

Виçĕ кунран Белова Александрăна шыраса КГБра ĕçлекен икĕ арçын пычĕ. Эх, тĕпчеççĕ тет, эх, намăслантараççĕ тет. Лешне мĕн? Вăл студентка мар. Комсомолка та мар. Туртса илсен — урай çăвакан мунчалине туртса илĕç. Уборщица пулса ĕçлетчĕ вăл Тоньăсен общежитийĕнче. Ачисем вĕренекен шкула кайса

пĕлтерессипе хăратаççĕ тет. Çапах кайса çӳремен пулас. Урăх ниçта та чĕнтермен хĕреснамăшне...

Лăпланса вăй илнĕ пек таврăнчĕ хĕрарăм килне.

— Тоня, кам çапла хăтланать, — кăмăлсăр калаçрĕ упăшки. — Эпĕ машинăпа килсе çитрĕм. Хам маларах калаçса хунă паллă тухтăр патне илсе каясшăнччĕ, эсĕ килтен тухса тарнă.

— Ан кулян. Эпĕ тухтăр патĕнче пултăм. Веçех йĕркеллĕ пулать манăн.

Ăнланчĕ упăшки Тоня мĕнле тухтăр патĕнче пулнине. Урăх нимĕн те шарламарĕ.

* * *

Кашни шăмат кунпа вырсарни кун чиркĕве çӳрет Антонина Васильевна. Турăран пулăшу ыйтать. Хăйне авантарах туйнă пек, анчах та больницăна каймаллине те ăнланать хĕрарăм.

Çулталăк çитрĕ вăл чирленĕренпе.

— Эсĕ шĕпĕн курăкне пĕçерсе унăн шывне пĕчĕккĕн сыпкала-ха, — вĕрентрĕ пĕррехинче пĕрле ĕçлекен хĕрарăм. — Çав курăк ăш-чикри шыçăсене пĕтерет теççĕ.

— Тем тумалла. Ывăнса çитрĕм эпĕ. Пĕрре те шыва хирĕç ишес килмест. Алăпа сулас пуль пурнăç çине. Шел, ачасем çемье çавăрса ачапăчаллă пулнине кураймастăп.

— Эс, Антонина, хăвала кун пек шухăшсене, — сассине хăпартсах каларĕ ĕçтешĕ. — Урăх илтем мар. Никам хăлхине те пырса ан кĕтĕр кун пек калаçу. Сан мĕскер, упăшку начар-и? Ачусем йĕркесĕр-и? Пĕтĕм вăйпа, чунпа шăла çыртса пурнăçран çакăнмалла пирĕн. — Вăл пĕр вăхăт хушши лăпланчĕ те унтан ма-

лалла калаçрĕ: — Ан ман, арçын вăл хăй валли карта хыçне тухсан та тупать. Эпир ачасене кирлĕ. Ачасене-е. Пурăнасчĕ-ха. Пурăнатпăр та, — пырса çупăрларĕ вăл тантăшне.

— Тавтапуç сана мана хавхалантарса тăнăшăн, — куççулне шăлчĕ Тоня.

— Йĕри-тавра сăна-ха. Мĕнле илемлĕ çут тĕнче. Çак çут тĕнчерен вăхăтсăр уйрăлса кайни хăй пысăк çылăх. Çы-ы-лă-ăх, — чăпăрт чуптуса илчĕ Тоньăна ĕçтешĕ.

Илсе кайрĕ-кайрех упăшки Антонина Васильевнăна больницăна. Питĕ тĕплĕн тĕрĕслерĕç сывлăхне. Чылай анализ пама тиврĕ унăн. Юлашкинчен тухтăр хĕрарăм çине шеллерех пăхрĕ те коридорта кĕтме хушрĕ. Упăшкине кабинетра юлма ыйтрĕ.

Пĕтĕмпех ăнланчĕ Антонина Васильевна. Приговор ку. Рак чирĕ унăн. «Рак! Рак! Рак!» — шаккарĕ тăнлавĕнче.

— Нимĕнле стационара та выртмастăп! Рак чирĕпе чирлисем патне каймастăп. Кай-мастă-ăп! — кăшкăрчĕ вăл пĕтĕм чун ыратăвĕпе упăшки çăварне уçсанах.

— Тоня, килте ларса калаçăпăр, лăплан, — хăйне алла илме тăрăшса каларĕ арçын чĕтрекен сассипе.

— Кĕтсе илеймĕç! Пурпĕрех вилместĕп, — ĕсĕклерĕ Тоня машинăра.

— Вăт, кун пек эсĕ мана ытларах килĕшетĕн. Пурнăçшăн кĕрешмелле. Акă отпуск илетпĕр те санаторие каятпăр. Кăнтăра мар, хамăр облаçрах аван санаторисем пур. Кăнтăр хĕвелĕ саншăн сиенлĕ пулма пултарать.

— Мана ним те сиенлĕ мар. Эпĕ сывă! Сывă! Сы-ы-вă! Нумайрах канмалла анчах манăн.

пĕлтерессипе хăратаççĕ тет. Çапах кайса çӳремен пулас. Урăх ниçта та чĕнтермен хĕреснамăшне...

Лăпланса вăй илнĕ пек таврăнчĕ хĕрарăм килне.

— Тоня, кам çапла хăтланать, — кăмăлсăр калаçрĕ упăшки. — Эпĕ машинăпа килсе çитрĕм. Хам маларах калаçса хунă паллă тухтăр патне илсе каясшăнччĕ, эсĕ килтен тухса тарнă.

— Ан кулян. Эпĕ тухтăр патĕнче пултăм. Веçех йĕркеллĕ пулать манăн.

Ăнланчĕ упăшки Тоня мĕнле тухтăр патĕнче пулнине. Урăх нимĕн те шарламарĕ.

* * *

Кашни шăмат кунпа вырсарни кун чиркĕве çӳрет Антонина Васильевна. Турăран пулăшу ыйтать. Хăйне авантарах туйнă пек, анчах та больницăна каймаллине те ăнланать хĕрарăм.

Çулталăк çитрĕ вăл чирленĕренпе.

— Эсĕ шĕпĕн куракне пĕçерсе унăн шывне пĕчĕккĕн сыпкала-ха, — вĕрентрĕ пĕррехинче пĕрле ĕçлекен хĕрарăм. — Çав курăк ăш-чикри шыçăсене пĕтерет теççĕ.

— Тем тумалла. Ывăнса çитрĕм эпĕ. Пĕрре те шыва хирĕç ишес килмест. Алăпа сулас пуль пурнăç çине. Шел, ачасем çемье çаварса ачапăчаллă пулнине кураймастăп.

— Эс, Антонина, хăвала кун пек шухăшсене, — сассине хăпартсах каларĕ ĕçтешĕ. — Урăх илтем мар. Никам хăлхине те пырса ан кĕтĕр кун пек калаçу. Сан мĕскер, упăшку начар-и? Ачусем йĕркесĕр-и? Пĕтĕм вăйпа, чунпа шăла çыртса пурнăçран çакăнмалла пирĕн. — Вăл пĕр вăхăт хушши лăпланчĕ те унтан ма-

лалла калаçрĕ: — Ан ман, арçын вăл хăй валли карта хыçне тухсан та тупать. Эпир ачасене кирлĕ. Ачасене-е. Пурăнасчĕ-ха. Пурăнатпăр та, — пырса çупăрларĕ вăл тантăшне.

— Тавтапуç сана мана хавхалантарса тăнăшăн, — куççулне шăлчĕ Тоня.

— Йĕри-тавра сăна-ха. Мĕнле илемлĕ çут тĕнче. Çак çут тĕнчерен вăхăтсăр уйрăлса кайни хăй пысăк çылăх. Çы-ы-лă-ăх, — чăпăрт чуптуса илчĕ Тоньăна ĕçтешĕ.

Илсе кайрĕ-кайрех упăшки Антонина Васильевнăна больницăна. Питĕ тĕплĕн тĕрĕслерĕç сывлăхне. Чылай анализ пама тиврĕ унăн. Юлашкинчен тухтăр хĕрарăм çине шеллерех пăхрĕ те коридорта кĕтме хушрĕ. Упăшкине кабинетра юлма ыйтрĕ.

Пĕтĕмпех ăнланчĕ Антонина Васильевна. Приговор ку. Рак чирĕ унăн. «Рак! Рак! Рак!» — шаккарĕ тăнлавĕнче.

— Нимĕнле стационара та выртмастăп! Рак чирĕпе чирлисем патне каймастăп. Кай-мастă-ăп! — кăшкăрчĕ вăл пĕтĕм чун ыратăвĕпе упăшки çăварне уçсанах.

— Тоня, килте ларса калаçăпăр, лăплан, — хăйне алла илме тăрăшса каларĕ арçын чĕтрекен сассипе.

— Кĕтсе илейĕмĕç! Пурпĕрех вилместĕп, — ĕсĕклерĕ Тоня машинăра.

— Вăт, кун пек эсĕ мана ытларах килĕшетĕн. Пурнăçшăн кĕрешмелле. Акă отпуск илетпĕр те санаторие каятпăр. Кăнтăра мар, хамăр облаçрах аван санаторисем пур. Кăнтăр хĕвелĕ саншăн сиенлĕ пулма пултарать.

— Мана ним те сиенлĕ мар. Эпĕ сывă! Сывă! Сы-ы-вă! Нумайрах канмалла анчах манăн.

— Канмалли майне тупăпăр. Укçине те шеллемĕпĕр. Заводра та пулăшу парĕç, — хавхалантарчĕ упăшки.

Ним те калаймăн, лайăх çын тĕлне пулчĕ Тоня. Хĕр чухне хĕрĕх тус теççĕ те, Тоньăна кăмăллакан каччăсем пайтах пулнă. Питĕ илĕртӳллĕ хĕрччĕ вăл. Тăпăл-тăпăл кĕлетки, йăрăс çинçе пилĕклĕ пĕвĕ, çырăрах çӳçĕ — çаксем пурте килĕшсе хĕре хăйне евĕрлĕ асамлăх паратчĕç. Куçĕсем вара хĕм сапатчĕç. Симĕс тесен симĕс тееймĕн, кăвак тесен кăвак тееймĕн вĕсене. Яланах урăх тĕслĕ пек курăнатчĕç вĕсем.

— Ну, Тоня, эсĕ кун пек куçсемпе хăть мĕнле каччăна та хăв енне çавăрма пултаратăн. Пĕрре çеç мăч-мăч тутарса ил, — шӳтлетчĕç ыр сунакансем.

— Тем ан калаçăр-ха. Пĕртте ун пирки шутламастăп. Турă çырни пулсан мăчлаттармасăрах тупăнĕ-ха.

Халĕ мĕн тăрса юлчĕ хĕрарăмран. Тĕкĕр патне те пыма хăрать вăл. Типшĕм пит, путса кĕнĕ тĕссĕр куçсем пăхаççĕ ун çине.

— Атя пасара кĕрсе тухар-ха. Пахча çимĕç, улма-çырла туянар. Халĕ ун пек япаласене ытларах çимелле санăн. Ĕне пĕверне пиçи-пиçми хатĕрлесе çиме хушрĕ тухтăр, — пасар патне каякан çул çине пăрчĕ машинине упăшки. — Эсĕ машинăрах лар. Веçех хам илсе килĕп.

— Кăштах уçă сывлăшпа сывлам-ха. Эсĕ уттар. Эпĕ кунтах пулăп.

— Пирогова, эсех-и ку?! — илтрĕ сасартăк вăл арçын сассине.

Çаврăнса пăхрĕ те пĕр типшĕмрех, лутрарах пӳллĕ, пĕркеленчĕк питлĕ, ял çыннилле

тумланнă арçынна курчĕ. Кам-ха ку ăна хĕр чухнехи хушамачĕпе чĕнекенскер? Тоня ку çынна палламасть-çке.

— Эпĕ те-ха. Эсир кам пулатăр вара?

— Д-а-а, аран палласа илтĕм. Ватăлса кайнă эс.

— Çапла пуль те-ха. Кам пултăр-ха? Эсир çап-çамрăк тăратăр та, эпĕ сире çавах паллаймарăм.

— Эс мĕн, Куклиева? Пĕр çул каярах вĕреннĕ Алексеев вĕт эп. Эх, мĕнле хĕрччĕ эс! Пĕтĕм хамăр ял, кӳршĕ ял каччисем сан хыçран чупатчĕç. Эпир вăрттăн сăнаттăмăр сана.

— Миçе çул иртрĕ-ха унтанпа? — йăвашшăн кулчĕ Тоня. — Тăхăр класс пĕтернĕренпе курман сана. Вăтăр çул ытла иртрĕ ĕнтĕ. Паллаймарăм çав сана, Автанчик, каччă пек курăнсан та, — кăшт йĕкĕлтерех тавăрчĕ Тоня. — Тавтапуç сана мана, ватăлнăскере, палласа асăрханăшăн.

Тоньăна шкулта йĕкĕлтесе Куклиева тетчĕç. Алексеева Автанчик ят панăччĕ. Вăл усал автан пекех сиксе ларатчĕ хăйне кӳрентерекен çине.

Тĕл пулнăшăн савăнса вĕсем пĕр-пĕринчен ял-йыш çинчен ыйтса пĕлчĕç. Тоня кăмăллăн кулкалать. Ачалăха таврăнчĕ мар-и.

— Ну, Куклиева, чипер юл. Сывлăхпа çӳре.

— Сана та çавнах сунатăп, Автанчик. Ял-йыша салам.

Çапла уйрăлчĕç вĕсем. Тоня чĕринче çутă хĕлхем çуралчĕ. Вăтăр çул иртсен палласа илчĕç ăна. Апла пулсан питех ватăлман та вăл.

Акă икĕ тулли пакет йăтнă упăшки çитрĕ те, вĕсем килелле çул тытрĕç. Ачисене амăшĕн

хăрушă чирĕ пирки пĕлтерес мар тесе калаçса татăлчĕç. Халĕ хĕрĕ килте çук-ха. Вăл яла аслашшĕпе асламăшĕ патне кайнă. Час-часах унта кайса çӳре пуçларĕ Лена.

— Эсĕ унта чун уççи тупман-и хăв валли? — шӳтлесе ыйтрĕ пĕррехинче амăшĕ.

— Тен, тупнă та пуль, — хихиклетрĕ хĕрĕ. — Шӳтлеп. Ватăсене те пулăшмалла-çке.

— Питĕ тĕрĕс шутлатăн. Пулăшмаллах.

Асламăшĕ каланă тăрăх, ялта пĕр каччăпа паллашнă Лена. Лешĕ Самарăра университетра вĕренет. Канмалли кунсенче, уявсем вăхăтĕнче тĕл пулаççĕ çамрăксем.

Хăш вăхăтра ӳссе çитĕнчĕç ачисем? Хĕрĕ сăнпа амăшне хывнă. Çӳçĕ анчах çутăрах. Хальхи нумай çамрăк эрех-сăрапа, пируспа туслă. Антонина Васильевна ачисем пирки ун пек калаймăн. Анчах хальхи саманара мухтанаймăн та, савăнаймăн та. Паян апла, ыран капла вĕсем. Самани хăйне май çавăрттарать мар-и. Турă упратăрах.

Ывăлĕ тус-юлташпа пит хутшăнсах каймасть. Хĕрсем шăнкăравласан та ерçейменни çинчен пĕлтерет. Паллах, ку та амăшне пăшăрхантарать. Ялан атте-анне çумĕнче пурăнаймастăн-çке. Пурнăçра йывăрлăхсем те нумай. Ун пек чухне çывăх çынсен тĕрекĕ нумай çăмăллăх парать.

Тоня хăйпе пĕртăван аппăшне аса илчĕ. Урăх хулара пурăнать вăл. Качча кайса çемье çавăраймарĕ Лида хăй вăхăтĕнче. Нумайăшне хăй тиркерĕ пулас. Вăл кăмăллана каччă урăххине суйласа илчĕ. Çапла ĕнтĕ вăл шăпа тени, ăспа илем яланах çул уçса пымаççĕ. Хăш-пĕр чухне, тен, чăрмантараççĕ те-и.

Час-часах тӗл пулаймаҫҫӗ аппӑшӗпе йӑмӑкӗ. Ҫулталӑкра пӗр-икӗ хутран ытла мар. Тоньӑн чӗри савӑнса кӑлт-кӑлт тапма пикенчӗ. Кӗҫех Ҫимӗк ҫитет. Ҫак уявра вӗсем яланах тӑван ялта, ашшӗ-амӑшӗн ҫуртӗнче, пухӑнаҫҫӗ. Лида йӑмӑкӗн ачисене чунтан юрататъ. Медицина сестрин ӗҫ укҫийӗ пысӑк пулмасан та Ленӑпа Кольӑна парнесӗр хӑвармасть.

Ашшӗпе амӑшӗ ҫӗре кӗчӗҫ. Ялти ҫурт халь пушах ларать. Ҫулла кайкаласа ҫӳреҫҫӗ-ха унта. Ҫӗр улми лартаҫҫӗ анкартине. Кишӗр, сухан, кӑшман ӳстереҫҫӗ. Улмуҫҫисем пур садра. Хурлӑхан, чие йывӑҫҫисем ҫимӗҫӗпе хӑналаҫҫӗ.

Тоньӑн чунӗ тунсӑхпа тулчӗ. Тем пек яла каяс килет, ял сывлӑшӗпе, ачалӑх сывлӑшӗпе, унӑн техӗмӗпе киленес килет.

* * *

Ниепле те черетлӗ отпуска каяймасть Петр Иванович. Цех пуҫлӑхӗн яланах мӗнле те пулин ыйтӑва татса памалла. Паян ак тата командировкӑна тухса каймалли пирки пӗлтерчӗҫ. Тем пекех чӗри ыратать арҫыннӑн. Чирлӗ арӑмне килте пӗччен хӑварас килмест. Анчах мӗн тӑвайӑн? Аслисем умӗнче ялан тенӗ пекех пуҫа усма, ухмах пулма тивет. Вырӑссен ҫавӑн пек каларӑш пур: «Я начальник — ты дурак. Ты начальник — я дурак».

Тухса кайрӗ Петр Иванович пӗр уйӑхлӑха командировкӑна.

Упӑшки кун пек вӑрӑм командировкӑсене кайсан мӑшӑрӗн йӗркелӗхне пӗле тӑркачах Тоньӑн чӗри канӑҫлӑхне ҫухататъ. Тем тӗрлӗ шухӑш та пырса кӗрет пуҫа. Халь тата самана та ахӑрсах кайрӗ. Хӗрарӑмсем ниме пӑхмасӑр

иртĕхеççĕ. Упăшкине те шансах пĕтереймĕн, чирлĕ арăмне пăхса ывăннăскере тем шухăш та кĕме пултарĕ.

Ашшĕ яла шăнкăравласа Ленăна киле таврăнма хушрĕ, хăй командировкăра иккенне пĕлтерчĕ.

Тепĕр куннех вĕçтерсе çитрĕ хĕрĕ.

— Анне, атте шăнкăравламан пулсан эсĕ ман çинчен мансах каяттăн-и тен? — шӳтленĕ пекрех, пăшăрханнине пĕлтересшĕн мар пулса çупăрларĕ амăшне Лена.

— Ара, хĕрĕм, кашни кун пурăнмалла-çке. Енчен те санăн хăвăн çемйӳпе аякри пĕр-пĕр хулара е ялта пурăнма тивсен? Эпĕ кăшт чирленĕшĕнех ĕçне, çемйӳне пăрахса килмелле-им?

Лена кăçал виççĕмĕш курсран вĕренсе тухрĕ. Халĕ ĕнтĕ вăл мĕнле тухтăр пулмалли специализацие суйласа илет. Кăçалхи çул вĕсен практика занятийĕсем те нумай пулчĕç. Терапевт пуласшăн Лена. Питĕ нумай вулать. Тĕрлĕ медицина литературине çырăнса илеççĕ çемьере. Туять Лена амăшĕ йывăр чирлине. Мĕнле чир иккенне те тавçăрать. Онкодиспансерта та пĕрре мар пулнă вăл практикăра. Рак чирĕпе чирлисем мĕнлерех курăннине пĕлет. Анчах та хăй тавçăрнине кăтартмасть. Йăшсах пырать амăшĕн сывлăхĕ. Юрать-ха халь отпускра вăл.

Пĕр ирхине вырăн çинчен те çĕкленеймерĕ Антонина Васильевна. Ачисем «васкавлă пулăшу» чĕнтерсе больницăна ăсатрĕç. Хучĕç-хучĕçех ăна онкодиспансера. Тĕплĕн тĕрĕсленĕ хыççăн чир шала кайнине, операци тумаллине пĕлтерчĕç.

— Килĕшместĕпех, — пат касса татрĕ хĕрарăм. — Мĕн чухлĕ пурăнма çырнă, çавăн

чухлĕ пурăнăп. Операци тунă хыççăн чĕрĕлсе юлнă çынсене курман-ха эпĕ халиччен. Упăшка таврăнтăр-ха. Унпа та канашламалла.

— Мĕнех, — терĕ лăпкăн арçын тухтăр. — Сирĕн хăвăрăн ирĕкĕр. Пирĕн ирĕксĕр операци тума юрамасть. Чĕрĕ çын-çке.

Пиллĕкмĕш кун выртать Антонина Васильевна больницăра. Палатăри стенасене, чӳречене, кравачьсене, сĕтел-тенкеле сăнать хĕрарăм. Кунта пĕрре те ытти больницăри пек мар. Стена штукатуркисем катăла-катăла аннă. Кравачĕсем кивĕ, çаврăнса выртмассерен чирлĕ çынсен сассисемпе хутăшса нăйкăшаççĕ. Чӳрече хашакĕсене миçе çул сăрламан-ши? Санитаркăсем те сахал кĕреççĕ палатăна. Тусан шăлни те, урай çуни те питĕ сайра пулать кунта.

— Чирне кура — сумĕ, — сасăпах каласа ячĕ Тоня.

— Эх, хĕрĕм. Эс те ун çинчен шутласа выртатăн-и? Мана пырĕ ĕнтĕ. Эпĕ çитмĕлтен иртнĕ, — сас пачĕ юнашар кровать çинчи типсе хăрса кайнă кинеми куççульне шăлса. — Эсĕ çамрăк вĕт-ха. Санăн пурăнмалла.

Уколсем тукалаççĕ-ха. Темле таблеткăсем те параççĕ. Кунти апата пачах та çиеймест Антонина Васильевна. Ывăлĕпе хĕрĕ кунсерен килтен тĕрлĕ апат пĕçерсе килеççĕ. Мĕн чул çиейĕ ăш-чикĕ ракпа чирлĕ хĕрарăм? Палатăри çынсене пурне те валеçсе парать килти апата.

Акă упăшки командировкăран çитрĕ. Măшăрĕ больницăна лекнине пĕлсен пĕр эрне маларах таврăнчĕ вăл. Арăмĕ патне кĕриччен малтан тухтăрпа калаçса пăхма шутларĕ.

— Операци тумасан пилĕк-ултă çул пурăнма пултарать. Операци тусан та шанăç сахал-

рах. Метастазăсем пур. Операци хыççăн вĕсем пысăк хăвăртлăхпа сарăлма пултараççĕ.

Шăппăн уçрĕ Петр Иванович палата алăкне. Тоньăна хăватлă укол тунă пулас, вăл канлĕ тĕлĕрет. Палатăра шăп. Пĕр кинеми анчах алăк сассине илтсе сулахай енчен сылтăм енне çаврăнса выртрĕ. Вăл килнĕ хăна çине темле тунсăхлăн, тĕмсĕлсе пăхрĕ. Петр Иванович Тоня еннелле аллине сĕлтсе хăй ун патне килнине пĕлтерчĕ. Унтан алăк патĕнче тăракан тенкеле илсе арăмĕн кравачĕ çумне ларчĕ.

— Эсир упăшки пулĕ-ха. Сире Тоня ялан ырăпа асăнать. Ачăрсем те питĕ йĕркеллĕ сирĕн. Амăшне пăрахмаççĕ, лайăх пăхаççĕ. — Хĕрарăм калаçма чарăнчĕ те тарăннăн сывласа илчĕ. Унтан хăйăлтатса тухакан сассипе малалла сăмахне тăсрĕ: — Ман пата килсе пăхакан çук. Тăвансем аякра. Ывăла арăмĕ ямасть пулас. Кинĕм ман вĕреннĕ пысăк çын. Йĕрĕнет манран. Эпĕ хам, мĕн, стройкăра ĕçлесе ватăлтăм. Упăшкам пурнăçран ир уйрăлса кайрĕ те, ывăлăма пĕчченех пăхса ӳстертĕм. Вăл манăн пысăк начальник. Ерçеймест те пуль.

Шăпăр-шăпăр юхать тăварлă куççуль кинемейĕн йывăр пурнăçпа, чирпе пĕркеленнĕ пичĕ тăрăх.

Калаçнă сасса илтсе Антонина Васильевна куçне уçрĕ. Мĕнлерех çутăпа, савăнăçпа тулчĕç хĕрарăмăн тĕссĕрленнĕ куçĕсем упăшкине курсан. Питне хĕрлĕ тĕс кĕчĕ. Тути чĕтренсе илчĕ. Савăнăç куççулĕ пăчăртанса тухрĕ.

— Тавах сана эс пурришĕн, маншăн пурнăçра чăн тĕрек пулнишĕн, — вăйсăррăн пăшăлтатрĕ хĕрарăм упăшкин ăшă, вăйлă аллисене çупăрласа.

Тухтăрпа мĕн калаçнине арăмне пĕлтермерĕ арçын.

— Илсе кай мана киле. Эпĕ кунта текех выртма пултараймастăп, — тархасласа пăхрĕ Тоня упăшкине куçран.

— Каятăп. Паянах илсе каятăп, — çупăрларĕ арăмне Петр Иванович.

Палатăри ытти хĕрарăмсем те кравачĕсене чĕриклеттерсе хускалкаласа илчĕç. Миçе мăшăр куç сăнать халь çак пĕр-пĕрне чунтан савакан, хисеплекен мăшăра! Çав куçсенче ăмсану та, вĕсемшĕн савăнни те, çакăн пек мăшăрсем пурринчен тĕлĕнни те палăрать.

Килте стенасем те пулăшаççĕ тесе ахальтен каламаççĕ çав. Тоня йăл-йăл кулать. Вăл чи малтан ваннăйне кĕрсе çăвăнчĕ. Тĕрĕссипе каласан, упăшки çуса кăларчĕ ăна. Таса тумтир тăхăнса таса вырăн çине выртсан хăйне вăй кĕрсе кайнă пекех туйрĕ хĕрарăм.

Акă упăшки тĕрлĕ курăк ярса хатĕрленĕ, пыл хушнă чей илсе килчĕ. Аран-аран çăтать хĕрарăм техĕмлĕ чее. Мăшăрĕ Тоня умне чĕркуçленсе ларчĕ те унăн типшĕм аллисене хăй аллине илчĕ. Ачашшăн çупăрларĕ вĕсене арçын.

— Чĕрĕлетпĕр. Чĕрĕлетпĕрех эпир, — пăшăлтатрĕ вăл шывланнă куçĕсене тартса.

* * *

Петр Иванович отпуск илчĕ. Икĕ путевка пачĕç ăна.

— Тоня, атя майĕпен хатĕрленме пуçлар. Инçете каймастпăр. Хуларан вăтăр çухрăмра вырнаçнă санатори.

— Темле ĕнтĕ. Хал çитерейĕп-ши эпĕ унта кайса çӳреме?

— Веçех аван пулать. Пӳлӗмӗ люкс текенни. Холодильникӗ, телевизорӗ, телефонӗ — веçех пур унта. Кирлех пулсан — апатне те номерах илсе пыраççӗ. Ак курăн-ха. Çитсенех хăвна аван туйма пуçлатăн. Унта хырлăх вăрманӗ. Минераллă шывпа сипленетӗн.

Тухтăрсем санаторипе курорт карттине çырса парасшăнах марччӗ Антонина Васильевна валли. Ӳкӗтлесех çыртарчӗ Петр Иванович.

Виçӗ эрне пулчӗç вӗсем санаторире. Чăнах та, Антонина Васильевна хăйне самаях лайăх туйма пуçларӗ. Кунсерен минераллă шывпа сипленни те, хырлăхри таса сывлăш та пулăшрӗç паллах. Мӗн каламалли! Пластикăран тунă савăта тултарнă шывпа танлаштараймăн ăна. Врачсем асăрхаттарнине пăхмасăрах кунӗпех çав минераллă шыва ӗçрӗ Тоня. Лешсем кунне виçӗ хутчен апатланиччен çур сехет маларах çуршар стакан ӗçме хушнăччӗ. Нимле чей те, сӗткен-компот тавраш та çăвара ямарӗ вăл виçӗ эрне хушши.

— Вăт, анне, мӗнле пулăшрӗ сана санатори. Тен, пирӗн хваттере сутса унта пурăнма куçмалла? Çурт е хваттер туянмалла? Хуларан инçе мар, кунта кунсерен машинăпа çӳреме пулать.

— Пурнăç кăтартӗ-ха, — лăпкăн тавăрчӗ амăшӗ.

Кӗçех вӗренӳ çулӗ пуçланмалла.

— Тоня, ман шухăшпа, сан кăçаллăха ӗçе тухмалла мар. Шкулăр ăшах мар. Учителӗн яланах илемлӗ, типтерлӗ тумланса çӳремелле. Сивӗ шкулта çӳхе чăлхапа туфли тăхăнса çӳреме юрамасть халӗ санăн. Учитель ӗçӗ питӗ канăççăр ӗç. Халӗ врачран справка илсе пӗр çул-

лăха академилле отпуск илме ирĕк паракан закон пур...

Çемье канашлăвĕнче çапла йышăнчĕç те. Больницăра сипленсен килте чылай вăхăт бюллетеньпе ларма пулать. Анчах Антонина Васильевна яхăнне та ямарĕ ку шухăша. Ирсерен урама тухса уçăлса çӳреме пуçларĕ. Çын çинче пулма тăрăшрĕ. Музейсене, библиотекăсене, куравсене çитсе курчĕ. Ĕçленĕ чухне унта кайма нихăçан та вăхăт çитмест.

Питĕ хăвăрт ывăнакан пулчĕ хĕрарăм. Кăнтăрла пылпа хутăштарнă курăк чейĕ ĕçсен лăштах пулса çывăрса каять. Апат таврашне хальлĕхе упăшки пĕçерет. Ачисем те пулăшаççĕ ашшĕне. Килте яланхи пекех тирпей. Хĕрарăм тени ури утнă чухне ахаль лараймасть. Ĕç патне туртăнать Тоня та. Шĕпĕн курăкне пĕçерсе унăн шывне ĕçет. Хушнă тăрăх çирĕм-çирĕм пилĕк тумламран ытла ĕçмелле мар та, Тоня питех уяса тăмасть. Кунĕпе виçĕ апат кашăкĕнчен сахал ĕçмест. Пурăнас килсен тем те тăвăн çав. Питĕ йӳçĕскер ку курăк шывĕ.

Пурăна киле кунне виçĕ хут çуршар стакан ĕçекен пулчĕ. Çулла ялта чухне пайтах хатĕрленĕччĕ ку курăка.

Виçĕ уйăхран больницăна кайса тĕрĕслеттерчĕ сывлăхне Антонина Васильевна. Анализсемпе рентген ӳкерчĕкне тишкерсен тухтăр Тоня çине ыйтуллăн тĕсесе пăхрĕ:

— Чир аталанма чарăннă. Мĕнпе сиплентĕр?

— Халăх меслечĕпе, — йăвашшăн пăхрĕ хĕрарăм тухтăра куçран.

— Çав меслетпех сипленĕр малалла та. Пысăк шанăç, пурнăçа юратни, ĕмĕтленни хăшпĕр чухне эмелрен те сиплĕрех.

Вăхăт шăвать. Хĕл те иртсе кайрĕ. Çуркунне çывхарса килнĕ май пĕтĕм чĕр чун, ӳсентăран чĕрĕлме васкать мар-и. Çын та çавах. Тоня та малашлăх çинчен шухăшлать. Акă ывăлĕ те каçсерен килтен тухса кая пуçларĕ. Хĕрпе паллашнă пулас. Вăрах çӳрени те пулкалать. Ĕнер те питĕ кая юлса таврăнчĕ. Амăшĕн чĕри лăпкă мар. Ывăлĕнчен эрех шăрши кĕнине туйрĕ. Куçĕсем тĕрлĕ енне пăхаççĕ хăйĕн.

— Эп текех пĕчĕк ача мар, — лаплаттарса хучĕ амăшĕ асăрхаттарнине хирĕç.

— Эсĕ текех нимĕн те ан кала. Ирхине хам калаçатăп унпа, — çывăрмалли пӳлĕме илсе кĕчĕ арăмне Петр Иванович.

Мĕн калаçнă ашшĕ ывăлĕпе? Мĕн каласа ăн кĕртнĕ? Çав кунран пуçласа Коля вăрах çӳреме пăрахрĕ.

— Тен, паллаштарăн пире хăвăн хĕрӳпе? — ыйтрĕ пĕррехинче амăшĕ.

— Çук вăл текех. Санпа паллашмалли хĕр мар вăл. Пирус паккать, эрех-сăра лĕрккет. Сана ун пек кин кирлĕ мар вĕт. Тĕрĕс-и, анне?

— Тавтапуçах сана ун пеккине ăнланатăн пулсан. Аван хĕрсем те сахал мар пурнăçра.

— Нумаях та мар, анне. Ну, юрĕ. Турă парсан пӳрт умнех килсе тăрĕ пĕр-пĕр лайăх пике, — шӳтлесе ирттерчĕ ывăлĕ.

Çĕр-шыв типсе çитсен Антонина Васильевна Петр Ивановичпа калаçса пăхма шутларĕ. Унăн яла пурăнма каяс килет. Ашшĕ-амăш çурчĕ пушах ларать-çке. Пĕлтĕр газ кĕртрĕç унта, шывĕ та пӳртрех.

— Çĕр çинче çӳрес килет. Çемçе курăк тăрăх çарран утас килет. Çĕртен хама вăй-хал кил-

нине туятăп эпĕ. Ял çынни-çке. Юр кайсанах çерем тăрăх çарран чупса ÿснĕ.

— Темле ĕнтĕ, — иккĕленчĕ упăшки. — Çулла кайса пурăнма пулĕ-ха. Каникулсем пуçлансанах ачасем те пырĕç. Хам та отпуск илетĕп.

— Каятăпах. Атя леçсе яр мана. Пĕр пилĕкултă чăхпа автан туянар. Килти çăмарта пулать. Качака туянса ярсан та лайăх пулмалла. Ăшă сĕт ĕçес килет.

— Каларăн та, Тоня. Качакаран кутăн выльăх çук пуль. Мĕнле сĕмсĕр вăл тата. Астăватна аннÿ сăмахне? Çурта качака ан кĕтĕр тесе ятлаçатчĕ. Леш хирĕçри Маюк аппан качаки хĕвелтен малтан вăранса иртĕхетчĕ. Вĕçерĕнсе кайсан мĕнпур кÿршĕсен пахчине «тĕрĕслесе» тухатчĕ.

— Ара çав. Астăватна мана пĕррехинче мунча çумне хĕссе хунине? Эсĕ тухса ĕлкĕрмен пулсан хырăма тĕксе шăтаратчĕ пуль.

— Епле манăн?! — ахăлтатса кулса ячĕ упăшки. — Эсĕ куç-пуçна чарса пăрахнă, çăварна карнă, сассу тухмасть. Халь кулатăп та, ун чухне сехре хăпнăччĕ хамăн та.

— Ой, эпĕ мĕнле хăраса ÿкнине пĕлинччĕ эс! — мăшăрĕпе пĕрле ахăлтатса кулчĕ Тоня та.

— Ну, юрĕ. Качака илсе сана хăрушлăха кĕртес мар. Вăй-халу та халь ĕлĕкхи мар. Вăл выльăхпа тытăçаяс çук. Кирлех пулсан ялта качака тытакансем пур. Сĕтне сутăн та илме пулать.

— Ялта сĕчĕ çителĕклех-ха. Хулари пек порошокран хатĕрленĕ сĕт-турăх мар унта.

Тоньăн сăн-пичĕ çуталса кайрĕ. Куçĕсем хĕр чухнехи евĕрлĕ кулса пăхаççĕ. Çакна курса Петр Иванович ун еннелле туртăнчĕ, ыталаса илсе çÿлелле çĕклерĕ.

— Пурăнатпăр-ха. Пĕрле чухне пире нимĕнле инкек-синкек те, чир-чĕр те çĕнтереес çук.

— Ватлăх та-и? — пĕчĕк хĕр ача пек айваннăн кулать Тоня. Хăй упăшки çумне ачашшăн тĕршĕнет.

— Юратакансем ватлăха та инçе-инçе тапса вăркăнтарма пултараççĕ.

— Килĕшетĕп. Çĕр çула çити пирĕн пата ан çывхартăр, — шӳтлет Тоня.

— Çапла, хытăрах тапатпăр та — ыратнипе сехри хăпать унăн.

— Тем пекехчĕ, — салхуланчĕ хĕрарăм.

— Çапла пулать те, — арăмĕн куççульпе тулнă куçĕсене чуптурĕ арçын...

Пуçланчĕ ялти пурнăç. Петр Иванович чăхчĕп ферминчен чăхсем кайса илчĕ. Кунĕпех пахчара чакаланать Тоня. Ывăнса çитсен пăлтăра кĕрсе диван çине выртса канать. Ирсерен выç варла чĕрĕ çăмартапа ăшă сĕт хутăшне ĕçет. Кӳршĕри Микула мучи виçĕ литрлă банкăпа тин çеç юхтарнă пыл илсе килчĕ.

— Кашни ир пĕр апат кашăкĕ чухлĕ çак сиплĕ пыла çи. Çу уйăхĕнче пухнă пыл тем пекех сиплĕ. Укçа-и? Укçа çинчен калаçнă ан пул. Эп санран укçа илсен техĕмĕ манра юлать. Эй, пепкем! Ман чĕрçи çинчен анмастăнччĕ пĕчĕк чух. Эсĕ карчăкпа маншăн хамăрăн хĕр пекех. — Микула мучи шывланнă куçĕсене тартма тăрăшрĕ. — Ну, юрĕ, хĕрĕм. Каç пулттипе пирĕн пата пырса лар. Карчăкăм хĕпĕртесех кайĕ. Темĕн аптăрасарах тăрать-ха вăл çак кунсенче.

— Тавах, Микула мучи, — пырса çупăрларĕ старике Тоня. — Кăштах выртса канатăп та сирĕн пата çитетĕп.

Вăрах пăхса тăчĕ Тоня мучи хыçĕнчен. Ачапăча памарĕ Турă Марье кинемипе Микула мучие.

Тоньăн хĕрĕпе ывăлĕ ялта чухне туха та пĕлмеççĕ вĕсем патĕнчен. Караслă пылне лĕклентеричченех çиеççĕ. Сутсан та питĕ йӳнĕ хакпа сутать мучи пылне. «Ял халăхĕ капла та укçасăр нушаланать. Чир-чĕртен сипленме, сывлăха çирĕплетме илет-çке çынни», — пуплешет вăл.

Кунĕпех тĕрлĕ курăк чейне ĕçсе киленет Тоня. Ачисем те акă каникула килсе çитрĕç. Пурнăç кĕрлесе çеç тăрать. Ывăннине те туйми пула пуçларĕ хĕрарăм. Упăшки те отпуск илсе килчĕ.

— Тоня, икĕ путевка параççĕ. Тен, санаторие кайăпăр? Пĕлтĕр каннă çĕре.

— Акă ман санатори. Акă ман курорт, — хавассăн кулать арăмĕ. — Капла пулсан эпĕ пĕтĕмпех яла куçса килме хатĕр. Шкул та юнашарах.

— Эпĕ вара? Ачасем?

— Эсĕ пĕчĕк ача мар. Мансăр та пурăнма пултаратăн. Ачасем çитĕнчĕç ĕнтĕ.

Лена çулталăкран диплом илет. Кольăн та вĕренесси икĕ çул анчах юлчĕ.

— Çук, апла мар. Шутласа пăхмалла. Ял хуçалăх пуçлăхĕпе калаçса пăхас. Тен, пĕр-пĕр механик кирлĕ мар-и вĕсене? Эпĕ ял хуçалăх институтне пĕтернĕ-çке. Инженер-механик. Мана хама та ял пурнăçĕ килĕшет. Эпĕ те ял ачи.

— Ун пекех хăтланар мар пуль кăçаллăха. Ачасене пăрахса хăварар мар пуль.

— Ара, халь кăна каларăн-çке вĕсене пурнăç тинĕсне кăларса ямалла тесе.

— Мĕнле пăрахăн хăвăн ĕçна? Сана унта хисеплеççĕ, хакласççĕ.

— Хакласççĕ, хакласççĕ. Кăштах хирĕçлесен ĕнсе чикки те параççĕ.

— Аçупа аннӳ мĕн калĕç? Вĕсем те ватăсем-çке. Чăваш арçынĕ арăмĕн çуртне кайса пурăнни сумлă мар. Ку пирĕн вăхăтлăха çеç пулнине шанас килет. Пĕр хĕл каçам-ха кунта. Чĕмпĕр юнашарах-çке.

— Санпа та килĕшме пулать. Ну ăслă хĕрарăм та эс манăн. Сан пекки сайра пулать.

— Сан пекки те, — ăшшăн кулкалать Тоня. Пĕр-пĕрин çине пăхса илчĕç те харăссăн пĕренене шак-шак! тутарчĕç.

— Куç ан ӳктĕрех! — ахăлтатса кулса ячĕç иккĕшĕ те куçĕсемпе телей хĕлхемĕ сапса.

* * *

Петр Ивановичăн çуралнă çĕрĕ — Самара облаçĕнче. Совет тапхăрĕнче Куйбышев облаçĕ тетчĕç ăна. Пур унта чăваш ялĕсем. Хăçан, кам килсе тĕпленнĕ малтанах çав вырăс ялĕсем хушшинче ларакан пысăках мар чăваш ялне? Хвостиха теççĕ ăна вырăсла. Чăвашла ячĕ — Хӳре ял. Тĕрĕс те. Сăнарах пăхсан ытти пысăк ялсен хӳри пекех курăнать вăл. Унтан инçех мар Атăл хĕрринче питĕ пысăк вырăс ялĕ вырнаçнă. Историпе паллашнă май çакă курăнать: хайхи ял Орлов граф именийĕ пулнă иккен. Йĕри-тавра вара — пысăках мар ялсем. Вĕсем те Орлов именийĕ шутне кĕнĕ. Çавсен хушшинче тĕпленнĕ те ĕнтĕ чăвашсен Хӳре ялĕ. Ялсенче крепостла хресченсем пурăннă. Орлов граф хăй именийĕнче пĕрре кăна мар пулнине каласçĕ. Питĕ илемлĕ вырăнсем унта.

Атăл хĕррипе вырнаçнă ял выçлăх вăхăтĕнче çынсене пулăпа, çырла-кăмпапа çăлса хăварнă теççĕ. Вăрманĕ вара Атăл юппин сулахай енче вырнаçнă. Ăçтан хăваласа килнĕ крепостной-сем пулнă-ши Петр Ивановичăн йăхташĕсем? Вăл пит интересленмен кун пирки.

Ытти ялсемпе танлаштарсан Хӳре ял хăйĕн илемĕпе палăрса тăрать. Чăвашсен кил-çурчĕ-сем хătлă. Йĕри-тавра хапха-хӳме. Кашни ки-лĕрех сад пахчи. Епле илемлĕ вĕсен ялĕ çур-кунне! Калăн пĕр пы-ы-сăк сад. Ытти ялсем пачах урăхла. Унта çурт-йĕрсем те япăхрах, сад пахчисем те çукпа пĕрех. Чăваш чăвашах ĕнтĕ. Вăл мĕн авалтанах хăйĕн ĕçченлĕхĕпе палăрса тăнă. Ял хуçалăхĕнче те пур çĕрте те чăваш-сем малта. Вырăс хĕрарăмне колхоз ĕнисене сума ярайман. Петр Иванович амăшĕ доярка пулса тăрăшатчĕ хуçалăхра. Ашшĕ фермăри выльăхсем валли апат турттаратчĕ. Ик ача çитĕнчĕç вĕсем çемьере. Аппăшĕ Лида Пе-тьăран икĕ çул аслăрах. Типтерлĕ, ĕçчен çемье-ре çуралса ӳснĕскерсем ялти шкула ăнăçлă пĕ-терсе пĕлĕвĕсене малалла ӳстерчĕç. Лида Куй-бышеври экономика институтне пĕтерчĕ. Петя тăхăр класс хыççăн ĕлĕкхи Орлов граф имени-йĕнче йĕркеленнĕ ял хуçалăх техникумне ме-ханика вĕренме кĕчĕ. Ялтан инçех мар. Обще-житийĕ хătлă. Ку техникум çĕршывра колхоз-сем йĕркеленме пуçласанах уçăлнă. Чаплă тех-никумсенчен пĕри шутланать вăл. Мĕнле кĕрле-се тăратчĕ унти пурнăç. Тĕрлĕ кружоксем мĕн чухлĕччĕ унта. Спорт тата художествăллă пул-тарулăх енĕпе облаçра пĕрремĕш вырăнсене йы-шăнатчĕ. Юрăпа ташă ансамблĕ мĕне тăратчĕ! Ăна Петр Николаевич Плясунов ертсе пыратчĕ.

Хаваспах çӳретчĕ Петя çав ансамбле. Ертӳçĕ темшĕн ăна ыттисенчен ытларах уйăратчĕ, килĕштеретчĕ. Çакна малтан çамрăк, йăваш чăваш ачи ăнланса илме те пултарайман.

— Петя, паян пĕрер сехетлĕхе юл-ха. Санпа кăштах уйрăм ĕçлес килет манăн, — терĕ пĕррехинче ертӳçĕ ачана мамăк пек çемçе, анчах та çăра çӳçĕнчен шăлса.

— Мĕн, Петр Николаевич, пит япăх ташăçă пулать-ши манран? — йăвашшăн, шикленерех пăхрĕ ача ертӳçĕне куçран.

— Япăх мар, япăх мар, — ăшшăн кулчĕ лешĕ. — Япăххисемпе, кутăннисемпе эпĕ вăхăта иртте́рместĕп. Санра Турă панă хĕлхем пур. Çав хĕлхеме вăйлăрах ялкăштарас килет манăн.

— Петя, мĕншĕн ертӳçĕ санпа нумайрах ĕçлет? Солист пулса ташлаттарать. Пирĕн ушкăнра санран аванрах ташлакансем те пур-çке, — тесе ăмсанатчĕç ыттисем.

Нимĕн те чĕнместчĕ ун пек чух сăпай чăваш ачи. Чĕрре кĕме юратмасчĕ вăл. Тен, çавăнпа пуль унăн çитĕнĕвĕсем ӳссе пыратчĕç.

Нумай çул иртсен пĕлчĕ Петр Иванович çав ертӳçĕ чăваш пулнине. Ун чухне лешĕ пурнăçран уйрăлса кайнăччĕ ĕнтĕ.

Петя пĕлмен. Анчах та ертӳçĕ пĕлнех ĕнтĕ вăл чăваш ачи пулнине. Çак йăрă, çӳллех мар, ырханкка, анчах та питĕ тăрăшуллă, пултаруллă ачара вăл, тен, хăйне курнă. Нумай-нумай çĕрте пулса курчĕ Петя ансамбльпе пĕрле. Питĕ паллăччĕ çав йыш облаçра. Мускав таранах çитетчĕ пултарулăхне кăтартма.

Час-часах аса килет Петр Ивановича унти пурнăç. Пĕрремĕш юратăвне те унтах тĕл пулчĕ

çамрăк каччă. Люда тесе чĕнетчĕç черченкĕ, илемлĕ, питĕ мăн кăмăллă хĕре. Вăл та ташă ушкăнне çӳретчĕ. Час-часах пĕрле ташлаттаратчĕ вĕсене ертӳçĕ. Асăрхатчĕ пулас çамрăк каччă çак хĕре килĕштернине, ун çине ачашшăн тĕмсĕлсе пăхнине. Петя саватчĕ те çав, майра хĕрĕ урăххи тавра явкаланатчĕ. Люда кăмăллакан каччă хăйне принц пекех тыткалатчĕ. Ташă королĕ тетчĕç ăна. Çӳллĕскер, хитрескер ушкăнри ытти каччăсенчен уйрăларах тăратчĕ. Май пур чухне чăвашсене кӳрентерме пăхатчĕ. Каярахпа Люда унран йывăр çын пулнине те калаçкаларĕç. Те тĕрĕс пулнă çак пулăм, те тĕрĕс мар — Петя интересленмен. Майĕпен тухса пĕтрĕ çак хĕр сăнарĕ унăн чĕринчен те, асĕнчен те.

Час-часах алла тытать Петр Иванович ун чухнехи сăн ӳкерчĕксене. Ун пек чух çамрăклăха пуçĕпех чăмать. Ташласа çĕнсе илнĕ дипломсене ятарлă рамăра упрать. Паян та сăн ӳкерчĕксене алла илчĕ. Акă варринче ертӳçĕ — Петр Николаевич. Пĕвĕпе пысăках марччĕ вăл. Йăм хура çӳçлĕ, çĕмĕрт пек хура, çивĕч, анчах та питĕ ырă куçлăччĕ. Çула пуçтарăнас умĕн ачасене хăй список хатĕрлесе паратчĕ. Тухса каяс умĕн çав список тăрăх тĕрĕслетчĕ. Салтаксем пек тăратчĕç ун умĕнче çамрăксем. Нихăçан та сассине хăпартмастчĕ вăл. Пĕрре анчах илтрĕç ачасем ертӳçĕ сас хăпартса калаçнине. Калаçăвĕ леш куштан вырăс ачи ытти халăхсем çинчен киревсĕр калаççан пулчĕ.

— Эй, чуматары! Чуваши, мордва, татары! Встань по два. Мы русские — начальники ваши, — тесе кăшкăрчĕ вăл пĕррехинче репетицисем иртекен залри алăка яри уçса.

Çакна ун хыçĕнчен кĕрекен ертӳçĕ илтрĕ.

— Апла иккен, — терĕ вăл малтанласа ляпкăн. — Эсĕ начальник иккен, эпĕ пĕлмен те. — Унтан сассине кăштах хăпартрĕ те çапла каларĕ: — Эпĕ пĕлнĕ тăрăх, пирĕн ушкăнри чăваш, мăкшă тата тутар ачисем санран чылай аван вĕренеççĕ. Стипенди илеççĕ, ашшĕ-амăшĕн капла та çӳхе кĕсйисене пуш-пушах хăварсран именеççĕ. Ан ман: начальник пулма çӳллĕ пĕв, хитре сăн, вышкайсăр мăнкăмăллăх тата сĕмсĕрлĕх пулни çеç сахал. Çирĕп ăстăнпа тăрăшулăх та питĕ кирлĕ кунта. Ну, тăр хăвăн вырăнна, начальник, — терĕ вăл кулах.

Çав самантра пĕтĕм ушкăн ахăлтатма пуçларĕ.

— Ну, начальник юлташ, паянтан, тен, ертӳçĕ вырăнне йышăнăн! — илтĕнчĕ хăюллă тутар ачин Мударисовăн сасси. — Эп вырăс мар та, сан пек шăл тасатмасăр пуçа каçăртса çӳреместĕп. Çынсенчен пирус тĕпĕсене те вăлтмастăп. Йĕрĕнсе вилетĕп ун пеккисенчен.

Пурте пĕр харăс шăпланчĕç. Люда именсе пуçне пĕкрĕ. Унăн куçĕсем шывланчĕç. Куштан Коля Стрельцов вара залран тухса сирпĕнчĕ. Ташă кружокне урăх пымарĕ вăл. Темле йĕркеленнĕ çав пуçтахăн пурнăçĕ — Петя пĕлмест. Людăна та вĕренсе тухнăранпа курман вăл.

Техникум хыççăн çамрăка салтака илсе кайрĕç. Виçĕ çул хушши сыхларĕ Петя Тăван çĕршыва хĕвел тухăç чиккинче. Тĕрекленсе, илемленсе таврăнчĕ каччă яла. Палласа та илеймĕн тăруках. Пĕвĕпе те çӳллĕрех, кăмăлĕ те самаях çирĕпленнĕ каччăн. Салтакран тав-

рăнсан ашшĕпе амăшĕ ăна ялтах хăварасшăнчĕ. Пĕртен-пĕр ывăлĕ-çке. Килĕшнĕччĕ те ĕнтĕ Петя. Кăмăллать вăл ял пурнăçне. Ялтан инçех мар вырнаçнă район центрĕнче ĕç вырăнĕ те тупнăччĕ. Механик кирлĕччĕ унта. Анчах та пĕр тĕлпулу унăн пурнăçне веçех урăхла çаварса хучĕ.

...Шавлать, кĕрлет ял варринче вырнаçнă пысăках мар, анчах та питĕ хăтлă, илемлĕ Культура керменĕ. Паян кунта уяв, ял çамрăкĕсене салтака ăсатаççĕ. Нумаййăн мар вĕсем. Кӳршĕ ялти çамрăксене шутласан пĕр вунă пулас салтак. Вĕсен колхозĕ виçĕ яла пĕрлештерсе тăрать. Ял совечĕ те пĕрре.

Виççĕмĕш шăнкăрав пулчĕ те, клуба халăх лăк тулли кĕрсе тулчĕ. Хăшĕн валли ларма та вырăн çук.

— Петя тете, килĕр ман çума, — илтрĕ каччă пĕр çамрăк сасса. Кӳршĕ ачи Саша иккен.

Петя йĕри-тавралла сăнаса пăхрĕ — ура çинче тăракан ватăсемпе хĕр упраçа курмарĕ, вара Саша çумне пырса ларчĕ.

— Ял çамрăкĕсене салтака ăсатассипе çыхăннă уява пуçлатпăр, — пĕлтерчĕ сцена çине шурă пирĕшти пек шуса тухнă пике.

Петьăн чĕри тыткăна лекнĕ кăвакарчăн пек тăпăртатать, сикет. Турăçăм! Мĕн тери чипер, мĕн тери асамлă ку пике! Сасси тата, сасси! Кун пек илемлĕ тембрлă, асамлă сасса хăй пурнăçĕнче каччă нихăçан та илтмен. Калăн, мĕнле хĕр халиччен курман, илтмен кĕвĕ инструменчĕ кăларать ку асамлă хумсене тесе.

Малтан ял хуçалăхĕнчи парторг саламларĕ пулас салтаксене, ун хыççăн колхоз председателĕ сăмах илчĕ. Вăл пурне те хаклă парнесем

пачĕ, халиччен ял хуçалăхне пулăшса пынăшăн тав турĕ.

— Ан манăр. Çак тăван кĕтес, тăван хуçалăх сирĕншĕн яланах шанăçлă тĕреклĕх пулĕ! — вĕçлерĕ вăл сăмахне.

Çав вăхăтра пĕри нĕшĕклени илтĕнчĕ. Петя çаврăнса пăхрĕ те пĕр кинеми куçне ал тутрипе шăлкаланине курчĕ.

— Маюк аппа, ма макăратăн? Инкек пулман пуль те? — шикленерех ыйтрĕ вăл.

— Ах, ачам. Савăннипе макăратăп мар-и. Ытла та аван, çыпăçуллă калаçать-çке пирĕн председатель. Çынни те вăл япăх мар та-ха.

Ял совет председателĕ те çаплах вĕçлерĕ хăйĕн сăмахне. Саламлакансем татах пулчĕç: ялти шкул директорĕ, учительсем. Ашшĕ-амăш ятĕнчен хуçалăхри агроном Гурий Иванович калаçрĕ. Институт пĕтерсе инженер специальноçне алла илнĕ ывăлне те салтака ăсатаççĕ кăçал.

Ялти шкул ачисем хатĕрленĕ концерт пурин кăмăлне те уçрĕ. Учительсем те номерсем хатĕрленĕ иккен. Акă сцена çине шур акăш пикепе ялти физкультура учителĕ тухрĕç. Мĕнле илемлĕн янăрать çак дуэтăн юрри. «Албанское танго» текен юрра юрлаççĕ вĕсем.

> Прости меня, но я не виновата,
> Что я любить и ждать тебя устала...

Юхать юрă, çынсене тыткăнласа шухăша ярать.

Петя пуçне усрĕ. Хальлĕхе унăн никама савмалли те, кĕтмелли те çук-ха. Чĕри яш тирсе илчĕ. Çуркунне çитнĕ май тунсăх ытларах та канăçсăрлатма пуçларĕ. Юрату ыйтать унăн чунĕ. Юрату.

— Ку пике кам? Ӑҫтан килсе лекнӗ вӑл пирӗн яла? — шӑппӑн ыйтрӗ Петя ҫумӗнче ларакан Сашӑран.

— Куҫна ытла ан чар. Унӑн каччи пур, Чӗмпӗртен килсе ҫӳрет. Пирӗн учительница вӑл. Кӗҫӗн классене вӗрентет. Чӗмпӗрти педагогика институтне пӗтернӗ.

— Каччӑ упӑшка мар, шӑллӑм. Ӑна пӑрса яма та пулать, — шӳтлесе ирттерчӗ Петя.

Ҫав каҫ паллашрӗҫ вӗсем. Паллашрӗҫ те — ӗмӗрлӗхех пӗрне-пӗри тупрӗҫ. Тоня Чӗмпӗр тӑрӑхӗнчи чӑваш ялӗнчен иккен. Институт пӗтерсен направленипе Куйбышев облаҫне лекнӗ. Ку ялти шкула кӗҫӗн ҫулхи ачасене вӗрентме янӑ ӑна.

— Чӑваш ялӗ пулнине пӗлсен хаваспах килӗшрӗм, — пӗлтерчӗ хӗр.

Пӗр-пӗрне кӑмӑлларӗҫ ҫамрӑксем. Мӗн ҫинчен кӑна каласмастчӗҫ-ши вӗсем тӗл пулнӑ вӑхӑтсенче! Хӗрӗн тавракурӑмӗ анлӑ. Петя та, халӑх калашле, улӑм ури ҫинчен ӳксе юлман. Чылай вулать, нумай пӗлет каччӑ.

— Эпӗ сирӗн савнӑ тус пуррине пӗлетӗп. Тен, манӑн пӗчӗк шанӑҫа сӳнтермелле пуль, — хӑюллӑн каларӗ пӗррехинче Петя. — Ҫулӑмӗ пысӑклансан чӗре ҫунса кӗлленесрен хӑратӑп.

— Каччӑ упӑшка мар-ха вӑл. Хӗр чухне хӗрӗх тус темеҫҫӗ-и-ха, — шӳтлесе ирттерчӗ хӗр.

Пӗр вырсарни кун кӑнтӑр апачӗ хыҫҫӑн Петя Анат касра пурӑнакан юлташӗ патне ҫитсе килме шутларӗ. Урӑх урампа та ҫитме пулатчӗ унта. Темшӗн урисем Тоня пурӑнакан урамалла уттарчӗҫ. Общежити патнелле ҫитсе пынӑ чухне паллانӑ сасӑ илтӗнчӗ:

— ...Урӑх килсе ан ҫӳре. Ман ку ҫула.

Пуçне сасă илтĕннĕ енне пăрчĕ те пĕр яштака каччă пуçне усса утнине курчĕ. Асатакашĕ Тоня иккен. Петя юнашар ӳсекен чăтлăха чăмрĕ. Асăрхамарĕ хĕр ăна. Тоня куçран çухалсан вăл юрласа ячĕ:

Прожил бы спокойно
Долгие года,
Если б ты случайно
Не прошла тогда...

«А-а, тармĕ-ха юлташ манран. Тоня патне васкас!» — хистерĕ шалти сас. Васкать каччă. Чунĕ юрлать унăн. Паçăртарах йывăççем çинчи чечексене шурă юр пек вĕçтерекен çил те лăпланчĕ пек. Калăн, пĕтĕм тавралăх Петьăн чĕри юрланине итлет. Петьăн чĕри юрланине, леш каччăн чĕри ĕсĕкленинине. Питĕ салхуллăн утатчĕ çав вăл. Тоня мĕн тăвать-ши халь? Юрламасть пуль. Тен, вăл та ĕсĕклет? Пĕр савмасăр çӳремен пуль çав каччăпа виçĕ çул. Вĕсен кӳршĕ ял каччи тесе каланăччĕ Тоня. Чĕмпĕрте ĕçлесе пурăнать. Тен, вăл та мар пуль, тен, урăххи?.. Каланăччĕ вĕт-ха хĕр чухне хĕрĕх тус тесе.

«Каяс мар-ха халĕ Тоня патне. Мĕнле пулсан та унăн кăмăлĕ пăсăк, — шутларĕ каччă. — Йĕпе çине сапа пулĕ тата. Йĕркеленсе пыракан туслăха пĕтерсе хурасси те ансат».

Петя хĕре мĕн курнине каламарĕ. Тоня та нимĕн пулман пекех тыткаларĕ хăйне. Виçĕ уйăхран каччă хĕре качча тухма ыйтрĕ, хăйне район центрĕнче хваттер парассине пĕлтерчĕ. Шкулта ĕç вырăнĕ те пур иккен.

— Эпĕ тăван тăрăха кайма ĕмĕтленетĕп. Эсĕ Чĕмпĕре куçса пырсан эпĕ те сана качча тухма килĕшетĕп, — пĕлтерчĕ хĕр пуçне именчĕклĕн пĕксе.

— Килĕшетĕп! Эпĕ сан хыççăн кирек ăçта кайма та килĕшетĕп! — савăнса кăшкăрса ячĕ каччă. Хĕре алă çине йатса илчĕ те пӳлĕм тăрăх чупкалама пуçларĕ.

— Чим-ха, эс çуранах, алă çинче йатса каясшăн мар-и Тоньăна?! — кулса ыйтрĕ пӳлĕме пырса кĕнĕ Люба.

Люба — Тоньăпа пĕр пӳлĕмре пурăнакан учительница. Вăл ялти шкулта хими предметне вĕрентет.

Кĕçех чаплă туй кĕрлеттерчĕç. Тоньăн ашшĕпе амăшĕ те çамрăксене Чĕмпĕр тăрăхне куçса пыма ыйтрĕç. Мĕн тăвăн? Чĕрисем тем пек ыратрĕç пулин те çамрăксене хирĕç каяс темерĕç Петьăн ашшĕпе амăшĕ. Хĕрĕ юнашарах-çке. Район центрĕнче экономист пулса тăрăшать.

Çапла килсе тĕпленчĕç çамрăксем Чĕмпĕре. Петя автозавода ĕçе вырнаçрĕ. Малтан вĕренекен пулса токарь-наладчик ĕçне алла илчĕ. Каярахпа пултаруллă çамрăка мастер ĕçне шанса пачĕç. Чĕмпĕрти ял хуçалăх институтне вĕренме кĕчĕ Петя. Кĕрет мар йĕркепе вĕренсе аслă пĕлӳллĕ механик пулса тăчĕ.

Ĕлĕкхи саманара çамрăксене çурт-йĕр енĕпе çăмăлрахчĕ. Общежитинчи пĕр пӳлĕмре виçĕ çул пурăннă хыççăн икĕ пӳлĕмлĕ хваттер пачĕç çамрăк çемьене. Вунă çул хушшинче хăтлă хваттерте икĕ ачаллă пулчĕç вĕсем. Коля пилĕк çула çитсен Петр Ивановича цехри профсоюзсен комитетне чĕнтерчĕç.

— Ташлăр, Петр Иванович, — кулкаларĕ комитет секретарĕ Антонина Ивановна.

— Ĕнтĕ ташла-ташла та ывăнтăм ывăл çуралнăранпа, — шӳтлерĕ арçын, — сăлтавĕ мĕнре-ши?

— Сăлтавĕ пысăк вара. Сире виççĕ пӳлĕмлĕ хваттер параççĕ. Çĕнĕ çуртра.

Çак сăмахсене илтсен Петр Иванович хăй цех ертӳçи пулнине мансах ташша ячĕ. Эх, çапать ташша! Çамрăк чухнехинчен пĕрре те кая мар çаптарать «Матрос ташшине». Антонина Ивановна пӳлĕмрен шăппăн тухнине те сисмен. Лешĕ юнашар пӳлĕмре ĕçлекенсене чĕннĕ иккен.

— Браво! Браво! — кăшкăраççĕ хĕрарăмсем.

— Петр Иванович, вы же профессиональный танцор!

— Баловался в юности, — именчĕклĕн кулчĕ арçын.

Антонина Васильевнăн та ĕçĕ ăнса пычĕ. Нумай дипломсемпе мухтав грамотисене тивĕçрĕ вăл. Ĕçĕнче хаклаççĕ, ачасем юратаççĕ.

* * *

Каç пулттипе уçăлма тухрĕ мăшăр. Утаççĕ Антонина Васильевнăпа Петр Иванович ял урамĕпе шăкăл-шăкăл калаçса. Çанталăк та вĕсен кăмăлĕ пекех ырă, тӳлек. Çынсем кĕтӳ кĕртсе килти ĕçĕсене вĕçленĕ пулас. Нумайăшĕ пӳрт умĕнчи сак çинче ларать. Çамрăксем ялти Культура керменĕ еннелле васкаççĕ. Эй, самана! Кунта та хулари пекех, аллине сăра банки, çăварне пирус хыпнă çамрăксем нумай иккен. Хĕр упраç та каччăсенчен юласшăн мар. Пурте тенĕ пек вырăсла перкелешеççĕ.

— Пăсăлчĕ самана. Пĕтĕмпех телевизор тăвать çакна, — кулянса калаçрĕ Петр Иванович. — Хаçат-журнал пăсать тесен — ăна халь сахал вулаççĕ çамрăксем. Телевизорпа интернет йĕркерен кăлараççĕ. Нимле чару та çук.

— Ан та кала, — шăппăн калаçрĕ Тоня. — Çĕршыва аркатас тесен — çамрăксене пăс теç-çĕ вĕт. Çапла пулса тухать те ĕнтĕ.

— Нумайăшĕ ашшĕ-амăш укçипе тӳлевлĕ вĕренсе диплом илет. Ак нумаях пулмасть пирĕн цехра тăватă курс пĕтернĕ студентсем практикăра пулчĕç. Пĕлĕвĕсем те çук. Куçĕсем те пуш-пушах. Темле тĕллевсĕр пăхаççĕ, — калаçăва тăсрĕ Петр Иванович.

— Пурнăçĕ çапла кайрĕ. Ломоносов пекки те, Митрофанушка евĕрли те пĕр пек дипломах илет. Ĕçе вара, камăн ашшĕ-амăшĕ сумлăрах, çавă вырнаçать.

— Ну, юрĕ. Чĕрене ыраттарни кăна. Петя, тахçантанпах ватăсене кайса курман. Ачасем пулкалаççĕ те унта, анчах та вĕсен тăван ывălне те курас килет пуль. Ялан ман çинчен шутлас мар. Атя-ха ку эрнере пуçтарăнса çула тухар.

— Çук. Сана вăл вăрăм çула илсе тухас мар. Йывăр пулать. Тата машинăра сывлăш та кунти мар. Ачасемпе кайса килĕп.

— Ан пăшăрхан. Ыран Чĕмпĕре çитсе çĕр каçатпăр. Кăштах канатпăр. Ирпе ирех, машинăсем сахалрах çӳренĕ вăхăтра, çула тухатпăр, — çапла каларĕ те Тоня тăп чаранчĕ.

— Сывлăх сунатăп. Миçе çул иртрĕ сана курманни! — илтрĕ вăл паллана сасса.

Хĕрарăм тĕсерех пăхрĕ те хăйĕн ĕлĕкхи савнине — кӳршĕ ялти Ваççана курчĕ. Вăл шурă костюмпа, çамрăк чухнехи пекех йăрăс пӳллĕ. Питех улшăнман та темелле.

— Миçе çул-ши? — çамкине пĕркелентерсе, çулсене шутланă пек кăтартса кулам пекки турĕ Тоня.

— Çирĕм виçĕ çул, — шухăшлăн каларĕ арçын. — Çак ялти мăн аккана килсе курас терĕм. Отпускра халь.

Петр Иванович вĕсен калаçăвне итлесе тăмарĕ, малалла утрĕ.

— Эх, Тоня! Пĕтĕм шанăçа, ĕмĕте татрăн эсĕ манăнне, — шăппăн каларĕ Ваçça. — Арăм та, ачасем те лайăх манăн. Ӳпкев çук пурнăçа. Анчах та эпĕ санпа ĕмĕрлеме шутланăччĕ пурнăçа, — çапла каларĕ те малалла утса кайрĕ.

— Пĕрле вĕреннĕ эпĕ унпа, — пĕлтерчĕ Тоня упăшкине.

Тĕрĕссине каларĕ. Çак арçын виçĕ çул çӳренĕ кӳршĕ ял каччи пулнине çеç шарламарĕ. Петя та палламарĕ ăна. Вăл ку çынна хăй ĕмĕрĕнче пĕрре çех курнă-çке. Курма та аякран çеç.

— Ачамсем! Мĕнле, килĕшетпĕр-и аннĕрпе? Вăл пире асаннĕрпе аслаçăр патне илсе кайма ыйтать.

— Килĕшетпĕр! Килĕшетпĕр! — пĕр харăс кĕрлерĕç çамрăксем.

Ленăн куçĕсем йăл-ял çиçеççĕ. Ара, савнă каччипе тĕл пулать-çке вăл. Час-часах пĕрпĕрне шăнкăравлаççĕ çамрăксем. Анчах та телефонпа калаçни тĕл пулни мар-çке. Юра халь каникулта. Тепĕр çул юрист дипломне алла илет.

Чĕмпĕре çитсе каç выртрĕç те ирхине ирех ашшĕн тăван ялне тухса вĕçтерчĕç. Çулĕ, пĕр шутласан, вăрăмах та мар. Виçĕ сехетре çитме пулать çăмăл машинăпа. Чарăнусем те тукаларĕç çул çинче. Амăшне йывăр килесрен хăраççĕ мар-и.

Мĕнле савăнчĕç ватăсем ывăлĕ çемйипе килсе çитсен! Кӳршĕ-арши те пуçтарăнчĕ. Анаткасра пурăнакан Улатимĕр мучи те кăштăртатса çитрĕ. Улатимĕр Петьăн ашшĕпе пĕртăван. Сакăр вуннăран иртнĕ пулин те çирĕп туять хăйне. Ашшĕпе амăшĕ те сывлăх енчен аптрамаççĕ пек. Ĕне тавраш тытмаççĕ, чăх-чĕп вара картиш туллиех.

Ĕç хыççăн район центрĕнчен Лида та килсе çитрĕ. Пĕчченех пурăнать вăл халь пысăк хăтлă хваттерте. Пĕлтĕр упăшки çĕре кĕчĕ унăн. Пайтах чĕре чирĕпе нушаланчĕ. Мĕнле çирĕп, улăп пек патвар арçынччĕ Николай. Кăмăлĕ питĕ лайăхчĕ. Юлашки татăкне çынна пама хатĕрччĕ вăл. Ывăлĕ Артур та ашшĕне хывнă. Турă парсан — кам валли-тĕр пурнăç тĕрекĕ пулать.

Килте уяв. Сĕтел паха апат-çимĕçпе пуян. Хаклă йышши эрехсем те пур. Пурте ачисен кучченеçĕ. Ленăпа Коля кӳршĕри çамрăксемпе пĕрле клуба пуçтарăнчĕç. Пӳрт умĕнче пухăннă лешсем. Тоня урама тинкерет, çамрăксене сăнать. Хăшĕ-ши кунта Юра текенни? Тен, кунта çук та вăл. Акă Лена вĕçнĕ пекех ыткăнчĕ урама. Самантрах пĕр яштака, сарă çӳçлĕ илемлĕ каччă çумне пырса тăчĕ. Чăпăрт! чуптуса илчĕ лешĕ ăна пит çăмартинчен. Çакă пулас Юра текенни.

Чылайччен калаçса ларчĕç тăвансем кĕрекере.

— Эсĕ ывăнтăн пулас. Темĕн шурса кайнă пек. Çул та ывăнтарать паллах.

— Тĕрĕс те, Петя. Выртса канма та юрать пуль.

— Эпĕ çенĕкре, шăналăк хыçĕнчи кравать

çинче, вырăн хатĕрлерĕм. Атя ăсатса ярам, — ачашшăн çупăрларĕ упăшки.

Тоня чирĕ пирки Петьăн ашшĕпе амăшĕ те, тăванĕсем те нимĕн те пĕлмеççĕ-ха. Ялта пурăннă хыççăн мăшăрĕ самаях чĕрĕлчĕ те, ытла сăнаса пăхмасан асăрхаяс та çук.

Аван, канлĕ Петр Ивановича тăван килĕнче. Çулсем иртсе пынă май тăван кĕтес тата та çывăхрах пек.

Хăнасене ăсатсан Лида савăт-сапа пуçтарма пуçларĕ.

— Пулăшас сана кăштах, Лида, — пырса çупăрларĕ аппăшне Петя. «Упăшки вилнĕренпе аппа сăнран палăрмалла улшăнчĕ», — шутларĕ вăл.

Тĕрĕс те, Лида сăнĕпе шуранкарах. Куçĕсем те, ĕлĕкхи пек, хĕлхем сапмаççĕ.

— Лида, астăватăн-и эпĕ сана мĕнле тарăхтарнине?

— Питех тарăхтарман та пуль. Туслăччĕ эпир иксĕмĕр.

— Питĕ туслăччĕ, тĕрĕс. Эпĕ ашкăнчăкрахчĕ ĕнтĕ, — кула-кула калаçрĕ арçын чашăк-тирĕк çунă май. — Эсĕ урай çуса тухаттăн кăна — эпĕ урам енчи чӳречерен кĕреттĕм те вараланнă çара урасемпе ташша яраттăм. Эх, хăвалаттăн вара мана йĕпе мунчалапа картиш тăрăх.

— Яланах хăваласа çитейместĕм çав.

— Хăваласа çитсен хытă лекетчĕ вара мана. Эх, ыраттарать те иккен йĕпе мунчала.

— Çавăнпа манаймастăн та ĕнтĕ.

— Мана валли ĕç юлчĕ-и унта кăштах, — илтĕнчĕ Тоньăн савăнăçлă сасси. — Ну çывăрнă та. Эсир ахăлтатнине илтмен пулсан ирччен те вăранаймастăм пуль.

— Каçар ёнтӗ пире, — пырса ыталарӗ ăна Лида.

— Каçармастăп, — кулать Тоня. — Халӗ манпа ларса чей ӗçмесен кӳренетӗп. Питӗ чей ӗçес килет.

— Айн момент! — шӳтлесе илчӗ Петя. — Хам хатӗрлетӗп сирӗн валли чей.

— Ачасем таврăнман-им-ха урамран?

— Вӗсене ирччен кӗтмелле мар пуль.

— Ан пăшăрхан. Пирӗн ялта çамрăксем пит пăсăк мар, — лăплантарчӗ Лида. — Юлташӗсем те вӗсен шанчăклăскерсем.

Юратать Тоня çак киле. Çирӗм виçӗ çул Петьăпа пӗрлешни. Çак вăхăтра вăл хунямăшӗнчен пӗр сивӗ сăмах та илтмен. Лидăпа та питӗ килӗштереççӗ. Ачисем мӗнле туслă тата. Артур килеймерӗ паян. Ерçеймерӗ пулас. Хирург пулса ӗçлет-çке. Вăл Самарăра пурăнать. Авланман-ха.

Темӗнччен калаçса ларчӗç тăвансем. Кăвак çутă килеспе тин ыйхă çинчен аса илчӗç.

Çывăрса каяймасть Тоня. Петя та харлаттарма пуçларӗ. Анне чӗри мар-и, кӗтет ачисене. Тем шухăш та килсе кӗрет çакăн пек чухне. Акă алăк шалтлатса хупăнчӗ те, Ленăпа Коля калаçни илтӗнчӗ.

— Ан янăра-ха эс, — вӗрентет шăллӗне Лена. — Çынсене ыйхăран вăрататăн.

Тоня йăл кулса илсе сылтăм енне çаврăнса выртрӗ. Шăплăх çавăрса илчӗ ялти сумлă, тирпейлӗ чăваш кил-çуртне.

Ирхи апат хыççăн майланса ларнăччӗ çеç, пăлтăрта ура сасси илтӗнчӗ.

— Кӗме юрать-и?

— Кӗрӗр, тархасшăн, — евӗккӗн йыхăрчӗ Тоня.

Ун умне пĕвĕпе çӳллех мар, сарă çӳçлĕ, кăвак куçлă каччă кĕрсе тăчĕ. Чăн-чăн юмахри паттăр. Куçĕсем йăвашшăн, ăслăн пăхаççĕ. Вĕсенче темле ыйту пур пек. Теме кĕтни сисĕнет.

— Эсир кам пулатăр? Çамрăксем патне килнĕ пулас-ха.

— Эпĕ Юра. Мана эсир кирлĕ. Ак çак пакета, чечек çыххине илсемĕрччĕ. Вĕсем сире валли. Лена килте çук-им?

— Эпĕ килтех, килтех! — вĕçсе тухрĕ Лена çывăрмалли пӳлĕмрен. Хăй питĕ илемлĕ тумланнă. Юра та уяв тумĕпе. Курăнать: калаçса татăлнă вĕсем ку тĕлпулу пирки.

— Анне, атте ăçта? Асаннепе асатте те кирлĕ пире.

— Халех пурне те тухса чĕнĕп. Картишĕнче тăрмашаççĕ-ха вĕсем. Коля та унтах.

Пурте пуçтарăнса пӳрте кĕчĕç. Çăвăнса тĕрлĕ вырăна майлашса ларчĕç. Юра хумханни куç кĕрет.

— Юра, эс пуçла. Атя кала хăвăртрах, — аяк пĕрчинчен тĕкрĕ Лена Юрăна.

— Эпир... эпир... пĕрлешесшĕн, — персе ячĕ каччă хăюсăррăн.

Пӳртре шăп. Петр Иванович ассăн сывласа илчĕ те сăмах хушрĕ:

— Мда. Пĕрлешесси ансат пулăм мар. Сӳтсе явмалла пулать.

— И-и-и! — алне сулчĕ амăшĕ. — Хăв кампа сӳтсе яврăн? Нимĕн явмасăрах суйласа илтĕн мăшăрна. Мухтав турра, аванах йĕркеленчĕ пурнăçу.

Ленăпа Коля чăхлатса илчĕç.

— Апла пулсан аçу-аннӳпе курса калаçмал-

ла пулать. Паян каҫхине эпир вӗсене хамӑр патӑрта кӗтетпӗр, — татса пачӗ Петр Иванович.

Апат хыҫҫӑн арҫынсем картишне тухрӗҫ, хуҫалӑхра майламалли тем чухлех.

Каҫ пулсан, кӗтӳ ансан, Юрӑн ашшӗпе амӑшӗ тата амӑшӗн йӑмӑкӗ килсе ҫитрӗҫ кучченеҫсемпе. Тоня пурне те паллать, лайӑх пӗлет. Ялти шкулта учитель пулса ӗҫлеҫҫӗ вӗсем. Пӗр вӑхӑталла пуҫланчӗҫ вӗсен ӗҫ биографийӗсем.

Вӗренӳ ҫулӗ пуҫланиччен туй кӗрлеттерме калаҫса татӑлчӗҫ.

Мӗн тӑвӑн? Пӗр ҫул хушши ҫамрӑксен уйрӑм пурӑнма тивет. Самарӑпа Чӗмпӗр хушши нумаях мар-ҫке, канмалли кунсенче тӗл пулма пулать. Автобуссемпе маршруткӑсем часах илсе ҫитереҫҫӗ пӗр-пӗрин патне.

«Турӑ парсан кӗҫех мӑнуксене кӗтсе илӗп», — ӗмӗтленчӗ Антонина Васильевна.

...Тоня тӗлӗк курать. Ҫӗртен ҫӳлелле, тӳпенелле, кармашакан пусма тӑрӑх амӑшӗ анать. Пӗр сӑмах та чӗнмест хӑй. Анса ҫитрӗ те Тоня патнелле утать. Аллинче пы-ы-сӑк ҫаврака ҫӑкӑр. Тӑсать, тӑсать ӑна амӑшӗ хӗрӗ еннелле. Тоня майӗпен-майӗпен ҫывхарать амӑшӗ патне. Ма кунта вӑл каллех? Вӑл вилнӗ-ҫке.

Каплаттарса ярса тытрӗ хӗрарӑм ҫӑкӑра. Туртса илчӗ те — вӑранса кайрӗ.

«Анне ҫӑкӑр пачӗ. Ҫӑкӑр вӑл пурнӑҫ. Апла пулсан пурӑнатӑп. Пурӑнатӑпах», — пӑшӑлтатрӗ хӗрарӑм...

# ТУПМАЛЛИ

## Калавсем

Элек . . . . . . . . . . . . . . 3
Ырă ята варалаймăн . . . . . . . . . . 18
Ахăр самана . . . . . . . . . . . . 24
Сыв пул, юратăвăм . . . . . . . . . . 34
Туй мыскари . . . . . . . . . . . . 44
Кĕтмен венчет . . . . . . . . . . . 50
Икĕ çемье — икĕ шăпа . . . . . . . . . 56
Пĕр чустаран . . . . . . . . . . . 84
Пĕр такăнсан . . . . . . . . . . . 86
Эх, тĕнче-е-е! . . . . . . . . . . . 88
Телефонпа янă çыру . . . . . . . . . 92
Çынлăха — такăр çул . . . . . . . . . 94
Перестройка . . . . . . . . . . . . 102
Тăван кил . . . . . . . . . . . . 108
Господин . . . . . . . . . . . . 114

## Повесть

Тĕлĕк . . . . . . . . . . . . . 118

Литературно-художественное издание

**Валентина Тарават**
**(Игнатьева Валентина Николаевна)**

**КĔТМЕН ВЕНЧЕТ**

**НЕОБДУМАННОЕ ВЕНЧАНИЕ**

**Рассказы и повесть**

*На чувашском языке*

Редактор *О.Л. Федорова*. Художник *М.Ю. Николаев*. Художественный редактор *И.Е. Калентьева*. Технический редактор *Л.К. Егорова*. Корректоры *Н.В. Вечеркина*, *Н.Г. Орлова*, *З.И. Гаврилова*. Компьютерная верстка *Е.Е. Фоминой*.

Общероссийский классификатор продукции ОК 005-93—95 3003. Подписано к печати 26.11.10. Формат 84х108 1/32. Бумага офсетная. Гарнитура Тип Таймс. Печать офсетная. Усл. печ. л. 8,4. Учетно-изд. л. 5,97. Тираж 1000 экз. Заказ № К-4548. Изд. № 87.

ГУП Чувашской Республики «Чувашское книжное издательство»
Минкультуры Чувашии, 428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 13.
www.chuvbook.ru, e-mail: chuvbook@mail.ru, chuvbook@cap.ru
Тел./факс (8352) 28-85-51.
Отпечатано в ООО «ГУП «Чувашия»,
428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 13.

77.00



*Валентина Таравaт*

# КĔТМЕН ВЕНЧЕТ

*Чăваш кĕнеке издательстви*